С(Чув)
К А23
22064-чув.



Леонид Агаков

# Манăн пĕчĕк тусcем

Чăвашгосиздат ◆ 1949

ЛЕОНИД АГАКОВ

С(Чув)
А23

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
ЦЛУ. ЧАС Р.
Инвент. № 8548

Д/Х

# МАНӐН ПӖЧӖК ТУССЕМ

(АЧА-ПӐЧА КАЛАВӖСЕМ)



ЧӐВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1949

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Таня . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Ялав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Ӗнентерчӗҫ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 58
Медаль . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 72
Туссем каллех тӗл пулаҫҫӗ . . . . . . . . . . . . . . . 86
Салтак ывӑлӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 102

ПРОВЕРЕНО
20 07

22064-473

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Редактор *Н. Ильбеков.* Тех. редактор *Н. Степанов.*

НТ 00981. Сдано в производство 5/IX-1949 г. Подписано к печати 30/IX—1949 г. Тираж 5000 экз. Объем 7,0 п. л. Заказ № 1937.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР.
*Гор. Чебоксары, ул. Володарского,* 5.



# ТАНЯ

## I

Вĕсем питĕ аван пурăннă...

Ашшĕ колхозра бригадир пулнă, амăшĕ фермăра ĕçленĕ, пиччĕшĕ, Совет Çарĕн командирĕ пулса, чикĕ хĕрринчи пĕр пысăках мар хулара служить тунă. Вăл, çулленех отпуска таврăнса, килтисем валли тĕрлĕ парнесемпе кучченеçсем илсе килнĕ, ялан кĕнекесем ярса тăнă. Таньăпа унăн шăлнĕ — вунă çулхи Коля — хĕлле шкула çӳренĕ. Таня улттăмĕш класра, Коля виççĕмĕшĕнче вĕреннĕ.

Çуркунне, шкулта вĕренме пăрахсан, вĕсем килте ашшĕпе амăшне пулăшнă, пахчара ĕçленĕ, кайăк-кĕшĕксене пăхнă, ял хыçĕнчи улăхра чечексем пухса гербарисем тунă, мулкач çырмине шыва кĕме чупнă, ытти ачасемпе пĕрле тĕрлĕ вă-

йă вылянă. Кĕр енне сулăнма пуçласан, иртнĕ хĕлле вĕреннисене аса илес тесе, кĕнекесем вулама пуçланă, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ. Шкула кайма тытăнасси ик-виç эрне юлсан, ашшĕ вĕсем валли яланах хуларан вĕр-çĕнĕ атă-пушмаксем, кăçал кирлĕ пулмалли учебниксем илсе килнĕ; амăшĕ иккĕшне те çĕнĕ кĕпесем çĕлесе панă. Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче вара Таньăпа Коля, халь çеç лавкаран илсе килнĕ пуканесем пек тумланса, мăйĕсене çулăм евĕр ялкăшакан хĕрлĕ галстуксем çакса, сăран сумкисене кĕнекесем, тетрадьсем, альбомсем, тĕрлĕ тĕслĕ карандашсем чиксе, хĕвеллĕ урам тăрăх шкулалла утнă. Амăшĕ, вĕсем хыççăн хапха умне тухса, питех те савăнăçлăн пăхса тăрса юлнă...

— Телейлĕ ӳсеççĕ-çке пирĕн ачасем! — тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче, хĕр ачипе ывăлне ачашшăн пăхакан куçĕсемпе ăсатса. — Çав тери телейлĕ!.. Тани тухтăр пулатăп, тет-ха. Коля агроном пуласшăн. Пулаççех пуль-ха... Пулаççех ĕнтĕ!

Кун пек сăмахсене пĕр Таньăпа Коля амăшĕ çеç мар, ытти ачасен амăшĕсем те час-часах каланă. Вĕсем пурте хăйсем ĕлĕкхи вăхăтра, патша саманинче епле нушара, хĕнхур тӳссе, выçăллă-тутăллă ӳснине, хăйсене вĕренме май пулманнине аса илнĕ те, халь, ачисем ним хурлăхсăр, нушасăр, асапсăр ӳснине кура, вĕсен чĕрисем ăшă савăнăçпа тулнă.

Чăнах та çав, ĕлĕкхи ачасемпе хальхи ачасен пурнăçне ниепле те танлаштарма май килмен, — ытла та пысăк уйрăмлăх пулнă вĕсен хушшинче

Ачасем халь яланах тутă, çи-пуç енчен—мĕн тăхăнтарас тенĕ—çавă пур, çич-сакăр çултан пуçласа пурте вĕренеççĕ, мĕншĕн тесен кашни ялтах шкул пур, чирлес-мĕн пулсан—хăвартах сыватма пулать. Ав, Тарье инкен Шурки пĕрре тем пирки

имшерленсех кайнăччĕ те, ăна таçта инçете, кăнтăр енне, Хура тинĕс хĕрринех илсе кайса икĕ уйăх усрарĕç! Шкула çӳреме пуçлас вăхăтра тин таврăнчĕ вăл. Палламалла та мар пулса кайнăччĕ,—шкулти сторожиха Укçине каларĕшле, хĕретнĕ çăмарта пекех пулса килчĕ вăл, кайран вара урăх чирлемерĕ те...

Вăл çеç-и! Ăçталла ан пăх—пурнăç пур енчен те ăнса, юсанса, чечеклĕ сад пекех пулса пынă. Çынсем питĕ телейлĕ пурăннă. Ахальрен мар çав ачасем:

Пурăнмашкăн питĕ савăк,
Юрлама та пит аван!—

тесе юрланă. Ку юррăн сăмахĕсем питех те тĕрĕс пулнă...

2

Яланхи пекех, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрмĕш çулхи июнь уйăхĕнче Таньăсен пиччĕшĕ — лётчик — киле отпуска таврăнчĕ. Темĕн чухлĕ савăнăç илсе килчĕ вăл йăмăкĕпе шăлнĕне валли. Ытармалла мар япаласем илсе килчĕ!

— Ку сире — отлично вĕреннĕшĕн! — тесе, Кольăна вĕр-çĕнĕ пĕчĕк велосипед, Таньăна илемлĕ кĕрен тĕслĕ çуллахи пальто тыттарчĕ.—Манран преми! Ак тата, сире кашнинех вуншар кĕнеке...

Ачасем, хавасланнипе, ниçта кайса кĕреймерĕç, пиччĕшĕ тавра сиккелерĕç, чунтан тав турĕç, малашне тата хытăрах тăрăшса вĕренме сăмах пачĕç.

Каçхине вĕсем патне пӳрт туллиех хăйсен тăванĕсем, кӳршисем пухăнса ларчĕç. Амăшĕ ятарласах темĕн тĕрлĕ тутлă япаласем пĕçерчĕ, ашшĕ çынсене пыллă сăрапа хăналарĕ. Нумайччен шав-

лăн калаçса, шакăлтатса ларчĕç вĕсем. Таньăсен пиччĕшĕ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа кăтартрĕ. Колхозниксем ăна ялти хыпарсене пĕлтерчĕç. Унтан лётчик амăшĕн арчинчен хăйĕн виçĕ ĕретлĕ купăсне кăларчĕ те, ăна кар-р... туртса ячĕ.

— Юрласа пар-ха, Илья Петрович!

— Эпир сана илтменни нумай пулать ĕнтĕ...

— Пултараканччĕ эс!

— Чăнах, Илюша, юрла!

— Савăнтар пире!—харăсах ӳкĕтлеме тытăнчĕç ăна хăнасем.

Таньăсен пиччĕшĕ ялта пурăннă чух та пит ăста купăсçă пулнă, тĕлĕнмелле паха юрăсем шăрантарнă та, халь пушшех аван юрăсем пĕлнĕ ĕнтĕ, çавăнпа та тархаслаттарса тăмарĕ. Купăсне пĕр-икĕ хутчен каллĕ-маллĕ туртса, хăйне кирлĕ çемме тупсан, вăл çав тери уçă, çӳллĕ те янравлă сасăпа юрлама тытăнчĕ...

> В далекий край, друзья, мы улетаем,
> Не зная сна, не зная тишины...
> Любимый город! Можешь спать спокойно
> И видеть сны и зеленеть среди весны...

Çăлкуç шывĕ пек юхрĕ унăн юрри. Ăна итлесе ларса, юрăри сăмахсем куç умĕнче пулса иртнĕ пекех туйăнчĕ. Акă, кĕçĕрхи пекех лăпкă, ăшă каç лётчиксем инçете вĕçсе кайма пуçтарăнаççĕ. Самолётсем хатĕр, моторĕсем кĕрлесе кăна тăраççĕ. Унтан вĕсем ерипен çĕртен уйрăлса сывлăшалла хăпараççĕ те, шăппăн, телейлĕ тĕлĕксем курса сыврăракан ялсем, хуласем çийĕпе вĕçеççĕ. Ниçта та, ним сасă та çук. Моторсем çеç сывлăша çурса, ĕрлесе пыраççĕ... Çав вăхăтра аялта, çĕр çинче, садсем чечекленеççĕ, анлă хирсенче тырпулсем кашлаççĕ, пахчасенче ывăна пĕлмен çурхи кайăксем хăйсен çепĕç юррисене кĕвĕлеççĕ...

Лётчик юрласа пĕтерсен, пурте алă çупса, ăна тав тума тытăнчĕç.

— Эх, пĕтĕм чĕрене ирĕлтерсе ятăн!—тесе, çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ ăна кӳршĕ старик Федот мучи.

— Маттур, Илья Петрович!

— Çав тери аван кучухнехи юрăсем...

— Пурнăçĕ мĕнле—юррисем те çавăн пек çав!

Таня пиччĕшĕ купăсне каллех тăсса ячĕ те, сасартăк ташă кĕвви çунтарма тапратрĕ. Çынсен куçĕсем тата ытларах çутăлса кайрĕç. Вĕсем пĕрпĕрин çинелле пăха-пăха илчĕç, пĕрин хыççăн теприн хулпуççийĕсем вылянкалама пуçларĕç...

— Эх, ну!—урине шарт! тапрĕ Федот мучи.— Хамăн пуçласа парас пулĕ!

Вăл йăпăр-япăрах, хăйпе юнашар ларакансене сиркелесе, сĕтел хушшинчен тухрĕ те, урисене хуçлатса, хулпуççисене пăркаласа ташлама тапратрĕ.

— Çунтар, Федот мучи, кисрентер!

— Маххă ан пар çамрăксене, кăтарт хăвна!— хавхалантарчĕç ăна ытти хăнасем. Анчах Федот мучи унсăрăн та çамрăк çын пекех кисрĕ ташша.

Ун хыççăн Маруç—Таньăсен амăшĕпе пĕрле фермăра ĕçлекен çамрăк чипер хĕр, пурçăн сараппанĕпе чăштăртаттарса тухрĕ. Тутăр сулса, хитре сенкер куçĕсене вылятса ташларĕ вăл. Унтан татах та ташлакансем пулчĕç. Ир енне тин саланчĕç вара хăнасем. Вĕсене ăсатса янă чух кăвак çутă çапма пуçланăччĕ ĕнтĕ, пӳрт умĕнчи чие пахчинче ирхи кайăксем юрлатчĕç...

## 3

Тепĕр кунне, кăнтăрла иртсен пĕр виçĕ сехетре, Таньăсен кил-йышĕ шăкăрах сĕтел хушшине апатланма кĕрсе ларчĕ. Каллех тулли кăмăллă

каласу пусланса кайрĕ, сăмах сăмхи вĕсĕмсĕр салтăнса пычĕ. Ашшĕ паян ачисем тăричченех хире тухса çӳренĕ мĕн те, халĕ, тулă икерчине шăратнă çу ăшне пуça-пуça, колхозăн тырпулне мухтаса ларчĕ.

— Кăçалхи пек вăйлă тырă пирĕн таврара пĕр вăтăр çул хушши пулман. Лашапа пынă чух пĕкĕ курăнмасть вĕт! Чипер пуçтарса кӳртсен—майсăр пуятпăр. Сутса та пĕтерейменен...

— Кунта çеç мар, пур çĕрте те çавăн пекех,— терĕ Таня пиччĕшĕ.

— Татах вăйлăланатпăр ĕнтĕ кăçал!

— Паллах.

— Эпир кăçал кĕрхи вăйпа çĕнĕ клуб тума йышăнтăмăр. Шкула хирĕç, икĕ хутлă туса лартас, тетпĕр...

— Хальхи клубне мĕн тăватăр вара?

— А ăна ачасене паратпăр. Ясли те пулать унта вĕсен, сачĕ те...

— Пире валли мăн клубĕнче те уйрăм пӳлĕм пулать,—хушса хучĕ Коля.—Эпĕ правленире каласнине илтрĕм.

— Ара, сирĕнсĕр ăçта кайăн ĕнтĕ,—терĕ кухньăран татах тепĕр плашка вĕри икерчĕ çĕклесе килекен амăшĕ.—Пурте сире валли пулать, камшăн тăрăшатпăр тетĕн тата? Сире епле пулсан та лайăхрах пăхса ӳстерсе, телейлĕ çынсем тăвассăн... Çийĕр-ха, çийĕр вĕри чух, пĕçермелли татах пур манăн,—сĕнчĕ вăл ачисене.

Çак самантра Таньăсен пӳрчĕ умне такам юланутпа пырса чарăнчĕ.

— Эй, хуçисем! килте пур-и?—уçă чӳрече витĕр кăшкăрса ыйтрĕ вăл.

— Кам вара ку?—пĕр харăсах урамалла пăхрĕç сĕтел хушшинче ларакансем.

— Почтарь!—палласа илчĕ ăна Таня.—Ха-

çатсем илсе килчĕ пулмалла. Эп халех тухатăп ун патне!

— Епле пит час ара паян, ытти чух каçалапа çеç килекенччĕ-çке?—тĕлĕнерех ыйтрĕ ашшĕ.

— Хуларан час çитнĕ пуль...

Таня кĕçех каялла чупса кĕчĕ.

— Хаçат мар, телеграмма илсе килнĕ! Пиччене такам телеграмма янă,—тесе пĕлтерчĕ вăл, каллех малтанхи вырăнне пырса ларса.—Ал пусмалла, тет, хăй кĕрет.

Телеграмма тесен, пиччĕшĕн сăнĕ тăруках улшăнчĕ. Темле ырă мар хыпар пулма пултарасса сисрĕ пулмалла вăл. Алăкран кĕнĕ почтальона хирĕç хăй тăрса утса пычĕ.

— Лейтенант Илья Петрович Ястребов эсир пулатăр-и?—ыйтрĕ почтальон, сумкинчен хулăм папка кăларса.

— Эпĕ...

— Сире валли васкавлă телеграмма пур.

Лётчик почта кĕнеки çине вăштах алă пусрĕ те, телеграммăна хăвăрт уçса вуларĕ. Пурте ун çине тинкерсе пăхса тăчĕç. Таня пиччĕшĕ тутине çыртса, самантлăха шухăша кайрĕ. Пӳртре шăп пулчĕ.

—Таврăнма хушаççĕ,—терĕ лётчик.

— Мĕншĕн апла вара?—ыйтрĕ ашшĕ, ывăлĕ палăрмаллах пăлханнине кура.

— Акă, вула: «Немедленно выезжайте в часть. Полковник Ветров». Пирĕн командир вăл.

— Ара, сана пĕр уйăхлăха янă вĕт-ха,—хыпăнса ӳкрĕ амăшĕ.

— Ма-ши ку? Мĕн пулма пултарнă апла тăруках?—тĕлĕнсе тăчĕ ашшĕ, телеграммăна аллинче çавăркаласа.—Аптăрамалла!

Таньăпа Кольăн та кăмăлĕсем хуçăлчĕç. Вĕсем пĕр уйăх хушши пиччĕшĕпе пĕрле çав тери са-

вăнса пурăнма ĕмĕтленнĕччĕ, анчах халь сасартăк каллех уйрăлмалла пулать. Пиччĕшĕ пĕр кайсан, ăна вĕт çулталăксăр та курас çук...

— Сăлтавне ма кăтартман-ши вĕсем пĕрех-хут?—çаплах лăпланмарĕ ашшĕ.

— Сăлтавĕ унта пĕрре кăна пулма пултарать,—кĕтмен çĕртен калаçăва хутшăнчĕ почтальон.—Эсир кĕçĕр мĕн пулнине пĕлместĕр-им?

— А мĕн пулнă?

— Вăрçă пуçланнă, юлташсем. Германи кĕçĕр Совет Союзĕ çине хурах пек килсе тапăннă!

— Чăнах-и?—пурте пĕр харăс, калама та çук тĕлĕнсе кайса пăхрĕç почтальон çине.

— Чăнах çав... Радио пĕлтерчĕ.

— Ну, апла пулсан—васкас!—терĕ Таньăн пиччĕшĕ, тарăнăн сывласа ярса.—Пĕр минут та тăхтаса тăма юрамасть. Анне, ăçта ман чемодан? Часрах хатĕрле мĕн те пулин çул çине валли...

Кил-йышри савăнăç тăруках пĕтсе ларчĕ. Çынсен чĕрисене çӳçентерекен сивĕ пырса çапрĕ, пĕр хушă калаçма та сăмах тупăнмарĕ. Кашни хăй тĕллĕн шухăшларĕ... Епле тискер хыпар, епле хăрушă хыпар! Усал тăшман пирĕн телейлĕ çĕр-шыв çине тапăннă! Пирĕн пĕтĕм пурнăçа аркатасшăн ĕнтĕ вăл, пире чурасем тăвасшăн...

— Неушлĕ вăл вара пире çĕнтересшĕн, совет халăхне хăй умне чĕркуççи çине тăратасшăн?—ыйтрĕ ашшĕ аслă ывăлĕнчен, чылай хушă чĕнмесĕр ларнă хыççăн. Унтан хăйне хăех ответ пачĕ:—Çаплах пуль çав...

— Пустуй ĕмĕт,—терĕ лĕтчик.—Нихçан та нимĕç парăнтарма пултарас çук пире, ĕмĕрĕнче те пире чура тăвайрас çук! Хăйĕннех пилĕкне çапса хуçатпăр...

— Эпĕ те çавăн пекех шутлатăп,—терĕ ашшĕ.

Лĕтчике вĕсем çав каçах ăсатса ячĕç. Килте

юлаканнисен пурин те куçĕсем шывланчĕç, анчах кашниех ăна пытарма тăрăшрĕ.

Унпа пурте уйрăмăн-уйрăмăн сывпуллашсан, ăна юлашкинчен ашшĕ ыталаса чуптурĕ:

— Ну, ывăлăм, паттăр пул, шиксĕр пул, ăмăрткайăк пек çапăç... Хăваласа ярăр çав çăхансене хамăрăн таса çĕр çинчен!

— Юрĕ, атте!—терĕ ывăлĕ.—Манмăп санăн сăмаххусене. Эсĕ каланă пекех пулĕ...

## 4

Çавăнтан вара пурнăç пĕтĕмпех улшăнса кайрĕ. Ял çыннисем халь вăрçă çинчен çеç калаçрĕç...

Кашни кунах вăйпитти арçынсем ушкăнăн-ушкăнăн фронта тухса кайрĕç, вĕсене ăсатнă чух макăраканнисем те нумай пулчĕç, анчах килте юлакансем пурте вăрçа каякансене тăшмана часрах аркатма, нимĕçсене çĕнтерсе—киле сыввăн таврăнма пиллесе ячĕç.

— Пирĕншĕн ан пăшăрханăр, эпир кунта чиперех пурăнăпăр, фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех туса парăпăр. Тăшман пуçне часрах çапса аркатасчĕ кăна!—терĕç вĕсем.

Халăх нихçанхинчен те хытă ĕçлерĕ. Мăннисемпе пĕрле ачасем те пĕтĕм вăйран тăрăшрĕç. Хирте çум çумларĕç, пахча-çимĕçĕсене лайăхрах ӳстерме—вĕсене шăварчĕç, кăкĕсене çемçетрĕç, выльăхсене ăмăртсах пăхрĕç. Тырă вырмалли вăхăт çитсен вара, ялта никам та талăкне 2—3 сехетрен ытла çывăрмарĕ. Ачасем кунта та хăйсен пултарулăхне аван кăтартрĕç. Пысăкраххисем кĕлте çыхрĕç, вĕсене çĕмелсем патне туртрĕç, пĕчĕккисем пучах пуçтарчĕç, хире ниçта пĕр пĕрчĕ тырă юлми тасатса пычĕç.

— Ĕçлес пулать, ачасем, çине тăрсах ĕçлес пулать, — хавхалантарчĕ ачасене ватă учитель Кузьма Петрович.—Астăвăр: кашни ытлашши килограмм тырă тăшмана аркатас ĕçе пулăшать. Пирĕн те кунта—фронт!

Çав вăхăтрах, яла килсе тăракан хыпарсем кунран кун хăрушланса пычĕç. Урнă тăшман çаплах совет çĕрĕ çине шалтан шала кĕрет иккен. Кунсеренех пирĕн çарсем нимĕçсен салтакĕсене пинĕн-пинĕн пĕтерсе пыраççĕ, анчах тăшман пурĕпĕр малалла тăрăнать...

Пĕр каçхине (ку сентябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пулчĕ), Таньăсен ашшĕ киле çурçĕр тĕлнелле тин, çитменнине ытти чухнехи пек те мар салхулланса таврăнчĕ, апат çиме ларсан—апат та анмарĕ унăн, темиçе кашăк сыпсанах çиме чарăнчĕ.

— Мĕн эсĕ паян... чирлĕ çын пек?—ыйтрĕ амăшĕ.

— Нимĕçсем пирĕн область хули патне çитнĕ,—терĕ ашшĕ.—Кунган çĕр хĕрĕх çухрăмра кăна... Пĕлме çук, тен кунта та çитсе тухĕç... Халăх пурлăхне хăтарас пулать. Приказ пур: колхозăн мĕнпур выльăх-чĕрлĕхне хĕвелтухăçнелле хăваласа каймалла. Çавăн пирки правлени заседанийĕ пулчĕ. Ыран ирпе тухса каймалла турăмăр...

— Кам каять вара?—ыйтрĕ амăшĕ.

— Эп каятăп, фермăри Маруç, тата икĕ çын.

— Нумай çӳремелле пулать-ши?

— Пĕлме çук... Тен, уйăх та ытла çӳрĕпĕр.— Ашшĕ йывăррăн сывласа илчĕ. Унтан пĕр хушă ним чĕнмесĕр ларчĕ те, амăшне шăппăн калама тытăнчĕ:—Эхер те нимĕçсем кунталлах килме тапратсан, кĕтсе ан ларăр вара. Пурин те хĕвелтухăçнелле туртăнас пулать. Правленире ун çин-

чен те калаçрĕç. Эсĕ вара чи кирлĕ япаласене кăшт-кашт пуçтаркала та, халăхран ан юл.

— Ун пек ан пултăрах!—хаштах сывласа ячĕ амăшĕ те.

— Кам-ха «пултăр», тет? Анчах пуласах пулсан вара—нимĕн те хĕрхенсе ан тăр. Пурнăç нимрен те хаклăрах. Пуринчен ытла—ачасене хăтарас пулать...

Таня çак калаçăва пĕтĕмпех итлесе выртрĕ. Калама çук пăлханма тытăнчĕ вăл... Чăнах та вара нимĕçсем пирĕн патах çитĕç-ши? Çук, çук, вĕсем кунталлах килме пуçласан, пĕр самант та килте тытăнса тăмастпăр вара, Мускав еннелле тухса каятпăр... Ăçта та пулин пурăнкалăпăр Хĕрлĕ Çар нимĕçсене каялла хăваласа яриччен. Фашистсемпе пĕрле пурăнма ăçтан май килтĕр?! Кашни кунах калаççĕ авă: нимĕçсем ăçта пырса кĕнĕ—çавăнта вара юн, вилĕм, асап, пушар, вут-хĕм, мăшкăл кăна, теççĕ. Хаçатсенче те çавнах çыраççĕ. Çук, çук... Хуть те пин çухрăм çурран утмалла пултăр! Анне япаласене çĕклет, эпĕ Кольăна çавăтатăп... Тен, колхозран лаша илĕпĕр...

Ирхине ашшĕ вĕсемпе сывпуллашрĕ. Амăшĕ те, Таньăпа Коля та тӳссе тăраймарĕç: шăпăрах юхса анчĕç вĕсен куççулĕсем...

— Кам пĕлет, тен урăх кураймăпăр?

Ашшĕ лăплантарма тăрăшрĕ:

— Епле «励раймăпăр» пулать вара? Акă, выльăхсене кирлĕ çĕре çитеретĕп те, каялла персе çитетĕп!

Анчах хапхаран тухсан, вăл амăшне тата тепĕр хут асăрхаттарчĕ:

— Асту, эп каланисене ан ман. Çынсем хускала пуçласанах, эс те тапранса тух вара. Темле пулсан та, çав шуйттансен аллине ан лекĕр. Ачасене сыхла, вĕсен пурнăçĕ пирĕншĕн—чи хакли!

— Юрӗ. Пӗлетӗп...

— Ну, чипер пурӑнкалӑр эппин эп таврӑниччен!

Ашшӗ Таньӑпа Кольӑна пӗр харӑс ҫӗклесе чуптурӗ те, колхоз правленийӗ еннелле утрӗ. Тепӗр ҫур сехетрен урамра ӗнесемпе сурӑхсем макӑрни, сыснасем нӑриклетни илтӗнчӗ. Колхоз кӗтӗвӗ хӗвелтухӑҫнелле кӗрлесе тухса кайрӗ. Ҫав тери шеллесе ӑсатрӗҫ ӑна ял ҫыннисем...

— Ҫӗр ҫӑтман Гитлерӗ! Хӑҫан шалчи тулӗ унӑн! Пӗтӗм пурнӑҫа пӑсса ячӗ, хура юн!—ылханса тӑчӗ Федот мучи, колхоз кӗтӳне ӑсатма ытти колхозниксемпе пӗрле униче хыҫне тухнӑскер. — Тавӑрӑпӑр-ха эпир ӑна куншӑн!..

## 5

Пилӗк кун ҫеҫ иртрӗ ҫакӑн хыҫҫӑн. Хӑраса, пӑлханса кӗтсе тӑнӑ самант сасартӑк ҫитсе тухрӗ. Ирхине ирех, хӗвел халь ҫеҫ хӗрелсе тухма пуҫланӑ вӑхӑтра, ял ҫине виҫӗ самолёт вӗҫсе пырса, ҫӑхансем пек явӑнма тытӑнчӗҫ.

— Нимӗҫсем!..

— Германи самолӗчӗсем!!!—кӑшкӑрса ячӗ тахӑшӗ хӑлхана ҫурмалла, Таньӑсен тӗлӗпе чупса иртсе.

Унччен те пулмарӗ, ялӑн ту вӗҫӗнче, шкулпа правлени таврашӗнче, бомба шӑхӑрса анчӗ. Кӗмсӗр-кӗмсӗр... шарт!—туса ҫурӑлчӗ те вӑл, мӗнпур ҫуртсем чӗтренсе илчӗҫ, пӳртсенче маччасем ҫинчен ҫӳп-ҫап тӑкӑнчӗ, кантӑксем чӑнкӑртатса сирпӗнчӗҫ. Кӗҫех тепӗр бомба, унтан харӑсах темиҫен пӗр ҫӗре ӳксе шартлатрӗҫ. Каллех пӗтӗм ял кисренчӗ, юлашки кантӑксем вӑркӑнса тухрӗҫ. Халь ҫеҫ ӑшӑ ыйхӑпа ҫывӑрнӑ ҫынсем, тӑруках анраса кайса, пӳртсенчен сике-сике тухса, ӑҫталла куҫ курнӑ, ҫавӑнталла чупма тапратрӗҫ. Тури

касра пушар тапранчĕ, çу каçа типсе ларнă çуртсем тар куписем пекех хыпса илсе ялкăшма тытăнчĕç...

Ялта ним ăнланмалла мар шăв-шав, кăшкăрусуйăху пуçланса кайрĕ. Мăннисем кăшкăраççĕ, пĕчĕккисем макăраççĕ, килте хăварнă ĕнесем чарусăр мĕкĕреççĕ, йытăсем йынăша-йынăша вĕреççĕ.

— Пĕтрĕмĕр! Пĕтрĕмĕр! Мĕн тăвас пулать халь, ăçталла тарас?—ниçта кайса кĕрейми хыпкаланса ўкрĕ Таньăсен амăшĕ, пирвайхи бомба çурăлсанах сиксе тăнăскер.—Атьăр хуть пахчаналла, çырманалла тарар!..

Вăл çывăракан Кольăна вăштах илсе хулпуççи çине хучĕ те, анкартинелле ыткăнчĕ. Хăранипе шур хут тĕслĕ пулса кайнă Таня ун хыççăн чупрĕ. Вите хыçне тухсанах, вĕсем хăйсен кўршисем те çавăн пекех хирелле тарнине курчĕç.

— Эпир çеç мар, пурте...—шухăш вĕçрĕ Таня пуçĕнче.—Тен хăтăлăпăр-и?

Çав вăхăтра ял çине пĕр харăсах тата темиçе бомба шăхăрса анса, калама çук вăйлăн çурăлчĕç. Ялта иккĕмĕш пушар пуçланчĕ.

— Ай, пĕтрĕмĕр, ай, пĕтерчĕç...—çаплах хыпăнса чупрĕ Таньăсен амăшĕ. Вăраннă Коля макăрма тапратрĕ.

— Ан йĕр!—кăшкăрчĕ ун çине Таня, хăй те макăрас патнех çитнĕскер.

Вĕсем колхоз итемĕ урлă каçса çырманалла анма ĕлкĕрчĕç çеç—пĕр нимĕç самолĕчĕ, çав тери хаяррăн та тискеррĕн ĕрлесе, çырма çине пырса тухрĕ.

— Шăтăр-р... шăтăр-р...—тунине çеç илтрĕ Таня, унтан, ним пĕлми пулса, çырма тĕпнелле йăваланса анса кайрĕ. Чылай вăхăтран тин тăна кĕрсе куçне уçсан, вăл хăй çўллĕ хăмăш ăшĕнче, шурлăхра выртнине курчĕ.

— Мĕн пулнă-ши мана?—хăвăрт шухăшларĕ вăл. Унтан часрах ура çине сиксе тăчĕ, анчах сулахай алли тӳсме çук пĕçерсе ыратса кайнипе лăнчăрах кукленсе анса, вăрăммăн йынăшса ячĕ. Фашистсен лётчикĕ çырмари халăха пулемётран пенĕ чух ăна хулĕнчен тивнĕ иккен, шурă кĕпе çанни халь чĕп-чĕр юн пулнă...

Таня аманнă аллине сывă аллипе çавăрса тытрĕ. Çавăнтах амăшĕпе Коля çинчен аса илчĕ.

— Вĕсем ăçта-ши? Вĕсене мĕн пулнă-ши?

Шăлĕсене çыртса, хулĕнчен сăрхăнсах тăракан юнне чарма тăрăшса, вăл сăрталла хăпарма пикенчĕ. Пĕр çирĕм утăмранах унăн куçĕсем тӳсме çук хăрушă картин курчĕç: унта та кунта ял çыннисен ĕмĕрлĕхех хусканми пулнă кĕлеткисем выртаççĕ. Пурте пулнă унта: ачасем те, хĕрарăмсем те, ваттисем те...

— Анне!—пĕтĕм чĕре вăйĕпе, шариех кăшкăрса ячĕ Таня. Унăн пысăк чакăр куçĕсенчен шултра куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

Никам та ответ памарĕ. Вара Таня, хăйĕн суранĕ çинчен манса кайсах, çынсен виллисем хушшинче амăшĕпе шăлнĕне шырама тапратрĕ. Пĕрин патне пырса пăхрĕ, теприн патне—пĕр вунă çынна сăнарĕ, анчах кусем тупăнмарĕç.

— Анне, анне, тетĕп!

Ватă çăка хыçĕнчен ăна хирĕç сасартăк Федот мучи тухса тăчĕ.

— Мĕн кăшкăратăн, хĕрĕм?—ыйтрĕ вăл темле улшăнса кайнă сасăпа.

— Пирĕн аннепе Кольăна курмарăн-и?—ун патнелле чупса пычĕ Таня.—Эпир пĕрлехчĕ, унтан эпĕ пĕлми пулнă та, çав вăхăтра вĕсем таçта кайнă...

Старик ун çине çав тери хурлăхлăн пăхрĕ.

— Ăçта кайччăр ĕнтĕ вĕсем? Пурте кунтах...

— Эс куртӑн-и вӗсене?

— Куртӑм. Ав ҫавӑнта...—аллипе анат еннелле кӑтартрӗ Федот мучи, ассӑн сывласа ярса.

— Вилнӗ-и?!—сиксе чӗтреме тытӑнчӗ Таня.

— Пӗлместӗп...

Таня часрах аналалла чупрӗ. Пӗр пӗчӗк лупашкара, вӑрӑм курӑк ӑшӗнче, хӑйӗн амӑшӗ йӑрстах тӑсӑлса выртнӑ Коля умӗнче чӗркуҫленсе макӑрнине курсан, вӑл та пӗтӗм чӗрипе хурланса, асаплӑн макӑрса ячӗ. Пуля унӑн шӑлнӗн ӗнсинчен пырса ҫапса, куҫӗ патӗнчен тухса кайнӑ пулнӑ.

6

Ял каҫченех ҫунчӗ. Пирвайхи самолётсем ӑна тивертсе, ишӗлтерсе хӑварнӑ хыҫҫӑн, сывӑ юлнӑ ял ҫыннисем, хӑйсен пурлӑхӗсене ҫӑлас тесе, килӗсене чупнӑччӗ, анчах нимӗҫсем ял ҫине татах темиҫе хут вӗҫсе пынипе пушара сӳнтересси те, килти япаласене ҫӑлассипе пулмарӗ. Ҫынсем ӑҫта май килнӗ—ҫавӑнта пытанса ларчӗҫ, каҫ пуласса кӗтрӗҫ.

Анкарти хыҫӗнче самолёт ҫинчен пулемётран пенипе вӑтӑр ҫын ытла вилнӗ иккен, тепӗр ҫавӑн чухлех аманнӑ. Малтанах суранланса, тӑнсӑр пулса выртнӑ Таня сисмен ӑна: фашист лётчикӗ, ҫырма тӑрӑх ҫич-сакӑр хут каллӗ-маллӗ ҫаврӑнса, ҫӗрелле пере-пере вӗҫнӗ. Ниҫта та тарса хӑтӑлма пулман унӑн пулемӗчӗсенчен.

Хӗвел анаспа сыввисем аманнисене ҫӗкле-ҫӗкле, колхоз арпалӑхне куҫарса вырттарчӗҫ. Килӗсене илсе кайма хӑрарӗҫ, мӗншӗн тесен нимӗҫсем каллех вӗҫсе килме пултарнӑ. Вилнисем валли васкасах тупӑксем тума тытӑнчӗҫ. Пӗр талӑк малтарахран кӑна чип-чипер пурӑнакан ял темиҫе сехет хушшинчех темӗн пысӑккӗш масар евӗрлӗ пулса тӑчӗ...



22064-453

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Таньăсем тепĕр кунне Кольăна пытарчĕç. Федот мучи, вĕсен кил-йышĕпе пĕрмаях туслă пурăннăскер, ирхине ун валли типтерлĕ тупăк турĕ, çиелтен хĕрлĕ сăрпа сăрларĕ; амăшĕ Кольăна çуса вĕр-çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăнтартрĕ, суранне шурă тутăрпа çыхрĕ те, каçаллапа вара ăна тупăк ăшне хурса масар çине илсе кайрĕç. Федот мучипе амăшĕ тупăкне йăтса утрĕç, Таня юнашар пычĕ.

Питĕ хытă макăрчĕ вăл... Пуринчен ытла, тупăка шăтăка антарса, çиелтен тăпра сапма пуçласан ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ... Ытла та сасартăк, кĕтмен çĕртен пулчĕ-çке ку! Виçĕмкун çеç Коля чĕрĕччĕ, сывăччĕ, çывăрса каяс умĕн ашшĕне, пиччĕшне асăнса выртрĕ, вĕсем халь ăçта пулма пултарни çинчен калаçрĕ, анчах халĕ—çук ĕнтĕ вăл, вилнĕ, сывлами пулнă, урăх нихçан та чĕрĕлсе тăрас çук, Таньăпа пĕрле выляс çук, шкула та каяс çук... Тискер тăшмансем хăйсен çăхан евĕрлĕ машинисемпе вĕçсе килчĕç те, вĕлерсе пăрахрĕç ăна, яланлăхах пурнăçран уйăрчĕç. Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн?

Амăшĕ те хытă хурланса макăрчĕ, Федот мучин куçĕсем те пĕрмаях шывланчĕç. Тĕттĕм пулма пуçличчен те Кольăн масар шăтăкĕ патĕнчен уйрăлса каймарĕç вĕсем.

— Ашшĕ килсен, памятник тăвăпăр-ха ăна валли,—терĕ Федот мучи куçĕсене çанă вĕçĕпе шăлса илсе.—Эх, ачи пит ăслăччĕ...

Килелле таврăннă чух вĕсем çапла шут турĕç.

— Пĕрре килнĕскерсем, вĕсем татах вĕçсе килсе, татах тем те кăтартма пултараççĕ... Тухса каяс пулать май пур чух. Хăрушлăх çукрах вырăнсене каяс...

— Мана ашшĕ ун пирки питĕ хытă каласа хăварчĕ,—терĕ Таня амăшĕ, халь те юха-юха анакан куççулĕсене шăла-шăла.—Ачасене сыхлама хуш-

рĕ, анчах эп сыхласа ҫитерейместĕм ав. Пĕрине те пулин сыхласа хăварасчĕ хăрушă вилĕмрен...

Вĕсем ҫул ҫине тухса кайма ҫĕр ҫывăрмасăрах хатĕрленчĕҫ. Чи кирлĕ япаласене суйласа илчĕҫ, пĕр-ик михĕ ҫăнăх тултарчĕҫ, ҫĕр каҫах ҫимелли пĕҫерчĕҫ. Федот мучи колхоз председателĕпе лаша пирки калаҫса татăлчĕ. Лашине вĕсене пĕр сăмахсăрах панă, мĕншĕн тесен председатель халăха хĕвелтухăҫнелле куҫса кайма пулăшасси ҫинчен районтан хут илнĕ-мĕн. Таньăсем пекех, ялтан тухса кайма ытти ҫемьесем те нумайăшĕ хатĕрленнĕ.

...Ирхи апат вăхăтĕнче вара Таньăпа амăшĕ тата Федот мучипе унăн карчăкĕ пĕр лав ҫине тиенсе, ялтан тухса кайрĕҫ. Уй хапхинчен иртсен Федот мучи лашана тăратрĕ те, ял ҫине юлашки хут пăхрĕ. Унăн пĕркеленчĕк пичĕсем тăрăх шултра куҫҫулĕсем юхса анчĕҫ.

— Утмăл икĕ ҫул пурăнтăм ҫак ялта, ҫынран усал сăмах илтмерĕм, ялан ыр ятлă пулсаттăм, халь шуйттан нимĕҫĕсем пирки тухса кайма тиврĕ... Ҫĕр ҫăттăрах вăл ҫынҫиенсене! Вĕсене ҫапса аркатма пирĕн ывăлсен вăйĕсем ҫитчĕр, пирĕн каялла таврăнса ĕлĕкхи пекех телейлĕн пурăнмалла пултăр....

Унăн карчăкĕпе Таня амăшĕн те чĕрисем тӳсеймерĕҫ, вĕсем те хурланнипе йĕрсе ячĕҫ. Пĕр Таня ҫеҫ макăрмарĕ,—вăл темле лăпланнă пек пулчĕ, унăн халь часрах кунтан тухса айккалла, усал тăшман ҫук ҫĕрелле каясси ҫеҫ килчĕ.

Сехетрен вĕсем телефон юпиллĕ măн ҫул ҫине тухрĕҫ. Ун тăрăх вĕҫĕмсĕр халăх шăвать иккен: хăшĕ лавпа, хăшĕ ҫурран... Ҫемйи-ҫемйипе, ялĕ-ялĕпе, выльăхĕ-чĕрлĕхĕпе, пурлăхĕпе каяҫҫĕ. Пурте пĕр еннелле—хĕвелтухăҫнелле, Мускав еннелле шăваҫҫĕ. Ҫулĕ ҫинче ним майсăр тусан йăсăр-

ланать, çынсем кăшкăра-кăшкăра лашисене хăвалаççĕ, хăшĕсен ачисем макăраççĕ, ĕнисем мĕкĕреççĕ,—ним ăнланмалла мар шăв-шав кĕрлесе тăрать...

— Шуйттан Гитлерĕ! Мĕн тери асап кăтартать ним айăпсăр халăха, йытă çименскер! Алли-ури хăрса лартăрччĕ унăн, чĕрине касса кăларса урнă кашкăрсене пăрахса парасчĕ унăнне!—ылханса пычĕ Федот мучи, час та часах салхуллăн сывласа.

Мăн çулпа пĕр-ик километр пек кайсан, Таньăсен ялĕ куçран çухалчĕ. Тăван кил, унчченхи телейлĕ пурнăçпа савăнăç, илемлĕ те чечеклĕ улăхсем, тăшман вĕлерсе пăрахнă Коля—пĕтĕмпех хыçра юлчĕç.

7

Урапа çинче пĕрмай чĕтренсе пынипе Таня тĕлĕрсе кайнă мĕн. Темле тĕлĕк те курăнма пуçланă пулнă ăна: каллех килте пек, пĕтĕм кил-йыш пĕрле, пиччĕшĕ те килнĕ, ашшĕ те таврăннă, Коля та сывах... Анчах аманнă аллине майсăр хускатнипе вăл сасартăк вăранчĕ те, тăрса ларчĕ. Куç умне тĕлĕкре курнинчен пачах расна картина тухса тăчĕ.

Вĕсен лавĕ паçăрхи мăн çулпах пырать. Малта та, кайра та, çулăн икĕ енĕпе те вĕçĕмсĕр обоз шăвать, çынсем утаççĕ, тусан мăкăрланать. Шăрăх, пăчă, шăл хушшинче тусан кăчăртатать, шыв ĕçес килет...

Амăшĕпе Федот мучи çул хĕрринчи сукмак тăрăх утса пыраççĕ иккен, лав çинче Таньăпа Федот мучи карчăкĕ кăна. Вăл халь те йĕме чарăнман, куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăлкаласа пырать. Çав тери каяс килмест ĕнтĕ унăн çак тăван вырăнсенчен... Камăн каясси килтĕр? Анчах—каймаллах, ним тума та çук. Пурнăç нимрен те хаклăрах. Нимĕçсен аллине лексен вилнĕпе пĕрех вăл...

— Хырăму выçмарĕ-и?—тесе ыйтрĕ амăшĕ, Таня тăрса ларнине асăрхасан.

— Çук, манăн шыв ĕçес килет...

— Шыв çук çав, пĕр-пĕр çырмана çитиччен тӳскеле ĕнтĕ.

— Халь те тӳсетĕп...—Таня пуçне каллех михĕ çине хурса куçĕсене хупрĕ. Анчах нумай та выртмарĕ вăл çавăн пек, тахăш тĕлте самолётсем кĕрленĕ сасса илтрĕ те, йăпăртах тăрса ларчĕ. Куçа ăна тӳрех ĕнерхи хăрушă куна аса илтерчĕ, унăн чĕри каллех тăрук хăраса кайса хыттăн та час-час тапма пуçларĕ.

— Татах нимĕçсем-ши?

Сенкер çутă тӳпере самолётсене тăруках курма пулмарĕ. Таня куçĕсене хĕвелтен алтупанĕпе картласа унталла та кунталла пăхрĕ. Унăн амăшĕпе Федот мучи те, ытти пур çынсем те куçĕсемпе таса пĕлĕте тăрăнчĕç. Моторсен шавĕ вăйлăланнăçемĕн вăйлăланчĕ. Тахăш самантра Таня малалла, хăйсем çывхарса пыракан ял еннелле пăхрĕ те, тинех пĕр ушкăн самолёт курчĕ. Хăй сисмесĕрех, вĕсене вăл шутлама тытăнчĕ: виççĕ, улттă, тăххăр... Вĕсем кунталлах, çул тăрăх шăвакан обоз çинеллех ярăнса пынă. Анчах—камăн самолечĕсем-ши вĕсем? Пирĕн-ши, нимĕçсенех-ши? Хĕвелтухăç енчен килнине шута илсен, вĕсем пирĕннисем пулмалла. Нимĕçсемпе çапăçма каяççĕ пуль-ха...

Унта та кунта çынсем тавлашни илтĕнчĕ:

— Пирĕн вĕсем, куран—Мускав енчен вĕçсе килеççĕ...

— А эпĕ—пирĕн мар, тетĕп! Пăх авă, çунаттисен вĕçĕсем сарă.

— Ытла инçе куратăн... Нимĕн те паллă мар!

— Куратăп çав!

Анчах çынсен нумай тавлашса тăмалла пулмарĕ...

Таня питĕ лайăх курчĕ: чăн малтан вĕçсе пыракан самолĕчĕ сасартăк çул çинелле ўлесе чăмса анчĕ те, унăн хура хĕреслĕ çунатти айĕнчен харăсах пĕр вунă вакрах бомбăсем тухса вăркăнчĕç. Тискеррĕн те çинçен шăхăрса анса кайрĕç вĕсем... Тепĕр самантран вара Таньăсенчен пĕр виççĕр метрта—ĕнер ялта пулса иртнĕ пекех—калама та çук хыттăн шартлата-шартлата çурăлчĕç те, пĕтĕм çĕр чĕтренчĕ, çĕрпе, тусанпа пĕрле пĕлĕтелле хура тĕтĕм палкаса хăпарчĕ.

Хыççăнах ытти самолĕтсем те çавнашкалах чăма-чăма анса, бомбăсем тăкма тапратрĕç. Кашни бомби çурăлмассеренех çĕр кисрене-кисрене илет, тĕтĕмпе, çĕрпе, тусанпа пĕрле сывлăшалла урапа çĕмрĕкĕсем, тĕрлĕ япаласем, çынсен кĕлеткисем çаврăна-çаврăна хăпарса, каялла ўкеççĕ. Çул çинче ним майсăр юнлă пăтă пулса тăчĕ. Хăрана лашасем ĕрĕхсе пур еннелле ыткăнаççĕ, урапасем пĕринчен тепри çаклана-çаклана тўнеççĕ, хыçалтисем малтисене таптаççĕ...

— И-ии-у-у-у... — туса анаççĕ бомбăсем çўлтен, пĕр чарăнмасăр. Пĕрисем çулăн пĕр енне, теприсем тепĕр енне ўкеççĕ, взрывсен хумĕ лашасене те, лавсене те, çынсене те унталла-кунталла ывăтать, унтан пĕр-пĕр бомби шăп çул варрине лексе, унта мĕн пуррине пĕтĕмпех пăтраштарса сирпĕтет.

Аманнă çынсем кăшкăрни, вилеймен лашасем тапаланса йынăшни, урапасем шăтăртатса çĕмрĕлни, тем те, тем те хутăшса кайрĕ. Ăçта ан пăх—пур çĕрте те çынсемпе выльăхсен юнĕ юхать... Анчах фашистсен самолĕчĕсем çаплах çўлелле хăпара-хăпара каллех аялалла чăмаççĕ, кашни чăммассеренех темиçешер бомба кăларса ывăтаççĕ.

— И-и-иу-у... Ҫӗмсӗрр... шӑтӑр-шарт!—тӑваҫҫӗ вӗсем.

Йӗри-тавра ним курӑнми тӗтӗм йӑсӑрлана пуҫларӗ. Ҫул ҫинче те, ун таврашӗнче те турпас пулса выртнӑ япала куписем хыпса илсе ҫунма тапратрӗҫ. Урнӑ кашкӑрсенчен те тискертерех нимӗҫ ҫарӗнчен ҫӑлӑнма ӗмӗтленсе хӗвелтухӑҫнелле шӑвакан мирлӗ ҫынсен обозӗнчен нимӗн те юлмарӗ...

Ку та ҫитмест-ха. Фашистсен лётчикӗсем юлашкинчен ҫул тӑрӑх каллӗ-маллӗ вӗҫсе, пулемётсенчен пеме тытӑнчӗҫ. Пӗри персе иртсе каять те, ҫийӗнчех тепри пуҫлать. Умлӑн-хыҫлӑн, умлӑн-хыҫлӑн, айӑпсӑр совет ҫыннисен таса юнӗ юхнине курнипе ӳсӗрӗлсе кайнӑ пекех тискеррӗн ашкӑнчӗҫ вӗсем.

Питӗ нумай ҫын пӗтрӗ вара ҫакӑнта. Ҫӑлӑнаканнисем сахал пулчӗҫ.

Нимӗҫ самолёчӗсем мӗнпур бомбисене пӑрахса, патронӗсене пере-пере пӗтерсе вӗҫсе кайсан тӗтӗмпе йӑсӑрланакан мӑн ҫулӑн сулахай енчи мишавай юпи шӑтӑкӗ хӗрринче кӑвак ҫӳҫлӗ старик пӗр пӗччен макӑрса ларчӗ. Ку старик—Федот мучи пулнӑ...

## 8

...Пирвайхи бомбӑсем ӳксенех, Федот мучи, часрах лаша пуҫӗ патне чупса пырса, ӑна ҫултан аяккалла, хирелле тартма шутланӑ пулнӑ. Анчах канавалла тӑрук пӑрса антарнипе лавӗ тӳнсе кайрӗ, ҫӳлте ларакан Таньӑпа карчӑк чутах михӗсем айне пулатчӗҫ. Урапана тӑратса лартма пикеннӗ хушӑра бомбӑсем ҫывӑхрах ӳке-ӳке ҫурӑлчӗҫ. Пӗр пысӑк осколок лашана тӳрех хӑлхи патӗнчен пырса ҫапса—ҫавӑнтах вӗлерсе пӑрахрӗ, тепӗр осколокӗ Федот мучин карчӑкне ҫурӑмӗнчен шӑтарса кӗрсе кайрӗ. Карчӑк ӳппӗн ӳксе пӗр-икӗ хутчен

çeç йынăшса илейрĕ, унтан çăварĕнчен юн тапма пуçларĕ те, хускалми пулчĕ.

Бомбăсем татах шăхăрса анчĕç...

Таньăпа амăшĕ хирелле чупса, пĕр çĕр-çĕраллă утăмран мишавай юпи шăтăкне кĕрсе выртрĕç.

— Мучи мĕнле-ши? Чĕрĕ-ши? Килет-ши пирĕн хыççăн?—терĕ те часах амăшĕ, йăпăртлăха чĕркуççи çине тăрса мăн çул еннелле пăхрĕ.

Анчах çĕкленме кирлĕ мар мĕн... Шăп çав самантра харăсах темиçе бомба çурăлчĕç те, пĕр пысăках мар осколок амăшĕн тăнлавĕнчен пырса çапрĕ.

— Ах!—теме çеç ĕлкĕрчĕ вăл. Çавăнтах чĕпчĕр юн пулса, шăтăкалла тăсăлса ӳкрĕ.

Таня, ăна кура, тата хытăрах кăшкăрса макăрса ячĕ.

— Анне!.. Анне, мĕн эс...

Вăл ыталарĕ ăна, чуптурĕ, ним тума аптăранă енне хулпуççинчен тытса лăскарĕ. Анчах амăшĕ ответ памарĕ, унăн куçĕсем ĕмĕрлĕхех хупăнчĕç... Çав вăхăтра шăтăк хĕррине Федот мучи упаленсе çитрĕ. Унăн куçĕсем тискеррĕн ялкăшнă, вăл хăй аран сывланă. Таньăн амăшĕ вилсе выртнине курсан, вăл та ача пекех макăрса ячĕ:

— Иксĕмĕре те пĕтерсе хучĕ ку нимĕç...

Вăл хырăмĕпе шуса шăтăк тĕпнелле анчĕ те, вĕсем нумайччен ним чĕнмесĕр выртрĕç. Чăнах та, мĕн çинчен калаçма пултарнă-ха вĕсем çак вăхăтра? Хăйсен пурнăçĕнчи чи хаклă çынсем вилсе кайнă, тата вĕсем хăйсем те кашни самантрах вилме пултарнă, мĕншĕн тесен хура хĕреслĕ бомбардировщиксем çаплах явăннă-ха вĕсен пуçĕсем çинче, çаплах бомбăсем тăкнă, çĕре вырăнтан хускатас пек кисрентернĕ.

Акă, юлашкинчен вĕсен бомбисем пĕтрĕç пулмалла. Пĕр хушă ахалех вĕçрĕç, сывлăшра мотор-

сем мĕкĕрни çеç илтĕнчĕ. Анчах темиçе минутранах пулемётсем шатăртатма тапратрĕç.

— Ăрр... ăрр-р...

— Та-та-та, рра-та-та...

— Пытан, лайăхрах пытан, çĕр çумнерех йăпшăн!—кăшкăрчĕ Федот мучи, шултра пульăсем çĕр çине мăн пăрçасем пек сапăннине илтсе.

Таня шăтăк тĕпне çип çăмхи пекех пулса выртрĕ, çапах та çӳлтен çăвакан çумăртан уçă шăтăкра епле хăтăлан? Федот мучи асăрхаттарнă хыççăн тепĕр самантĕнчех пуля унăн сылтăм хулпуççине шăтарса кайрĕ.

Çавăнтан вара Таня урăх нимĕн те астумасть. Тăна кĕрсе куçне уçсан, вăл хăй пaçăрхи шăтăкрах выртнине курчĕ. Каç пула пуçланă ĕнтĕ, çанталăк кăштах сулхăнланнă... Хирте шăп. Нимĕç самолёчĕсем вĕçсе кайнă пулмалла, пĕр мотор сасси те илтĕнмест сывлăшра.

Таньăн тӳсме çук ĕçесси килекен пулнă, пырĕ пачах типсе ларнă.

— Мучи ăçта-ши? Тен, ăна та вĕлернĕ?

Ку шухăш Таньăна пушшех хăратса пăрахрĕ. Мучи те вилнĕ пулсан, мĕн тăвас пулать-ха вара? Пĕччен ниçта та кайма пултарас çук... Çакăнтах пĕтмелле пулать...

— Ой-й...—йынăшса ячĕ вăл суранĕ ыратнипе.

— Сывлатăн-и, хĕрĕм?—илтĕнчĕ Федот мучи сасси.

— Ыратать...

— Ыратмасăр ара, пуç пӳрне кĕмеллĕхех шăтарса кайнă та! Хĕрхенсе пемен вĕт вĕсем, вĕлерес тесе пенĕ.

— Ĕçесчĕ... Ăш хыпать...

— Юрĕ, халех тупса килĕп, хĕрĕм.

Федот мучи тăчĕ те, хăмăла кăштăртаттарса, таçталла кайрĕ. Таня çаплах месерле выртрĕ, мĕн-

шĕн тесен суранĕ ăна нихăш еннелле те хусканма памарĕ. Амăшĕ çинчен шухăшланипе куçĕсем каллех вĕри куççулĕсемпе тулчĕç.

— Никам та юлмарĕ манăн... Тăр пĕччен эп халь, тăлăх... Çитменнине хам ик çĕртен аманнă. Епле пурăнас ĕнтĕ, ăçта каяс?..

Чылай вăхăтран Федот мучи темле катăк чӳлмекпе шыв илсе пырса ĕçтерчĕ ăна.

— Эп сана кĕтрĕм,—терĕ вăл,—эс тăна кĕрессе... Суранна çыхнă чух ним пĕлмиех выртрăн та, ку та вилсе каять-и ĕнтĕ, тесе хăрарăм.

— Аннене ăçта хутăн?

— Ăна мĕн пулнине пĕлетĕн пуль?.. Ав, хамăн карчăкпа иккĕшне те йытăсем тулласран çĕре алтса хутăм. Кайран лав тупса килсе пулать-и, тетĕп-ха. Кунтах вырттарас марччĕ, кил çывăхнерех илсе кайса пытарасчĕ. Халь пирĕн иксĕмĕрĕн епле те пулсан киле çитес пулать. Кун пек пулнă хыççăн малалла каяймастпăр ĕнтĕ...

Унăн юлашки сăмахĕсене Таня тĕлĕкри пек кăна илтсе выртрĕ. Суранĕ ыратнипе, ăшĕ пăтраннипе, пуçĕ кашланипе вăл каллех пĕлми пула пуçларĕ.

Федот мучи ун çине тата пĕртакках пăхса тăчĕ, унтан, тарăнăн сывласа илсе, мăн çул еннелле утрĕ. Кунта вăл чылай хушă çула май пĕр-пĕр лав е машин пуласса кĕтсе ларчĕ. Ун телейне, пĕр çур сехет пек вăхăт иртсен, çул çинче—шăп нимĕçсем бомбăсемпе аркатнă обоз тĕлĕнче—çар çыннисем ларса тулнă грузовик чарăнса тăчĕ. Мучи вăл çынсене хăйĕн хуйхи çинчен макăрас пек сасăпа каласа пачĕ.

— Хĕрача вилес пек выртать... Çавна киле илсе çитересчĕ, пулăшăр тархасшăн!

Машина çинче икĕ медсестра пулнă-мĕн. Аманнă хĕрача çинчен илтсенех, вĕсем çĕре сик-

се анчĕç. Тепĕр темиçе минутран Таньăн суранĕсене çыхса ăна носилкăпа çĕклесе пычĕç те, машина çине хăпартса хучĕç.

— Хăрамаллиех çук, пĕрер уйăхран сывалса çитме пултарать сан хĕр ачу,—тесе лăплантарчĕ Федот мучие пĕр медсестри, машина вырăнтан хускалса кайсан.

— Хĕрачи манăн мар-ха, анчах халĕ вăл маншăн хам ачаран та хаклăрах,—терĕ ăна хирĕç мучи.— Эпĕ хапăл тусах унăн асапне хам йышăнăттăм. Эп хам вилсен те шел мар, анчах ăна епле те пулин сыватасчĕ, мĕнле те пулин усрасчĕ...

Çакăнтан вара Таньăпа Федот мучи пĕрле пурăнма тытăнчĕç. Таня хăйĕн суранĕсем пирки йывăр чирлесе выртрĕ, ик эрне ытла вырăн çинчен те анаймарĕ. Мучи вара ăна чăнах та хăй ачине пăхнă пекех пăхрĕ. Таньăна вăл тăтăшах мĕнпе те пулин пулăшма, унăн асапĕсене çăмăллатма, йывăр самантсенче те кăмăлне çĕклеме тăрăшрĕ.

Яла юлнă темиçе ĕне хуçисенчен ăна валли сĕт илсе тăчĕ, пĕрре таçтан пыл та тупса пычĕ, ик-виç кунта пĕрре леш медсестрасем парса хăварнă бинтсемпе унăн суранĕсене çĕнĕрен çыхса ячĕ. Халĕ ĕнтĕ Таньăн мăн çул çинче аманни ерипен тӳрленсех пычĕ, анчах малтанхи, хăйсен анкартийĕ хыçĕнче аманни пĕрмаях туртса ыратрĕ, ялан пӳрленчĕ. Питĕ асаплантарчĕ вăл Таньăна...

Майĕпе çанталăк сивĕте пуçларĕ. Урамсенчи, пахчасенчи йывăç çулçисем саралчĕç, каскăн çил вĕрнипе вĕсем туратсем çинчен татăлса ӳксе вĕçме тытăнчĕç, çу иртсе кайнине аса илтерчĕç.

Унтан çумăрсем тапранчĕç.

Таня хулленех ура çине тăрса çӳреме тытăнчĕ, пӳрт ăшчиккине тирпейлекелерĕ, хăш чух Федот мучи илсе пыракан хаçатсене те вулакала-

са пачĕ ăна. Çав вăхăтрах кунне темиçе хутчен те ашшĕпе пиччĕшĕ çинчен аса илчĕ...

— Ăçта-ши вĕсем? Атте час тавăрнать-ши? Вырăхсене вырăна илсе çитерсенех тавăрнатăп, терĕ те—ик уйăх та иртрĕ ĕнтĕ, анчах хăй çаплах çук. Пиччерен те хыпар çук... Тем пулман-ши ăна?

Çакăн пек аса илсе калаçма пуçласан, Федот мучи ăна яланах йăпатрĕ:

— Пурте вилеççĕ-и вара, айван? Сан пиччў вăл кайăк пек, сывлăшра вĕçет, ăна часах çапса антараймăн! Аçу пирки вара вуçех те хуйхăрма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл вăрçă çук çĕре кайнă. Қам пĕлет, тен каялла килме билет илеймест пуль, халь вăрçă вĕт, нимрен малтан салтаксене, снарядсене турттараççĕ...

Таня вăл каланисене ĕненсех пурăнчĕ. Унăн чĕринчи шанчăк пĕр самантлăха та сўнмерĕ.

— Вăрçă пĕтсен аттепе иксĕмĕр пичче патне каятпăр та, пурте пĕрле пурăнма тытăнатпăр. Эпĕ каллех шкула çўретĕп вара, вĕренетĕп. Пурĕпĕрех тухтăр пулатăп!

...Нимĕçсем çав вăхăтра Таньăсен ялĕ патнеллех çывхарса пынă. Ун çинчен ялта юлнă çынсем çав тери шикленсе калаçнă, анчах халь тин ним тума та май килмен ĕнтĕ.

Пĕр каçхине Таня тупăсем кĕмсĕртетнипе вăранса кайрĕ. Снарядсем инçетре те мар, Таньăсен ялĕ таврашĕнчех çурăлчĕç. Пĕтĕм пўрт кисренсе тăчĕ, кантăксем тухса вăркăнас пек чăнкăртатрĕç. Федот мучи кăмака çинчен анса Таня патне чупа пычĕ:

— Тăр, хĕрĕм... пытанар ăçта та пулин! Тен, татах хăтăлăпăр...

Вĕсем иккĕшĕ те васкасах тумланса тухрĕç те, нўхрепе анса ларчĕç. Ял таврашĕнчи çапăçу,

хĕрнĕҫемĕн хĕрсе пычĕ. Ирчченех кĕрлерĕ тупă-сен сасси, ҫывăхрах пулемĕтсем шатăртатрĕҫ. Таврари ялсем ҫуннипе пĕтĕм пĕлĕт хĕп-хĕрлĕ пулса тăчĕ.

— Ҫитрĕҫех пулмалла шуйттансем, — терĕ Федот мучи, Таньăна хăй ҫумнелле йăпшăнтар-са. — Анчах эс ан пăлхан, лăпкăрах пул, тен вĕлерсех пăрахмĕҫ...

— Хăратăп эп вĕсенчен,—ĕсĕклеме тытăнчĕ Таня. — Вĕсем хăйсем килсе ҫитиччченех пирĕн ҫынсене темĕн чухлех вĕлерчĕҫ те...

— Ҫынна тепĕр чух вĕлернипе те парăнтарай-маççĕ, хĕрĕм!

Ку сăмахсене Таня ăнлансах ҫитеймерĕ, анчах та Федот мучи чĕринче вăй пĕтменнине, унăн кăмăлĕ халь те ҫирĕп пулнине сисрĕ. Вара хăй те ҫăмăлтараххăн сывласа илчĕ.

Ир енне ҫапăҫу шавĕ шăпланчĕ. Таньăпа Федот мучи нӳхрепрен тухса пӳрте кĕчĕҫ. Федот мучи ялта мĕн пулса иртнине пĕлес тесе урамалла тухрĕ, анчах хапхаран тухсанах каялла тав-рăнчĕ...

— Урам тулли нимĕҫ, хĕрĕм... Тӳссе тăр ҫеç ĕнтĕ халь!

9

Мучи тĕрĕс калană.

Чуралăх мĕн иккенне вĕсем ҫав ирхинех питĕ лайăх туйрĕҫ. Ялта ҫĕр тĕрлĕ шав, кăшкăру, ют чĕлхепе палкани, выльăхсем мĕкĕрни, йытăсем вĕрни илтĕнме тапратсанах, Таньăсем патне теми-ҫе нимĕҫ пырса унта-кунта пăхкаласан, вĕсенчен пĕри юпа пек хытса тăнă Федот мучие сухалĕн-чен тытса пуҫне карт! ҫĕклеттерчĕ.

— Старьик! Пошель вон!—вăл аллипе тулал-ла кăтартрĕ.—Твой хауз... дом... будет герман-ский зольдат! Марш!

— Аҫта каяс манăн? Ачам та чирлĕ... — терĕ Федот мучи.

Нимĕç чӳрече витĕр анкарти еннелле кăтартрĕ.

— Там, там! Землянка! Здесь — германский зольдат. Не слюшаеш — сейчас пук-пук, твой копф... голова нет, капут! Через час ты тут нет!

Нимĕç вырăсла пит начар калаçнă пулин те, Таня вăл каланине пĕтĕмпех ăнланчĕ. Нимĕç вĕсене халех пӳртрен тухса кайма хушрĕ. Итлемесен—вĕлеретĕп, пуçна аркататăп, терĕ.

Паллах ĕнтĕ, вĕсене хирĕç калаçма юраман, ӳкĕтлени усă кӳрес çукки тӳрех курăннă.

— Юрать... — терĕ Федот мучи.

— Так, так! — Нимĕç ун сухалне тата тепĕр хут туртрĕ те, куçĕсене сасартăк Таня çине куçарчĕ.

— Чей дочь?

— Манăн, — ответ пачĕ мучи ним иккĕленмесĕрех.

— Карош! Красивый медхен... барышня будет.—Вăл кĕсйинчен канфетка туртса кăларчĕ.— Кушай!

Таня хăйне тăсса панă канфеткăна илес вырăнне йăпăр-япăр кĕтесселле чакса кайса тăчĕ.

— Не боись! Кушай!—татах сĕнчĕ нимĕç.

Таня çăварне тутăр вĕçĕпе хупăрласа лартрĕ.

— Возьми, сладкий!

Таня «кирлĕ мар» тесе пуçне пăркаларĕ. Нимĕç тарăхса кайрĕ. Канфетка пама тăснă аллипех Таньăна хăлхинчен çавăрса тытрĕ те, питĕ ыраттармалла пăрчĕ.

— Канфет не будеш — потом палка будеш! Мы вас карашо пудем учить! Болшевик!

Унтан тăруках Федот мучи патнелле çаврăнса тăрса, хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ:

— Через пьят минут уходи отсюда! Палка!

Çиелтен чышкипе юнаса хăварчĕ.

— Ну, пуçланчĕ тыткăнри пурнăç, — терĕ Федот мучи вĕсем тухса кайсан.—Тем те куратпăр пуль-ха, ку тискер кайăксенчен хĕрхенӳ ан кĕт...

Вăл шыв ăсса кĕчĕ те, питĕ тăрăшса питне çума тытăнчĕ.

— Сухала лайăхрах тасатас...

— Мĕн, вараланнă-им вăл? — ăнланмасăр ыйтрĕ Таня.

— Курмарăн-им, нимĕç тытрĕ ăна?.. А эс те маттур иккен. Илмерĕн ун канфетне. Эпĕ — илетех пуль, тесе хăранăччĕ. Намăс пулатчĕ вара мана...

— Çав чуниллирен канфет илсе ларма—ухмах-им эпĕ?

— Тĕрĕс, хĕрĕм, çапла кирлĕ... Яланах çавăн пек çирĕп пулас пулать. Хамăра тем тусан та, кăмăла хуçаймаççĕ вĕсем пирĕнне! Ун йышши халăх мар эпир. Çирĕп халăх. Çавах парăнтараймаççĕ вĕсем пире, курăн акă: ашкăнсан-ашкăнсан каяллах тухса тармалла пулать вĕсен!

...Нимĕçсем тепре пырса кĕриччен вĕсем анкартинчи мунчана пурăнма куçрĕç. Çавăнган вара тӳсмелле мар йывăр, пĕр çутă самантсăр кунсем пуçланса кайрĕç.

Федот мучи пӳртне нимĕç салтакĕсем вырнаçрĕç. Нихçан ăшă курман пек, вĕсем çĕрĕн-кунĕн вут çунтарчĕç, малтан выльăх картине, унтан кĕлете пăсса çунтарма тапратрĕç. Темиçе кунтан пахчари улмуççисемпе чие йывăççисене касма тытăнчĕç. Мунчари пĕчĕк чӳрече витĕр Таня вĕсен тискер ĕçĕ çине куççуль тулли куçĕсемпе пăхса ларчĕ.

— Мĕншĕн-ха вăрмана кайса килес мар вĕсен?.. Юри мăшкăллаççĕ...

— Ан шарла, хӗрӗм,—терӗ Федот мучи,—урнӑ кашкӑрсем вӗт вӗсем! Нимӗҫӗн чӗре выранне — наркӑмӑш муклашки ҫеҫ, ӑна йытта пӑрахса парсан—йытӑ та ҫиес ҫук!

Ялта ҫав вӑхӑтра кашни кунах ҫӗнӗрен ҫӗнӗ хӑрушӑ ӗҫсем пулса иртрӗҫ. Ҫынсен пӗтӗм пурлӑхне, тырри-пуллине, выльӑх-чӗрлӗхне шӑпӑрпа шӑлса тухнӑ пекех тасатрӗҫ нимӗҫсем. Нумай ҫынсене персе вӗлерчӗҫ, ҫакрӗҫ, хӑшӗсене таҫта илсе кайрӗҫ... Вӗсем хушшинче мӑн ҫынсем ҫеҫ мар, ачасем те нумай пулнӑ. Федот мучи татах та ытларах ватӑлса, темле пӗчӗкленсе ларнӑ пек пулчӗ. Сӑнӗ шурӑхса кайрӗ унӑн, ҫамки ҫинчи картсем тарӑнланчӗҫ,—куҫӗсенче ҫеҫ сӳнми хаяр ҫутӑ ҫутӑлса тӑракан пулчӗ.

Пӗринче вӑл урамран таврӑнчӗ те, кӑмака умӗнче чылай вӑхӑт чӗлӗмне йӑсӑрлантарса, тарӑн шухӑша кайса ларнӑ хыҫҫӑн кӗсйинчен хутпа карандаш кӑларса Таньӑна тыттарчӗ:

— Ҫыр...

— Мӗн ҫырас?—тӗлӗнчӗ Таня.

— Эп каласа пынине ҫыр...

Таня ҫырма хатӗрленсе ларчӗ. Мучи калама пуҫларӗ.

«— Тӑвансем, итлӗр чӑн сӑмаха! Эпир сире нимӗҫ хурахӗсем пирӗн ялта тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен калатпӑр...

«Яла килсе кӗричченех вӗсем бомбӑсем пӑрахса 47 кил ҫунтарса ячӗҫ, 36 ҫынна вӗлерчӗҫ, 51 ҫынна амантрӗҫ. Хайсем килсе кӗрсен, вӗсем 2000 пӑт тырӑ, 232 пуҫ выльӑх, 40 лав тумтирпе тӗрлӗ япаласем тиесе кайрӗҫ...»

— Мучи, ӑҫтан пӗлетӗн эс куна?—ыйтрӗ Таня.

— Юри шутласа ҫӳрерӗм,—терӗ старик.—Ҫыр малалла... 63 ҫынна ним айӑпсӑр тӗрмене кайса

хупрĕç, 14 çынна çакса вĕлерчĕç, 6 çын вĕсем хĕнене хыççăн вилчĕ...

— Мĕн валли çыратпăр эпир куна?—татах ыйтрĕ Таня.

— Кайран тавăрма, хĕрĕм...—ответ пачĕ Федот мучи.—Эс мĕн, çак пур тискерлĕхсемшĕн нимĕççене вырăс халăхĕ ахалех каçарать, тетĕн-и? Çук, чунăм, эпир вăл явăлсене кусемшĕн ытлашшипех саплаттаратпăр-ха!

Тулта сасартăк ура сассисем илтĕнчĕç.

— Килеççĕ!—картах сикрĕ те Таня, умĕнчи хута часрах лутăркаса хĕвне чикрĕ. Унччен те пулмарĕ, мунчана виçĕ нимĕç кĕрсе тăчĕç.

— Геть!—терĕ пĕри, мучипе Таньăна кăмака хыçнелле кăтартса. Ыттисем çавăнтах тумтирĕсене хывма тытăнчĕç.

Вĕсене кунта пурăнмах вырнаçтарнă-мĕн. Кăшт ăшăнкаласан, пĕри таçта кайса апат илсе килчĕ, тепри эрех туртса кăларчĕ. Пĕр кĕленчине пушатнă хыççăн тепĕр кĕленче тухса ларчĕ. Малтанах шăнса хытнă нимĕçсем халь хĕрелсе, тарласа кайрĕç, шавлăран шавлăрах калаçма тапратрĕç, пĕри кĕçех тутапа вĕрсе каламалли купăс кăларса шăхăрткалама пуçларĕ...

Каç пулчĕ. Нимĕçсем çаплах ĕçрĕç. Федот мучипе Таня кăмака хыçĕнчи кĕтесре йăпшăнса ларчĕç. Пăлхавлăн тапрĕç вĕсен чĕрисем. Ура нимĕç те урнă йытăпа пĕрех те, ӳсĕр нимĕçсем пушшех хăрушă!

Ĕçсен-ĕçсен, хăйсен нĕрсĕр юррисене кăшкăрса ывăнсан, нимĕçсем пĕрин хыççăн тепри тӳнме пуçларĕç.

— Ах, часрах çывăрса кайчăрччĕ хуть!—пăшăлтатрĕ Федот мучи.—Лăпкăрах пулĕччĕ...

Анчах пĕри, çамрăкраххи, ниепле те çывăрасшăн пулмарĕ. Сĕтел хушшинче пĕччен ларса юлса,

вăл çаплах сăмси витĕр юрă тăсрĕ, темиçе минутлăха мунчаран тухса кайса, тата тепĕр кĕленче эрех тупса пычĕ те, каллех ĕçме пуçăнчĕ.

— Выльăх! Ĕне пек ĕçет... Епле кĕрет пулĕ шуйттанăн хырăмне!..

Те Федот мучин сассине илтрĕ нимĕç—сасартăк ура çине тăчĕ те, тайăнкаласа кăмака патнелле пычĕ. Мунчари çурта аран кăна çутатнă пулин те, Таня нимĕçĕн куçĕсем епле усаллăн çутăлнине курчĕ. Чĕри пăчăртансах ларчĕ унăн...

Нимĕç ывăннă лаша пек хашкарĕ. Унтан сасартăк аллине тăсса Федот мучие тумтир аркинчен тытрĕ те, кăмака хыçĕнчен туртса кăларчĕ.

— Шайза!

Тепĕр самантĕнче нимĕç Таньăна ыратакан аллинчен пăчăртаса тытрĕ. Таня кăшкăрсах ячĕ, анчах нимĕç ун çине пăхса тăмарĕ—карт! туртрĕ те, Таньăна урайне антарса тăратрĕ.

— Русски девшонка...—хашкаса илчĕ нимĕç, Таня çине пăтранчăк куçĕсемпе шăтарас пек пăхса.—Я тебя хочет поцеловайт...

Таня сиксе чĕтреме тытăнчĕ. Нимĕç ăна ыталама тапратрĕ.

— Кай! Ан тив!—кăшкăрса ячĕ те Таня, витĕрех эрех шăрши çапнă нимĕçе хăйĕнчен аяккалла тĕксе яма тăрăшрĕ. Анчах лешĕ ăна вĕçертесшĕн пулмарĕ. Вара Таня ăна пур вăйĕпе аллинчен çыртса лартрĕ.

— Пан! Яр ачана!—нимĕçе тепĕр енчен уртăнчĕ Федот мучи.

Нимĕç вара чăннипех урса кайрĕ... Вăл хăрах аллипе Федот мучие чышса ывăтрĕ те, Таньăна тата хытăрах тытса лартрĕ.

— Мой будеш!..

Анчах стена çумне пырса çапăннă Федот мучи çавăнтах сиксе тăрса Таньăна нимĕç аллинчен хă-

тарма тепĕр хут ыткăнчĕ. Нимĕçпе иккĕшин хушшинче кĕрешӳ пуçланса кайрĕ... Нимĕç çаплах-ха Таньăна аллинчен вĕçертесшĕн пулмарĕ. Федот мучие вăл аллипе те çапрĕ, урипе те тапрĕ. Ăнран тухса кайнă мучи вара, тăрук урайĕнчен вут сыппи илсе, нимĕçе пуçĕнчен çапрĕ... Нимĕç сулăнса кайрĕ, анчах ӳкмерĕ. Тата хытăрах хашкаса илсе, вăл çавăнтах мучи çине сиксе ларчĕ те, ăна пăвма тапратрĕ...

— Таня, тар! Тар!..—хăркăлтатса илчĕ старик, самăр нимĕç айĕнче асаплăн авкаланса.— Мана ан пăх, çăлăн... Çăлăн!

## 10

Таня пăтари кивĕ кĕрĕке туртса антарчĕ те, пахчаналла сиксе тухрĕ. Ăна çавăнтах сивĕ çил çитсе тиврĕ, вăл тата хытăрах чĕтреме тытăнчĕ.

— Мĕн тăвас? Ăçталла чупас?

Пуçа пĕр йĕркеллĕ шухăш та пырса кĕмерĕ. Çав вăхăтрах мунча алăкĕ уçăлнă сасă илтĕнчĕ.

— Мана хăваласа тытасшăн!—терĕ Таня хăйне хăй.—Тарас, часрах тарас...

Текех вара вăл пĕр самант та тытăнса тăмарĕ, часрах хирелле, вăрман еннелле чупрĕ. Ăна хирĕç чарусăр каскăн сивĕ çил вĕрчĕ, хытă юр пĕрчисем пите-куçа çапăнса йĕп пек тирчĕç, çĕрти темле тумхахсем такăнтарчĕç, анчах вăл пурĕпĕр чупрĕ.

— Çăлăн! Çăлăн!—янрарĕç ун хăлхинче Федот мучин сăмахĕсем. Ăçта каяссине, ăçта çитмеллине вăл нимĕн те чухламарĕ... Акă ĕнтĕ, колхоз анкартийĕ хыçра юлчĕ, Таня пĕркунне пирвайхи хут бомбĕжка айне пулса аманнă вăрманлă çырма вĕçнелле çитрĕ...

— Стой! Кам эсĕ?—сасартăк илтрĕ вăл кунта такамăн сассине. Çав самантрах ун умне юмахри

каттăр пек тĕреклĕ, таса юр пекех шап-шурă тум тăхăннă кĕлетке тухса тăчĕ.

— Кам эс?—татах ыйтрĕ çав çын.

— Таня...

— Ăçта каятăн?

— Çавăнталла...—Таня аллипе малалла сулчĕ.

— Хăв çак ялсем-и?

— Ийя...

— Мĕн туса çӳретĕн капла, çĕр хута?

Таня тăруках ответ тупаймарĕ. Хăйĕн умĕнче тăшман мар, хамăр çын тăнине, унтан хăрама кирлĕ маррине аванах тавçăрса илчĕ вăл, çапах та ыйтрĕ:

— А эс кам?

— Куран—вырăс...

— Эппин, хамăр салтак-и?

— Нимĕç мар ĕнтĕ, паллах!

— Ой, апла пулсан ман сана пит нумай каласа памалла!—Таня боеца çаннинчен çавăрса тытса, кĕçĕр мĕн пулни çинчен çав тери васкавлăн каласа пама тытăнчĕ. Кĕçех вăрманти йывăç тĕмисем хушшинчен çавнашкалах шурă халатлă боецсем тата тепĕр 10—12 çын тухса, унăн хурлăхлă калавне итлеме тытăнчĕç.

Нумай каларĕ Таня. Боецсем ăна ним чĕнмесĕр итлерĕç...

— Асаттене вĕлерчĕçех пулмалла,—терĕ Таня юлашкинчен.—Çав пĕри ытла та усал пулчĕ. Ыттисем ӳсĕр выртаççĕ... Мĕн те пулин тăвасчĕ вĕсене, тавăрасчĕ!

— Ытти килсенче нимĕçсем нумай-и тата?—ыйтрĕ чăн малтан тухса тăни.

— Тĕрĕссипех пĕлместĕп, анчах нумай пулмалла... Ĕнер мучи çапла каларĕ: нимĕçсем ялта саранча пекех, терĕ.

— Апла пулсан—акă мĕн... Эсĕ пире хăвăр

пуранна мунча патне ертсе кай, унта вара эпир мĕн тумаллине хамăрах пĕлĕпĕр. Хăрамастăн-и каялла пыма?

— Çук, сирĕнпе пĕрле хăрамастăп,—терĕ Таня.—Эсир хамăрăн вĕт...

...Вăрмантан сасартăк тухса тăнă шурă тумлă боецсем—совет разведчикĕсем пулнă. Таня вĕсене хăй тарса тухнă çулпах хăйсен пахчине каялла илсе пычĕ. Нимĕçсем касса пĕтереймен улмуççисем айĕнче чарăнса тăрса, разведчиксем пĕр-ик минут канашларĕç, унтан пĕр ушкăнĕ малта пурăнакан çуртсем еннелле шуса кайрĕ. Таня вĕсене малалла та ертсе каясшăнччĕ, анчах разведчиксен командирĕ (хăй паçăр юмахри паттăр пек курăнса кайни) ăна пыма хушмарĕ. Вара Таня темиçе боецпа пĕрле улмуççисем айĕнче юлчĕ те, тĕттĕм витĕр Федот мучин килĕ еннелле пăхса, малалла мĕн пулассине кĕтсе выртрĕ.

Питĕ вăрахăн шăвать вăхăт çакăн пек чух! Таньăна хăйсем кунта сахалтан та пĕр-икĕ сехет выртнăн туйăнчĕ, анчах тĕрĕссипе вăхăчĕ çур сехет те иртмен...

Малтанах питĕ шăп пулчĕ, ялта пĕр чĕрĕ чун та çук пек туйăнчĕ. Унтан вара алăк хыттăн уçăлса хупăнни, çĕр çиййĕпе темле йывăр япала сĕтĕрнĕ сас, çынсем васкаса утни илтĕнчĕ. Таньăпа пĕрле юлнă разведчиксем, çакна илтсе, йăпăряпăр сике-сике тăчĕç.

— Килеççĕ!—терĕ пĕри.

Чăнах та, яла кайнă разведчиксем кĕçех таврăнчĕç. Вĕсем хăйсемпе пĕрле темле пысăк, тулли михĕ сĕтĕрсе килчĕç.

— Ну, кайрăмăр часрах!—терĕ командир.

— Акку мĕн сирĕн?—ыйтрĕ Таня пĕр боецĕнчен, михĕ çине кăтартса.

— «Чĕлхе», теççĕ çавна.

— Мĕнле чĕлхе?

— Ҫайран калăп, халь вăхăт ҫук... Васкас пулать!

— Пирĕн патра пултăр-и?

— Ҫайран калăп, терĕм вĕт сана.

Пурте кайма тапранчĕҫ. Ҫатрака улмуҫҫисем айĕнче Таня пĕчченех тăрса юлчĕ. Сасартăк, вăл юлнине разведчиксенчен пĕри асăрхарĕ те, ун патне каялла чупса пычĕ.

— Мĕн туса тăратăн тата? Тыткăнран хăтăлма май пур чух тăрса юлатăн-и вара?

— Аҫта каям ĕнтĕ эп,—иккĕленсе тăчĕ Таня.—Никам та ҫук вĕт манăн, тăлăх эпĕ...

Унăн куҫҫулĕсем шăпăртатса анчĕҫ.

— Атя пирĕнпе, тăлăх пулмастăн!—терĕ боец. Вăл Таньăна аллинчен ҫавăтрĕ те, чылаях аякка кайма ĕлкĕрнĕ юлташĕсем хыҫҫăн чупрĕ. Ялта ҫав вăхăтра харăсах темиҫе взрыв кĕрслетрĕ, унтан пушар хыпса тухрĕ. Разведчиксем, пысăк миххе сĕтĕрсе, васкавлăн вăрманалла кĕрсе кайрĕҫ. Вĕсемпе пĕрле Таня та кайрĕ...

Нихҫан этем ҫӳремен сукмаксем тăрăх, ҫырмасем урлă, чăтлăхсем витĕр пырса, вĕсем ир енне ҫурри ҫунса кайнă пĕчĕк ял хĕррине ҫитрĕҫ. Кун та кашни темиҫе утăмранах вĕсене часовойсем чарса тăратрĕҫ, анчах разведчиксен командирĕ пĕртен-пĕр сăмах каласанах, саламласа ирттерсе ячĕҫ. Ял варринчи чылаях пысăк ҫурта пырса кĕрсен вара разведчиксене пысăк начальниксем хупăрласа илчĕҫ.

— Ну, мĕнле?

— Ăнăҫлă пулчĕ-и? «Чĕлхе» пур-и?

Вĕсенчен пĕри разведчиксен командирĕ умне «смирно» тăрса, татăклăн каласа пачĕ:

— Юлташ майор, сирĕн приказăра пурнăҫларăмăр. Контрольнăй пленнăй тытса килтĕмĕр!

Икĕ çамрăк разведчик, вĕсенчен пĕри—çул çинче пĕрмаях Таньăна пулăшса пынăскер, хайхи пысăк миххе йăпăр-япăр салтрĕç те, ун ăшĕнчен нимĕç салтакне туртса кăларчĕç. Таня тĕлĕннипе куçĕсене чарсах пăрахрĕ... Михе чиксе сĕтĕрсе килни—паçăрхи фашист пулнă!

— Çакă! Çакă!—кăшкăрса ячĕ Таня, разведчиксен командирне çаннинчен туртса.—Çак хĕнерĕ мана, Федот мучие те çаках пăврĕ!..

Сасартăк хĕрача сасси илтĕнни начальниксене пурне те тĕлĕнтерчĕ. Вĕсем ăна асăрхаман мĕн,—пĕчĕкскер, вăл разведчиксем хушшинче палăрман та.

— Ку кам тата?—ыйтрĕ майор тени.

— Вăл... вăл пире кĕçĕр пулăшаканни пулчĕ,—ответ пачĕ разведчиксен командирĕ.—Ăна тĕл пулнипе кăна пире «чĕлхе» тупма çăмăл пулчĕ... Унăн аслашшĕне вĕлернĕ кĕçĕр çак негодяй!—Вăл ăнран тухса кайнă сурăх пек унталла-кунталла пăхса тăракан нимĕç çине кăтартрĕ.—Эпир вара ăна тăлăха хăварас мар, терĕмĕр...

— Аха...—Майор самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ, унтан Таньăна пуçĕнчен ачашласа илчĕ.—Тăванусем тата пур-и санăн?

— Халь никам та çук... Аннепе шăллăма нимĕçсем бомба пăрахса вĕлерчĕç, атте таçта кайса çухалчĕ, пичче вăрçăра, лĕтчик... Эпир Федот мучипе пурăнаттăмăр та—ăна та çак кашкăр кĕçĕр пăвса пăрахрĕ... Пуçĕпех тăлăха тăрса юлтăм вара...

Таня куçĕсем шывланчĕç, макăрса ярас мар тесе вăл тутисене çыртса лартрĕ.

— Ан хуйхăр, хĕрĕм,—лăплантарчĕ ăна майор.—Санăн асапусемшĕн тавăрăпăр эпир вĕсене! Ак ку кашкăрĕ лекрĕ ĕнтĕ, тин вĕçернеймест вăл. Ăна тытса килме пулăшнăшăн пысăк тав сана.

Хӑвна эпир пит лайӑх ҫӗре ӑсатӑпӑр, телейлӗ пулӑн!

11

Таньӑна тепӗр куннех тыла ӑсатрӗҫ. Темиҫе кунтан ӑна фронтран инҫетри пӗр пысӑк хулана илсе ҫитерчӗҫ те, вӑл унта ача ҫуртӗнче пурӑнма пуҫларӗ.

Таня пек тӑлӑха юлнӑ ачасем нумай пулнӑ кунта. Вӗсем пурте вӑрҫӑччен питӗ телейлӗ пурӑннӑ, анчах вӑрҫа пула ашшӗ-амӑшӗсемсӗр, тӑванӗсемсӗр тӑрса юлнӑ. Ку та ҫитмест—вӗсем нумайӑшӗ нимӗҫсен бомбисемпе пульлисенчен аманса пӗтнӗ. Урасӑррисем те, алӑсӑррисем те пулнӑ вӗсем хушшинче, ӗмӗрлӗхе чӑлах пулса юлнӑ. Ҫапах та, ача ҫуртӗнче хӑйсене лайӑх пӑхнипе, вӗсем хӑйсене хӑйсем телейсӗр пек туйман. Вӗсене кунта яланах тутӑ усранӑ, вӗсен ҫи-пуҫӗ таса та тирпейлӗ пулнӑ, вӗсем ӑшӑра пурӑннӑ. Вӗреннӗ, вылянӑ, юрланӑ...

Таня кунти пурнӑҫа пӗр-ик кунтах хӑнӑхса ҫитрӗ, хӑйсен группинчи хӗр ачасемпе, вӗсене тахҫантанпах лайӑх палласа пурӑннӑ пек, туслашрӗ. Унӑн суранне пӗрмай эмеллерӗҫ те, вӑл сывалсах пычӗ. Унтан вӗренме те пуҫларӗ. Халь ӗнтӗ вӑл пур енчен те кӑмӑллӑ пулчӗ, ашшӗпе пиччӗшӗ ӑҫтине пӗлменни кӑна пӑшӑрхантарчӗ ӑна. Анчах ачасен туслӑ ҫемйинче пурӑннипе ку хуйхӑ та ытлах ыраттармарӗ унӑн чӗрине.

...Вӑхӑт шурӗ. Декабрь уйӑхӗнче радио пирӗн Хӗрлӗ Ҫарӑн пысӑк ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен, нимӗҫсене Мускав патӗнче ҫапса аркатса, каялла, хӗвеланӑҫнелле хӑвалама тытӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ. Кун пирки пурте ҫав тери хӗпӗртесе, хавасланса калаҫрӗҫ. Таня Федот мучи сӑмахӗсене аса илчӗ.

— Вырӑс халӑхне, Российӑна никам та ҫӗнте-

реймен ку таранччен, çĕнтерес те çук,—тетчĕ вăл...

Çĕнĕ çул умĕн учительницăсем ача çуртĕнчи пысăк та çутă залăн стенисем çине йĕркипех Хĕрлĕ Çарти паттăрсен—Совет Союзĕн Геройĕсен сăнĕсене вырнаçтарса тухрĕç. Ытти хĕр ачасемпе пĕрле Таня та геройсен сăнĕсене çав тери ăшă кăмăлпа пăхрĕ. Қашни портрет умĕнчех чарăнса тăрса, вĕсен чаплă та паттăр ĕçĕсем çинчен вуларĕ. Йĕркипе çапла пăхса пынă май, пĕр портрет тĕлне çитсен, вăл калама та çук тĕлĕнсе кайрĕ.

— Лейтенант Ястребов...—вуларĕ Таня. Çав самантрах вара:—Пичче! Манăн пичче!—тесе кăшкăрса ячĕ.

Çывăхра тăракан учительница ун çине тинкерсе пăхрĕ те:

— Мĕн тетĕн?—тесе ыйтрĕ.

— Пичче! Ман пичче çакă!—аллипе портрет çине тĕллесе кăтартрĕ Таня.

— Чăнах-и?—тĕлĕнсе кайрĕ учительница та.

— Тупата çав! Тăван пичче!

Кун çинчен ача çуртĕнче часах пурте пĕлчĕç. Таньăна директор патне илсе кайса, унăн пиччĕшĕ çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç. Таня пĕтĕмпех каласа пачĕ—пиччĕшĕ кам пулнă, юлашки хут мĕнле тухса кайнă...

— Халь ĕнтĕ эпир вăл ăçтине шыраса тупатпăр, сан çинчен пĕлтеретпĕр ăна,—тесе сăмах пачĕ директор.—Тек хуйхăраттăн-ха, тинех савăнмалли çитсе тухрĕ санăн...

— Мĕн каласси пур,—терĕ Таня,—нимрен те пысăк телей çав ку! Эп ăна хальччен пĕтнĕ те пуль, тенĕччĕ...

— Ун пек паттăрсем пĕтмеççĕ!

Пиччĕшĕн адресне Мускав урлă пĕлсен, Таня ун патне питĕ пысăк çыру ячĕ те, пĕрмай ответ

кĕтсе пуранчĕ. Анчах отвечĕ темшĕн килмерĕ. Уйăх та иртрĕ, иккĕ те çитме пуçларĕ...

— Тем пулман-ши?—шикленме пуçларĕ Таня каллех.—Пĕтрĕ вара ман телей...

Кун пирки вăл пĕр-икĕ хутчен директорпа та калаçса пăхрĕ. Лешĕ ăна кашнинчех пуçĕнчен ачашласа йăпатрĕ:

— Килĕ-ха, ан пăшăрхан...

Телейĕ кĕтмен çĕртен, сасартăк килсе тухрĕ.

Пĕр каçхине, çывăрма выртсан, директор хăй чупса пычĕ Таньăн койки патне.

— Атя-ха часрах ман пӳлĕме...

Ăна-кăна ним пĕлмесĕрех, Таня хăвăртрах тумланчĕ те, ун хыççăн утрĕ. Хăйне мĕншĕн чĕнсе кайни çинчен ыйтма аван мар пек туйăнчĕ ăна.

Ик минутран вĕсем директор кабинетне пырса кĕчĕç. Кунта, çемçе диван çинче, темиçе орденлă, ылттăн çăлтăрлă çар çынни ларать-мĕн. Таня ăна тӳрех палларĕ.

— Пиччеçĕм!—аллисене тăсса чупса пычĕ вăл ун патнелле.

— Йăмăкăм!—терĕ те ăна хирĕç пиччĕшĕ, Таньăна ыталаса илчĕ.

Питĕ нумай калаçса ларчĕç вĕсем. Асăнманни нимĕн те юлмарĕ çав ĕнтĕ...

Таня калавне итлесе пĕтерсен, пиччĕшĕ ăна хăй нимĕçсен самолĕчĕсене епле çапса антарнине, вĕсен темиçе поездне сывлăшалла сирпĕнтернине, пĕрре тăшманăн виçĕ çăханĕпе пĕр пĕччен çапăçнине каласа парса тĕлĕнтерчĕ.

— Ман çырăва хирĕç ответ ма памарăн тата?—ыйтрĕ Таня юлашкинчен, пиччĕшĕн куçĕнчен кăмăллăн пăхса.

— Эпĕ хам кунта килессине пĕлсех тăнăччĕ, çавăнпа та курса калаçни авантарах пулать пулĕ, терĕм. Тата, тĕрĕссипе каласан, вăхăт та пулмарĕ,

пӗрмай çапăçура... Халĕ мана кунта çĕнĕ йышши самолётсем илме ячĕç. Ёнтĕ, вĕсене илсе кайсан, тата вирлĕрех çапăçма пуçлатпăр акă. Хаяррăн таватпăр тăшмана!

— Тавăрăр çав, пичче, хыттăн тавăрăр вăл çынçиенсене,—терĕ Таня.—Ан пулччăр вĕсем пирĕн çĕр çинче, нихçан та!

*Белорусси—Шупашкар*
*1944 ç.*





# Я Л А В

*(Командир калавӗ)*

Ку ӗҫ, ачасем, 1942 ҫулта, февраль пуҫламӑшӗнчи пӗр сивӗ кун, эпир нимӗҫсене Красавино ятлӑ чиркӳллӗ пысӑк ялтан хӑваласа кӑларнӑ чух пулчӗ...

Унччен малтанхи кунсенче пирӗн часть нумай ялсене фашистсенчен ирӗке кӑларса пычӗ. Анчах Красавино ялӗ патнелле ҫитсе тухсан, пирӗн пӗр вӑхӑтлӑха чарӑнса тӑмалла пулчӗ, мӗншӗн тесен нимӗҫсем кунта питӗ вӑйлӑ укрепленисем тума ӗлкӗрнӗ иккен. Хӑйсене эпир Мускав ҫывӑхӗнчен хӳтерме пуҫласанах, кунта вӗсем аякран пӑхсан пачах курӑнми тӗрлӗ блиндажсем, пулемёт йӑвисем, окопсемпе траншейӑсем—темӗн те пӗр тума тапратнӑ. Халь вара ҫав шӑтӑксене арлансем пек

кĕрсе ларса пытаннă та—пире хирĕç персе тăнă...

Çитменнине, ялĕ те çӳллĕ сăрт çинче ларатчĕ, çӳлтен пăхсан—вăл таçта çитиех курăнмалла. Пирĕн салтаксен ял патне улăх тăрăх пымалла, улăхĕ—çатма пек тикĕс, тăшман куçĕнчен пытанма ниçта пĕр йывăç тĕми те, пĕр тĕмеске-лупашка та çук. Пĕр сăмахпа каласан—наступлени тума питĕ кансĕр вырăн пулчĕ...

Çапах та, каçхине чарăнса тăнă хыççăн, эпир ир енне çав Красавино сăрчĕ çине наступлени пуçларăмăр. Малтан, паллах, тăшманăн укреплениййĕсене аркатас, пулемĕчĕсемпе миномĕчĕсене шарлами тăвас, тесе, хамăр орудисенчен питĕ хытă петĕмĕр. Пĕр сехет хушши пĕтĕм таврари çĕр чĕтренсе тăчĕ; тупăсем ухлатнипе, снарядсем çурăлнипе, минăсем кĕрĕслетнипе хăлха та ним илтми хупланса ларчĕ. Сăрт хĕррипе туса тултарнă укреплениpermission сулăмпа, тĕтĕмпе пĕрле сывлăшалла сирпĕнчĕç вăл хушăра. Бинокль витĕр хамăр куçпах куртăмăр ăна. Питĕ аван ĕçлерĕ пирĕн артиллери!

Унтан пехота тапранса кайрĕ... Пилĕк таран юр ашса сăрт еннелле ыткăнчĕ вăл. Хĕвел тухнă вăхăталла малтисем сăрт хĕрринчи йĕплĕ пралук карти патнех çитрĕç, анчах малалла кайма май килмерĕ: унччен малтан шарламасăр ларнă нимĕçсем сасартăк пĕр харăс пеме тытăнчĕç. Темрен те переççĕ: миномĕтсенчен те, пулемĕтсенчен те, автоматсенчен те, ахаль винтовкăсенчен те шатăртаттараççĕ.

Çулла, вĕри хĕвел эрни-эрнипе хĕртсе, пĕтĕм ӳсен-тăрана çунтарса ĕнтнĕ хыççăн, вăйлă çумăр пулать-çке? Таврари юр çине пульăсем халь çав вăйлă çумăр çунă пекех тăкăнчĕç, малалла кайма мар—пуçа çĕклеме те çук! Пирĕн боецсем ирĕксĕрех вăхăтлăха юр ăшне чакаланса кĕрсе вырт-

рĕç. Эпир тăшманăн нумай огневой точкисене пĕтерсе хунă пулин те—вĕсем сăрт çинче татах та юлнă иккен-ха, пирĕн наступление çавсем чарса тăнă.

Эпĕ хам—артиллерист, оруди командирĕ. Мухтанмасăрах калатăп: пит те тĕл перетпĕр эпир... Аçта та пулин ик-виç снаряд ярсан, унта вара нимĕн те юлмасть, пĕтĕмпех тăпрапа, хăрăмпа хутăшса каять. Çавăнпа та халь. тăшманăн сăрт çинчи огневой точкисем татах юлнине курсан, хамăр çине хамăр кӳрентĕмĕр.

— Пултарайман иккен эпир...

Кĕçех пирĕн пата çĕнĕ приказ персе çитрĕ:

— Фашистсен укрепленийĕсем çине тепĕр хут артиллерийский налĕт тумалла, вĕсен огневой точкисене пурне те пĕтерсе хумалла!

Эпир çакна çеç кĕтсе тăнăччĕ çав! Батарея командирĕнчен приказ илсенех, пирĕн орудисем тăшманăн пуçĕ çине çĕнĕрен вилĕм сапма пуçларĕç. Каллех пĕтĕм таврари çĕр чĕтрерĕ, сăрт çинче каллех юр, тăпра, çулăм, вĕсемпе хутăш кирпĕчсем, пĕренесем, каштасем урлă та пирлĕ сирпĕнчĕç... Çав тери хытă петĕмĕр!

Çур сехетрен шăпах пулчĕ. Эпир те пеме чарăнтăмăр, нимĕçсем енчен те пĕр сас та илтĕнмерĕ.

— Ну, халь ĕнтĕ унта пĕр фриц та юлмарĕ пулĕ,—аллипе сăрт еннелле кăтартрĕ манпа юнашар тăракан наводчик, çамки çине тапса тухнă тарне çĕлĕкĕпе шăлса илсе.—Кун пек çĕмĕрнĕ хыççăн та пĕтмесен вара...

— Çапла пулмалла пек те, мур пĕлет-ха ăна,—терĕм те эпĕ ăна хирĕç, каллех бинокльпе ял çинелле пăхма тытăнтăм.

Пирĕн пехота татах çĕкленчĕ. Боецсем малалла шума тытăнчĕç. Ак ĕнтĕ нумайăшĕ, йĕплĕ пра-

лук картинчен иртсе, сăрт çинелле улăхма тапратрĕç, анчах çав вăхăтра нимĕçсен пулемĕчĕсемпе миномĕчĕсем тепĕр хут ĕçлеме тытăнчĕç. Çăва патне кайтăр! Переççĕ те переççĕ!.. Тарăхнипе пĕтĕм ăшчик тулса ларчĕ манăн. Куççем ыратакан пуличченех сăнама тытăнтăм: хăш тĕлтен переççĕ вĕсем, ăçта пытанса ларнă вара фашистсен пулемётчикĕсемпе миномётчикĕсем?

Ялăн сулахай хĕрринчен пуçласа сылтăм хĕррине çитичченех, йĕркипе пăхса тухрăм. Çук, йĕркеллĕн нимĕн те асăрхама пулмарĕ. Çав тери тĕплĕн пытанса, аякран палăрмалла мар пулса ларнă иккен мурсем! Хăйсене курма çук, анчах пирĕн пехотăна ниепле те малалла кайма памаççĕ...

Бинокле халь çеç куçран уйăрас тесеттĕм — сасартăк ялăн сылтăм вĕçĕнче, юр çинче, пĕччен темле хусканакан хура пăнчă курăнса кайрĕ. Вĕлт те вĕлт! тăвать. Пĕрре курăнать, тепре çухалать. Унтан каллех курăнать те—татах пытанать.

Тĕлĕнтерчĕ ку мана. Тинкерсех пăхма тытăнтăм. Малтанах уйăрса илме пулмарĕ—те этем вăл, те пĕр-пĕр выльăх тавраш̆ĕ? Тăрăхла япала пек те курăнать... Пăхсан-пăхсан, çапах та, уйăрса илтĕм. Çынах иккен вăл. Анчах темшĕн—пĕчĕккĕ. Ну, ку инçе пирки çавăн пек курăнать пулĕ, терĕм. Кунпа пĕрлех тепĕр ыйту тухса тăчĕ: мĕнле çын пулма пултарать-ха вăл? Пирĕн боец-и, нимĕç салтакĕ-и? Апла та, капла та шутлама хĕн. Пирĕннисем вăл енче вуçех те пулман,—ăçтан сиксе тухтăр пĕччен пĕр боец? Тата мĕншĕн вăл наступлени вăхăтĕнче каялла килет? Суранланнăскер пулсан кăна... Эппин, мĕншĕн винтовкăсăр? Хăй тĕллĕн килме пултаракан боец çапăçу хирĕнче нихçан та пăшалне пăрахас çук! Ахăртнех, хăй ирĕкĕпе плена килекен нимĕç пулĕ?

Этем кĕлетки çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Пĕрре

упаленет, тепре тăрса чупать, унтан татах юр ăшне выртать... Қăштах тăхтасан, унăн тумне уҫăнах куртăм та, пушшех тĕлĕнтĕм: вăл ҫар тумĕпе мар, ахаль ҫынсен тумне тăхăннă. Ҫийĕнче темле хура пинжак, пуҫĕнче—ҫуллахи картус!..

— Пирĕн паталла перебежчик килет, кĕтсе илме хатĕр пулăр,—терĕм эпĕ хамăн боецсене.— Авă, сăнăр!

Халĕ ĕнтĕ ăна бинокльсăр та аванах курма май пулчĕ. Пирĕнтен 200—250 метрта кăна упаленчĕ вăл. Ура ҫине тăрсан, аллисене ҫӳлелле ҫĕклесе чупрĕ: ан перĕр, хамах пыратăп, тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку...

Эпир ун ҫинчен куҫ илмесĕр пăхса тăтăмăр. Вăл ҫаплах ҫывхарчĕ. Хăй питĕ ывăнса ҫитнĕ пулмалла—пĕр уринчен тепĕр урине аран-аран иртерет. Ман боецсем ăна хавхалантарма тытăнчĕҫ:

— А ну, хăвăртрах!..

— Чуп часрах, ҫитетĕн!

Перебежчик юлашки вăйне пухса чупрĕ. Темиҫе минутран пирĕн пата ҫитрĕ те, шатах халран кайса, юр ҫине ӳкрĕ... Эпир ăна кăпăрах сырса илтĕмĕр. Ку ҫын—пĕр 12—14 ҫулхи арҫын ача пулчĕ.

Ҫĕтĕк-ҫатăк тумланнă, шуранка сăн-питлĕ, картуспа, алшишсĕр—йывăррăн хашкаса выртрĕ вăл. Куҫĕсем ҫеҫ хăюллă ҫутăпа ҫуталса тăратчĕҫ унăн.

— Мĕнле ҫын эсĕ?—тесе ыйтрăм эп унран.

— Мана Қирюха теҫҫĕ,—хашка-хашка ответ пачĕ вăл.—Қирьян, хушаматăм—Белкин...

— Куртăр пулĕ—ҫак ялтан... Красавиноран... Ҫитейместĕп пулĕ, тесе хытă хăрарăм. Нимĕҫ вырăнне шутласа, персе вĕлеретĕр пулĕ, терĕм.

— Аҫтан килтĕн кунта?

Вăл тăрса ларчĕ те, пире пурне те пăхса çаврăнчĕ.

— Хăшĕ начальник кунта сирĕн? Ман начальникпе калаçас пулать...

— Мĕн çинчен?

— Эпĕ сире ăçтарах пемеллине кăтартма килтĕм. Нимĕçсен ăçта мĕн пуррине пĕтĕмпех пĕлетĕп...

Эпир ачана тата хытăрах хупăрласа илтĕмĕр. Çавă кирлĕччĕ те ĕнтĕ пире. Тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлсен—ĕç тухать вара!

— Чăнах-и?—васкавлăн ыйтрăм эпĕ.—Пурне те пĕлетĕн-и? Пулемёт точкисем, миномётсем...

— Куç хупсах калама пултаратăп, — терĕ ача.—Эсир нумайăшне пĕтертĕр, анчах та пур-ха унта. Пĕлмесĕр тăруках путарас çук. Çавăн пирки килтĕм. Часрах аркаттарас килет-çке вĕсене... Тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ пусмăрта пурăнатпăр!

— Ма пит çăмăл тумланнă вара эсĕ? Чупма çăмăлтарах пултăр, тесе-и?—ыйтрĕ ман боецсенчен пĕри, ача çине хĕрхенӳпе пăхса.—Шăнса пăсăлма пулать вĕт...

— Урăх нимĕн те çук та, мĕн тăхăнас?—терĕ ача ăна хирĕç.—Пурччĕ те—пĕтĕмпех çаратса тухрĕç. Юлашки алшише виçĕмкун пĕр ефрейтор туртса илчĕ. Халĕ эсир пирĕн пĕтĕм ялĕпе те пĕр мăшăр çăмат тупас çук, пурте фрицсен урисенче...

— Нимĕçсем йышлăн-и унта?

— Нумайăнах мар та, пур çав. Укрепленисенче ларaççĕ...

— Эс мĕнле вĕçерĕнсе килтĕн вара? Хăрамарăн-и? Нимĕçсем хыçалтан пеме пултарнă вĕт сана?

— Вĕсем халь пурте шăтăксенче лараççĕ, эп çырма тăрăх шуса тухрăм...

Ыйтусем темĕн чухлех пуласса пĕлсе, текех

ачана боецсемпе калаçтарса тăмарăм: хамăра кирлĕ сведенисене часрах пĕлес тесе, ăна батарея командирĕ патне илсе кайрăм.

Эпĕ кама илсе пынине пĕлсен, пирĕн лейтенант питĕ тĕлĕнчĕ, унтан ман пекех савăнса кайрĕ.

— Вот, маттур йĕкĕт!—тесе çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ вăл ачана.—Мĕн ятлăха-эсĕ?

— Кирьян,—терĕ ача.

— Атя-ха землянкăна, Кирюша! Пăртак ăшăн та, каласа кăтарт, пирĕн васкас пулать, пехота каллех чарăнчĕ ав...

Ăшă землянкăра ăна вĕри чей ярса пачĕç, çемçе çăкăр çине çу сĕрсе тыттарчĕç. Кĕскен-кĕскен ыйтса, эпир çакна пĕлтĕмĕр: Кирьянсен ялĕнче нимĕçсем кашни çурт айĕнчех дзотсем тунă иккен, пӳртсем, кĕлетсем тăррине автоматчиксем лартнă, чиркӳ умне икĕ çăмăл оруди вырнаçтарнă, миномĕчĕсем хулăн стеналлă чулçуртсем хыçĕнче тăраççĕ. Салтакĕсем нумайăнах мар, анчах хĕç-пăшал çителĕклĕ вара.

— Хут татки парăр-ха,—терĕ Кирьян, чей ĕçсе ăшăнсан.—Акă епле вĕсен...

Вăл çавăнтах, чăр та чар чĕркелесе, ял планне турĕ. Унтан хăш тĕлте мĕн пуррине, ăçта мĕнле огневой точкăсем вырнаçтарнине палăртрĕ.

Лейтенант ку план çине пĕр-икĕ минут пăхса тăчĕ те, Кирьяна хăрах аллипе ыталаса илчĕ:

— Тавтапуç, шăллăм! Кайрăмăр!—терĕ унтан пире.

— Ăçта каятăр?—ыйтрĕ Кирьян, пуçне вăртах çавăрса.

— Орудисем патне,—терĕ лейтенант.—Халех çĕмĕрме тытăнатпăр!

— Эпĕ те пыратăп...

— Çук ĕнтĕ, халь сансăрах майлашатпăр, дан-

найсем пур. Эсё ăшăнса лар кунта, выртса канма та пултаратăн.

— Аюк, аюк,—пуçне пăркаларĕ Кирьян, картусне хăлхисем çинех пусса антарса.—Татах кирлĕ пулăп-ха.

— Ну, юрĕ эппин...

Вăрман хĕррине тухсан, лейтенант оруди командирĕсемпе наводчиксене пухса темиçе сăмах каларĕ те, хăй çавăнтах йывăç тăррине хăпарчĕ. Кĕçех команда янраса кайрĕ:

— Прицел... Трубка... Огонь!

— Кĕр-кĕрр...—турĕç пирĕн орудисем.

— Гранатой... огонь!

— Левее О-3... Огонь!

Пуçларăмăр çав кисрентерме! Ял çинче çулăмпа хăрăм кăна явăнчĕ. Кашни орудиренех пĕр вуншар снаряд кăларса ярсан, командăсем вăхăтлăха чарăнчĕç. Эпĕ лейтенант хăпарнă йывăç тăрринелле пăхрăм. Пĕлĕтеллех кармашакан чăрăшăн чи çӳлти тураттисем çинче, лейтенантран та çӳлерех, хайхи пирĕн Кирьян лара парать. Вăл та корректировщик пулса тăнă. Уççăнах илтрĕм ун сассине—темшĕн лейтенантпа тавлашма тапратнă...

— Каларăм сана, кăшт сулахаярах пемелле тесе! Ав çав хура йăмра тĕлне пемелле!

— Мĕн вара унта?—ыйтрĕ лейтенант.

— Дзот!

— Тĕрĕсех пĕлетĕн-и?

— Тĕрĕс пулмасăр! Вăл пирĕн хамăрăн пӳрт вĕт, пӳрт айĕнче—дзот, унта икĕ пулемёт... Печчĕр çавăнта!

— Хăвăр пӳртĕре... шел мар-и?

— Печчĕр, тетĕп! Унта шăпах Ганс Дитрих ларатчĕ-ха, колхоз председателĕн арăмне персе вĕлерекенни...

— Левее 0-2... Огонь!

Эпир петӗмӗр.

— Во, тӗрӗс! Шăпах лекрӗ!—савăнăçлăн кăшкăрса ячӗ Кирьян.—Халӗ авă çав çӳллӗ çурта шаплаттар! Пӗлетӗп—унта темиçе автоматчик ларать вӗсен, сирпӗнччӗр!

Каллех команда, каллех залп...

Пӗр çур сехет пулӗ çапла персе тăтăмăр эпир. Кашни пемессеренех çӗнӗ прицел, урăх тӗл пулчӗ. Пӗр снаряд та сая каймарӗ вара, пурте кирлӗ çӗре, Кирьян кăтартса панă тӗле кайса çӗмӗрчӗ...

— Пехота тапранчӗ!—тесе кăшкăрчӗ лейтенант пирӗн еннелле.—Тăчӗç, чупрӗç!.. Сăрталла хăпараççӗ! Пошла-а...

Инçетрен, сивӗ сывлăша çурса, стрелоксем хăватлăн «урра» кăшкăрни янраса çитрӗ. Тинех пирӗн чӗресем лăпланса савăнăçпа тулчӗç вара! Ӗнтӗ эпир тăшманăн огневой точкисене путарнă, вӗсене шарлами тунă, пехота валли çул уçса панă. Пире тахçанах çакă кирлӗ пулнă!

Лейтенант чăрăш çинчен сиксе анчӗ, ун хыççăн—Кирьян.

— Ну, шăллăм, пур артиллеристсен ячӗпе те тав сана!—пӗтӗм боецсем умӗнче Кирьян аллине тытса чăмăртарӗ лейтенант.—Калама çук пысăк усă кӳтӗн эс пире!

— А эсир пире усă кӳместӗр-им?—терӗ ăна хирӗç Кирьян.—Эсир пире тамăкран хăтаратăр... Пӗр кун çеç усрасчӗ сире нимӗçсем тытса илнӗ ялта, вара эсир ăнланăттăр хăвăр епле чаплă ӗç тунине...

— Паллах, ку та тӗрӗс...

— Сире эпир кунӗн-çӗрӗн кӗтнӗ вӗт!

Çак самантра пирӗн пата штабран связной чупса çитрӗ. Батарея командирне пӗчӗкçеç хут татăкӗ тыттарчӗ те:

— Эх, сире мухтаççӗ паян!—терӗ.—Пӗтӗм

виççĕмĕш батарейăна нагарда памалла тăватăп, тет штаб начальникĕ...

Эпир пĕр-пĕрин çине пăхса йăл та йăл кула-кула илтĕмĕр. Лейтенант хут татăкне вуласа тухрĕ те, ăна тирпейлĕн хуçлатса сумкине чиксе хучĕ.

— Малалла куçатпăр, лашасене илсе килĕр,— приказ пачĕ вăл. Унтан ман патарах пычĕ те:— Пире награда пама шут тунă,—терĕ,—паян кам мĕнле ĕçленине çырса хатĕрлеме хушаççĕ... Эп çак ачана та медаль илме тăратасшăн... Епле шутлатăн, парторг? Тĕрĕссипе, ăна пула ăнăçлă пулчĕ вĕт пирĕн ĕç.

— Тивĕçлĕ, тивĕçлĕ,—килĕшрĕм эпĕ.

— Лайăхрах ыйтса пĕл эс унтан: кам ачи, ашшĕ-амăшĕ кам унăн...

— А эпир ăна халех пĕлме пултаратпăр! Аçтаха вăл? Кирьян!

Эпир унталла та, кунталла та пăхрăмăр—ача ниçта та курăнмарĕ, куçран пăштах çухалчĕ.

— Анчахрах çакăнта тăратчĕ-çке!

— Кама шыратăн?—ыйтрĕ манран пĕр боец.

— Хайхи, ялтан килнĕ ачана ара...

— Э-э, вăл паçăрах ялалла тапса сикрĕ, эсир калаçма пуçласанах! Кирлĕччĕ-им?

— Питĕ кирлĕччĕ çав! Эккей... Çын награда илме тивĕçлĕ, хăй никама систермесĕр пăрахса каять!—хĕрхенчĕ лейтенант.

Сехетрен эпир орудисене турттарса Красавино ялне пырса кĕтĕмĕр. Пирĕн пехота унччен нимĕçсене кунтан хăваласа тухса кайнăччĕ ĕнтĕ, пăшалпулĕмет сассисем чылай инçетре, ялтан пĕр виç çухрăмра илтĕнетчĕç. Нӳхрепсенчен, пытанса ларма юри тунă блиндажсемпе шăтăксенчен тухнă ял çыннисем—ват стариксем, хĕрарăмсемпе ачасем—халь хăйсен килĕсене таврăнма пуçланăччĕ.

Кашниех пире пуç тайса саламларĕ, хăйсене ирĕке кăларнăшăн чĕререн савса тав турĕ.

— Спасибо сире, тăвансем!

— Тамăкран хăтартăр...

— Çулăрсем такăр пулччăрах сирĕн, тăшмана çĕнме вăй-хал çиттĕр!

— Часрах тасатăр хамăр çĕршыва вăл мăйракаллă шуйттансенчен...

Тӳсме çук хурлăхлă та асаплă пурнăçран халь çеç хăтăлнă совет çыннисене пирĕн салтаксем хавхалантаракан сăмахсемпе ответлерĕç.

— Ан хуйхăрăр ĕнтĕ, текех нимĕç кунта таврăнаймĕ!

— Капут халь вĕсене!

Эпĕ ку хушăра пĕрмаях Кирьян çинчен шухăшласа пытăм. Манăн ăна епле пулсан та тупас килчĕ, çавăнпа та эпĕ пур иртсе пыракан çынсене те сăнарăм. Анчах ăна майлă пĕр çын та курăнмарĕ.

Ял варрине, чиркӳ патнерех çитсен, пĕр ишĕлнĕ пӳрт умĕнче темиçе ача пирĕн çине пăхса тăнине куртăм та, вĕсенчен пырса ыйтрăм:

— Кирьян ятлă ачана пĕлетĕр-и эсир?

— Пĕлетпĕр-çке,—терĕç вĕсем. — Ма вара? Эсĕ ăна ăçтан паллатăн?

— Курасчĕ манăн ăна... Питĕ кирлĕ!

— Акă, халĕ çеç, нумай та пулмасть, вăл çакăнтан чупса иртсе кайрĕ!—терĕ пĕчĕкрех хĕр ача.—Аллине темле вăрăм патак тытнăччĕ...

— Авă—çавăнта, чиркӳ патнелле...

Хĕр ача аллипе тăвалла сулса кăтартрĕ. Эпĕ унталла пăхрăм та, сасартăк тĕлĕнсе, хытсах тăтăм. Çӳллĕ чиркӳ тăрринелле, çилпе сулкаланса тăракан пралук пусма тăрăх, васкасах темле çын чакаланса хăпарнине куртăм эпĕ...

— Кам вăл? Мĕн тума хăпарать унта?—ыйтрăм ачасенчен.—Укме пултарать вĕт!

— Кирюха!—терӗ пӗр ачи.

— Çавӑ, çавӑ! Куратӑр-и, хулхушшинче хайхи патак!—çирӗплетрӗ тепри.

— Мӗн кирлӗ ӑна унта?

— Кам пӗлет...

Чӑнах та, питӗ хӑрамалла пулчӗ. Пралук пусма çилпе унталла та кунталла сулланчӗ, кӗç-вӗç тӑлса анассӑн туйӑнчӗ, анчах Кирьян ним çине пӑхмасӑрах çӳлелле, чиркӳ хӗресӗ патнелле кармашрӗ.

Эпир часрах тӑвалла чупрӑмӑр. Манӑн ӑна халех каялла антарас, ӑнсӑртран ӳксе вилесрен хӑтарас килчӗ. Анчах та эпир чиркӳ патне çитиччен вӑл чӑн çӳле хӑпарса, хӗресрен çавӑрса тытрӗ.

— Э-эй, мӗн тӑван унта, ан каялла!—тесе кӑшкӑртӑм эпӗ мӗн вӑй çитнӗ таран.

Кирьян ответ памарӗ, илтмерӗ те пулмалла. Халӗ вӑл чунтанах аллинчи вӑрӑм патакпа тӑрмашма тытӑнчӗ. Мӗн туни курӑнсах каймарӗ пире. Анчах, пӗр-ик минутран, вӑл унта мӗншӗн хӑпарни пӗтӗмпех паллӑ пулчӗ вара: чиркӳ тӑрринче хӗрлӗ ялав вӗлкӗшме тытӑнчӗ...

Нумай уйӑхсем хушши фашистсен пусмӑрӗнче асапланнӑ ял çинче каллех совет ялавӗ çулӑм евӗр ялкӑшма пуçларӗ!

— Ну, маттур та иккен ку!—терӗ ман хыçра тахӑшӗ.

Эп çаврӑнса пӑхрӑм та, хамӑрӑн лейтенанта курах кайрӑм.

— Вӑл камне пӗлетӗн-и?—ыйтрӑм эпӗ унран, чиркӳ тӑрринелле кӑтартса.

— Çавна-и? Çук, пӗлместӗп...

— Хайхи пирӗн ача вӗт вӑл. Паçӑрхи «корректировщик»!

— Чӑнах-и?

— Точно, курӑн акӑ!

— Хастарлă та иккен!

Ķирьян халь анма пуçларĕ. Анасси—хăпарассинчен те хĕнтерех пулчĕ. Пусман аялти вĕçĕ усăнкаласа çеç тăчĕ, Ķирьянăн урисем пралук пусман пĕр сыпăкĕнчен теприне ниепле те лекеймеççĕ.

Анчах ку та нимех те марччĕ-ха... Чиркӳ çуммипе сасартăк снаряд шăхăрса иртсе кайрĕ. Унтан тепре, тепре! Вĕсем умлăн-хыçлăнах, чиркӳрен пĕр 100—150 метрта ӳксе çурăлчĕç. Çавăнтах тавçăрса илтĕмĕр эпир: нимĕçсем чиркӳ тăррине çын хăпарнине аякранах курнă та, ăна пеме тытăннă. Ķам пĕлет, тен ăна вĕсем наблюдатель вырăнне шутланă пуль, тен—совет ялавне курайманнипе пенĕ...

— Васкарах ан!

— Часрах, часрах! Аллусемпе тытса шу!—пăшăрханса кăшкăрма тапратрĕç аялта тăракансем. Çав вăхăтра кашниннех ăна пулăшас, вилĕмрен хăтарас килчĕ, анчах ним тума та пулмарĕ.

Çапах та, Ķирьян майĕпе ансах пычĕ. Чансем çакăнса тăнă тĕлтен чиперех иртрĕ, крыльца тăрринелле çите пуçларĕ. Анчах инçетре те мар тепĕр снаряд шăхăрса килни илтĕнчĕ. Эпир пĕрре куç хупса уçичченех вăл чиркӳ картинче хаяррăн шартлатса çурăлчĕ.

Пурте пĕр харăсах çĕре ӳкрĕмĕр. Пирĕн çине тем тери юр сирпĕнчĕ. Темиçе секундăран, пуçа çĕклесе, карта урлă пăхрăм: пралук пусма пушпушах сулланса тăрать, чиркӳ çумĕнче тĕтĕмпе хăрăм çеç йăсăрланать...

— Пĕтнĕ пирĕн герой!—çиçĕм пек вĕри шухăш касса кайрĕ ман чĕрене. Часрах сиксе тăтăм та, карта урлă ыткăнса каçрăм. Пăхатăп—крыльцаран сулахай енче, снаряд ӳксе çурăлнă вырăнтан

чылай инҫетре пилӗк таран юр ӑшӗнче этем кӗлеткинтӑрмашать...

— Ҫирьян! Тусӑм! Сывӑ-и эсӗ?—хыпӑнса ӳксе чупса пытӑм ун патне.

— Ну, хытӑ ҫӗклесе печӗ, шуйттан,—терӗ вӑл мана хирӗҫ, куҫпуҫне ерипен юртан тасатса.—Епле вӗҫсе аннине те астумастӑп. Парашютсӑр антӑм вӗт-ха...

— Суранлатман-и сана?

— Ҫук, мана тивет-и вара?—кулса ячӗ Ҫирьян.—Иртнӗ кӗркунне ик енче ик бомба пӗр харӑс ҫурӑлчӗҫ—итту нимӗн те пулмарӗ, пӗр эрне калаҫмасӑр, илтмесӗр пурӑнтӑм ҫеҫ!

Пахчана пирӗн лейтенант сиксе кӗчӗ, унтан ыттисем те кӗчӗҫ. Нумаях та пулмасть Ҫирьян пурнӑҫӗшӗн калама ҫук хӑраса тӑнӑ ҫынсем халь ҫак ҫамрӑк паттӑр ҫине ҫав тери савӑнӑҫлӑн, ытарайми куҫсемпе пӑхрӗҫ...

— Еплерен шут турӑн-ха эсӗ ялавпа унта хӑпарса кайма?—ыйтрӗ унран лейтенант.

—Эпӗ ӑна паян мар, тахҫанах шутласа хунӑччӗ,—терӗ Ҫирьян.—Ялавне те юри пытарса усрарӑм... Хамӑр Ҫар килсенех хӑпарса ҫакатӑп, тесе пурӑнтӑм. Вӑл вӗт пирӗн пата ирӗклӗ пурнӑҫ таврӑннине пӗлтерет! Пурте курччӑр, пурте пӗлччӗр эпир фашистсенчен хӑтӑлнине!..

Ҫирьян картус сӑмсине туртса ҫӗклерӗ те, ҫӳлелле, ялав ҫинелле пӑхрӗ.

— Епле илемлӗ вӑл... Вут пек ҫунать! Пирӗн ялав пекки тӗнчипе те ҫук пуль!..

— Тӗрӗс, шӑллӑм,—терӗ лейтенант, ӑна хулпуҫҫинчен лӑпкаса.—Пирӗн ялав пекки тӗнчере ҫӑнах та урӑх ҫук...

*Калинин облаҫӗ*
*1942 ҫ.*



## ЕНЕНТЕРЧЕÇ...

Пĕрре, кăнтăрла иртсен, сĕм вăрманти çырмара чарăнса тăнă партизансен командирĕ Иван Кузьмич Макеев патне икĕ арçын ачана илсе пычĕç. Пĕри — кăвак куçлă, каçăртарах сăмсаллă, красноармеец шлемне тăхăннăскер—пĕр вунтăвата çулта, теприне — унтан кăшт лутрарах, шуранка сăнлă, çинçе мăйлă ачине — вунă-вуник çултан ытла пама май килмен. Вĕсен иккĕшин те çурăмĕсем хыçĕнче пĕчĕк çеç кутамккасем çакăнса тăнă.

— Мĕн пулнă, ма илсе килтĕр? — тесе ыйтрĕ Макеев.

— Сана курасшăн... Эпир Иван Кузьмича шыратпăр, ун тĕлне пĕлетĕр пулсан, тархасшăн илсе кайăр, теççĕ, — ответ пачĕ дозорта пулнă ватăрах партизан. — Ну, эпĕ вара, вĕсем сана пĕр-пĕр кирлĕ хыпар пĕлтересшĕн пулĕ, терĕм те—илсе килтĕм...

Партизансен командирĕ пĕрре—пĕр ачи çине, тепре—теприн çине пăхса илчĕ. Ачасем те, ун çине куç илмесĕр пăхса, вăл хăйсемпе калаçма тытăнасса кĕтсе тăчĕç. Сăмаха малтан хăйсем пуç-

лама вёсен пěртакках хăюлăх çитейменě курăнать.

— Ăçтан килтěр эсир?—ыйтрě командир. — Ӑам ячě сире кунта?

— Пире никам та яман, эпир хамăрах килтěмěр,—куçěсене мăчлаттарса илчě каçăртарах сăмсалли.—Андреевка салинчен...

— Кунта килме епле пěлтěр эппин? Кам та пулин çул кăтартса ячě-и? Е хăвăрах тупрăр? — тěпчеме тытăнчě командир.

— Эпир... эпир, Иван Кузьмич, сире пилěк кун шыратпăр ěнтě, аран тупрăмăр!—персе ячě кěçěнтерехххи. Кăтартса яракан пулнă пулсан, тӳрех тупаттăмăр та çав, никам та йěркеллěн калаçанни пулмарě. Камран ан ыйт—пурте: ялта мар ěнтě вěсем, ăçта та пулин вăрманта шырăр, теççě. А вăрманě ку таврара тем чухлех...

Командира ку ачасем хытах интереслентерме пуçларěç.

«Никам та хушса яман, хăйсемех килнě, пилěк кун шыранă, ман ята пěлеççě... Мěне пěлтерет ку? Тěлěнмелле!»—шухăшларě вăл.

— Ну, ну... Мана ăçтан пěлетěр тата?

— Сана-и? Сана пěлмен çын та çук пулě! Эп хам сана виçěмçултанпах паллатăп, эсě пирěн атте патне темиçе хут та пынă, пěрре ман вырăн çинче те çывăртăн,—терě шуранка сăнлиех.

— Ак тата япала! — пěççине шартах çапса кулса ячě Макеев.—Хурăнташ мар-и эп сирěн?

Вěсем калаçнă çěре пухăннă ытти партизансем те лăхăл-лăхăл кулса илчěç.

— Тен, эсě унăн хреснашшě пуль, Иван Кузьмич?

— Е вěсен ялěнче туйра пулнă?

Анчах ача çухалса каймарě. Вăл кăштах çиленнě пек пулчě те, партизансем çине пысăк хура куçěсемпе хăюллăн пăхса çаврăнчě.

— Ним кулмалли те çук!—терĕ вăл. — Иван Кузьмич темиçе çул хушши райземотдел пуçлăхĕ пулнă, а пирĕн атте — колхоз председателĕ... Çавăнпа та вăл пирĕн пата час-часах пынă. Пĕлмесĕр каламастăп ĕнтĕ!

Ку сăмахсем хыççăн партизансен командирĕ, темĕн аса илнĕ пек пулса, шĕвĕр пӳрнине çӳлелле çĕклерĕ.

— Чим-ха, чим-ха, ачам... Эсир Андреевка салинчен терĕр-и çав?

— Ийя.

— Эппин, эс Парфен Ветлугин ывăлĕ?

— Çавăн...

— Во-он мĕн! Апла пулсан—тĕлĕнмелли çук, паллах, эс мана пĕлме кирлĕ. Сирĕн патра пулкаланă эпĕ, тĕрĕс...—Иван Кузьмич, слон шăмминчен тунă чĕлĕмне кăларса, табак тултарма тытăнчĕ.—Аван çынччĕ сирĕн аçу, колхоза яланах йĕркеллĕ ертсе пыратчĕ. Нимĕçсем ăна персе пăрахнă, тенине илтсен, питĕ хытă хĕрхентĕм...

Партизансен командирĕ хăйсемпе тăруках кăмăллăн калаçма пуçланипе хăюлланса, ывăннă ачасем ун çывăхĕнче выртакан шанкăсем çине ларчĕç. Иван Кузьмич тарăннăн сывласа илчĕ те, ачан ашшĕ нимĕçсен аллине епле лекни çинчен ыйтрĕ.

— Мĕншĕн аяккалла пăрăнман-ха вăл пĕреххут, ялтах юлнă?

— Май пулмарĕ çав,—терĕ ача.—Малтанах, нимĕçсем колхоз кĕтӳне самолётсем çинчен пулемётсемпе пеме тапăнсан, вăл, ытти колхозниксемпе пĕрле, выльăхсене çăлас тесе, вăрманалла хăваласа чупрĕ. Çавăн чух ăна хытă суранлатнăччĕ. Нимĕçсем яла пырса кĕнĕ вăхăтра эпир ăна анкартинчи пусса пытартăмăр, анчах—пурĕпĕр шыраса тупрĕç... Тахăшĕ вăл коммунист пулни çинчен ка-

ласа пана пулмалла. Пусăран туртса кăларчĕç те, калаçса та тăмарĕç,—çавăнтах персе пăрахрĕç...

— Эх, мĕн тери матур партизан пулмаллаччĕ вăл çын!—татах шеллесе илчĕ Иван Кузьмич.— Эпир вĕт граждан вăрçинче унпа пĕрле пулнă, вунсаккăрмĕш çулта нимĕçсене пĕрле хăваланă...

Қалаçу темиçе самантлăха татăлчĕ. Иван Кузьмич, чĕлĕмне йăсăрлантарса, иртнĕ вăхăтсене аса илме пикенчĕ пулмалла, ытти партизансем тăлăха тăрса юлнă ача çине хĕрхенсе пăхса тăчĕç.

«Шутласан, мĕн чухлĕ ача-пăчана ашшĕ-амăшĕсĕр тăратса хăварчĕç вăл нимĕç сынçиенĕсем, мĕн чухлĕ асаппа хурлăх кӳчĕç вĕсем савăнса çеç телейлĕн ӳсекен совет ачисене! Юнпа, тăхлaнпа, хăйсене кашни утăмрах ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынипе çеç тавăрма пулать уншăн нимĕçсене!» — шухăшларĕ кашни хăй тĕллĕн.

— Атте вырăнне халь эпĕ килтĕм,—терĕ çав вăхăтра колхоз председателĕн ачи сасартăк.

Пурте харăсах ун çинелле çаврăнса пăхрĕç.

— Мĕн терĕн эсĕ?—ыйтрĕ Иван Кузьмич.

— Атте вырăнне—эпĕ партизан пулас, тетĕп!—пурне те илтĕнмелле, татăклăн каласа хучĕ ача лăпкăнах.

— Партизан?!

— Ийя çав. Эпĕ те, ак Федька та...—Вăл хăйĕн юлташĕ çине тĕллесе кăтартрĕ.—Нимĕçсем ăна та ман пекех тăлăха хăварчĕç: ун амăшне—чылай пулать ĕнтĕ—ытти çамрăкрах хĕрарăмсемпе пĕрле таçта илсе кайрĕç те, халь пĕчченех пурăнать вăл. Çавăн пирки вара эпир иксĕмĕр те партизан пулма шутларăмăр, фрицсене тавăрма!

Партизансем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç, хăшĕсен сăнĕсем çинче çемçе кулă палăрчĕ. Анчах, ачасене тăруках кӳрентерес мар тесе, нихăшĕ те ним те каламарĕ: ачасем чĕреренех фашистсене

хăйсен вăйĕ çитнĕ таран тавăрма ĕмĕтленнĕ-çке. Халь пурте—ачасем те, партизансем те, Иван Кузьмич мĕн каласса кĕтрĕç, мĕншĕн тесен ĕçе пĕр вăл кăна татса пама пултарнă...

Иван Кузьмич çав хушăра сӳннĕ чĕлĕмне атă пуçне шаккаса тасатрĕ те, ăна майĕпе, васкамасăр, кĕсйине чиксе хучĕ. Унтан колхоз председателĕн ачине куçран пăхрĕ.

— Эсĕ мĕн ятлă-ха çав?—ыйтрĕ вăл лăпкăн, ашшĕ хăйĕн ывăлĕпе калаçнă пек.

— Эпĕ-и? Володя. Владимир. Эпĕ шăп Ленин çуралнă кун çуралнă та, атте мана юриех çав ята панă.

— Аван ят... Миçе çулта-ха эсĕ?

— Кăçал вуниккĕ тултартăм.

— А санăн юлташу тата?

— Федька-и? Вăл...

— Эп кăçал Хĕрлĕ Çар уявĕнче вунтăватта кайрăм,—хăйĕншĕн хăех ответ пачĕ унăн юлташĕ.

— Пит телейлĕ-çке эсир,—кăмăллăн кулса илчĕ Иван Кузьмич,—пĕри Ленин кунĕсенче, тепри Хĕрлĕ Çар уявĕнче çуралнă...

Ачасем те кулса ячĕç. Вĕсем ĕнтĕ, партизансен командирĕн кăмăлĕ уçăлса кайнине кура, хăйсене кĕç-вĕç отряда илессе шанса, хăйсен ăшĕнче савăнсах тăчĕç.

— Хăвăр та пит матур ачасем пулмалла, — терĕ малалла Иван Кузьмич,—анчах сире партизан пулма иртерех-ха, ачамсем! Ытла çамрăк эсир, сирĕн пăртак ӳсес пулать... Партизан пулас:и—çăмăл япала мар вăл, ăна валли вăй та, тӳсĕм те нумай кирлĕ. Çавăнпа та, ан çиленĕр те ĕнтĕ ман çине, эп сире йышăнма пултараймастăп: юрамасть.

Ĕç кун пек çаврăнса тухасса ачасем ниепле те кĕтменччĕ. Партизансен командирĕ хăй сăмахне ка-

ланăçемĕн вĕсен сăнĕсем улшăнса пычĕç, иккĕшин те чĕрисем кӳтсе, куççулĕсем капланса килчĕç.

— Çапла çав, ачасем. Сирĕн каялла, килĕре каймалла пулать... Куншăн кӳренмелли нимĕн те çук,—хушса хучĕ вăл кăшт тăрсан, Володьăпа Федька хытă пăлханнине кура.—Эсир вĕт алла винтовка та тытса курман пулĕ-ха, пеме те пĕлместĕр пулĕ...

Ку таранччен ним каламасăр тăнă ачасем, кăна илтсен, харăсах хавасланса кайрĕç.

— Эпир-и?

— Пеме пĕлместпĕр-и?

— Питĕ лайăх пĕлетпĕр!

— Аллă метртан йывăç çинчи салакайăка ним те мар персе антарма пултаратăп эпĕ!

— Тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухнех «ворошиловский стрелок» нормине панă!—пĕрне пĕри пӳлсе,васкасах ĕнентерме тапратрĕç туссем.

— А винтовкăсем пур-ха сирĕн?—ыйтрĕ партизансенчен пĕри.— Вăрманта сирĕн валли хĕç-пăшал никам та хатĕрлесе хуман вĕт, партизансем хăйсене валли хĕç-пăшал хăйсем тупаççĕ!

Ҫапла калани те ачасене парăнтарма пултараймарĕ.

— Уншăн ан кулян, мучи,—ватăрах партизан çине пăхса, хăрах куçне хĕссе илчĕ каллех хăюланса кайнă Володя.—Нимĕç винтовкисемех пур пирĕн, пĕр ешĕк патрон та пур!..

— Курмастăп-çке, ăçта вара вĕсем сирĕн?—ыйтрĕ Иван Кузьмич.

— Пăшалсене эпир... килте, кипкепе чĕркесе çĕр айне пытарса хунă,—терĕ Володя.

— Тӳрех çĕклесе тухсан, пĕр-пĕр фриц тĕл пулса туртса илесрен хăрарăмăр,—хушса хучĕ Федька.—Малтан сире шыраса тупас, терĕмĕр эпир...

— Вĕсене эпир ыранах илсе килме пултаратпăр.

Қалаçу каллех татăлчĕ. Иван Қузьмич татах чĕлĕмне кăларса тултарма тытăнчĕ. Тĕрĕссипе каласан, ку ачасем ăна ытларах та ытларах кăмăла кайма пуçларĕç, унăн вĕсене отряда илес шухăш та çуралма пуçларĕ, вĕсем ытла çамрăкки çеç иккĕлентерсе тытăнтарса тăчĕ ăна. Вăрçă пуçланнăранпа нумай ачасен асапне курнăскер, вăл халь ачасене çав тери хĕрхеннĕ, унăн тин ӳсекен çамрăксене ниепле йывăрлăх та кӳрес килмен. Партизансен пурнăçĕнче пысăк походсем те, хаяр çапăçусем те, сивви те, йĕпи те, тепĕр чух выçмалли те пулать. Пысăк тӳсĕм кирлĕ! Çук, ку ачасемпе ĕç тухмасть... Ытла çамрăк. Қайран чăрмав çеç пулма пултарать...

Çапла шут турĕ партизансен командирĕ. Володьăпа Федькăна та çавнах каласа пачĕ. Қусем вара каллех ним калама аптраса тăчĕç. Ĕмĕчĕсем тепĕр хут татăлчĕç вĕсен.

— Иван Қузьмич, эсир пире сăнаса пăхăр кăна... Чăнах пултараймастпăр пулсан—эпир хамăрах кайăпăр,—кĕç-вĕç макăрса ярас сасăпа юлашки хут ыйтрĕ Володя.—Темиçе кунлăх та пулин хăварăр!

Анчах Иван Қузьмич кăмăлĕ пурĕпĕр çемçелмерĕ.

— Çук, ачасем, ан та ыйтăр, май тухмасть. Текех ан та калаçăр ун çинчен... Эй, Павел Петрович!—çырма тĕпĕнче йăсăрланакан кăвайт ен нелле кăшкăрчĕ вăл.—Çак ачасене халех апат çитерсе яр! Утма вăй ытларах пултăр... Хырăмĕсем выçă пулĕ-ха?

— Выçă мар эпир...

— Пĕртте çиес килмест пирĕн, хырăм выççан çимелли хамăрăн та пур,—пусăрăнчăк сасăпа от-

вет пачӗҫ ачасем. Вӗсен кӑмӑлӗсем хуҫӑлни халӗ таҫтанах палӑрса тӑчӗ. Ҫапах та, повар илсе пынӑ пӗр котелок ҫӑра шӳрпене шӑпӑртах ҫавӑрса хучӗҫ вӗсем. Иван Ҫузьмич кӑшт аяккарахра, вӗсем ҫине пӑхса кулкаласа ҫеҫ тӑчӗ. Ачасем юлашки кашӑксене сыпнӑ чух, вӑл кӗсйинчен тута купӑсӗ кӑларса, хаваслӑ ҫемӗ вӗрсе калама тапратрӗ...

— Акӑ, асӑнмалӑх манран ҫак япалана илӗр,— терӗ вӑл, ачасем патнелле пырса.—Пӗр фриц кӗсйинчен тупнӑччӗ эпӗ ӑна. Ватӑ партизанран асӑнмалӑх пултӑр сире...

Володя Иван Ҫузьмич аллинчи купӑса илсе ҫаваркаласа пӑхрӗ те, ӑна йӗм кӗсйине чикрӗ.

— Халӗ ӗнтӗ сывӑ пулӑр...—хулпуҫҫисенчен лӑпкаса илчӗ ачасене Иван Ҫузьмич.—Ҫаҫчен каяс пулать сирӗн, ҫулӗ—ҫывӑхах мар. Ҫӑмӑлсӑр пулса ан кайӑр, ялти ҫынсене пиртен салам калӑр, анчах... эпир хӑш тӗлте тӑнине никама та калама юрамасть, астӑвӑр!

— Ӑна пӗлетпӗр,—терӗ Володя.

Вӑл кӑштах шухӑша кайнӑ пек пулса тӑчӗ те, Иван Ҫузьмич ҫине юлашки хут ҫав тери ыйтуллӑн пӑхрӗ.—Ахалех йышӑнмарӑн эсӗ пире,—хаштах сывласа илчӗ вӑл.—Тен, усси пулатчӗ?

— Ну, ҫитӗ ачасем... Сывӑ пулӑр.

Урӑх ним калаҫмалли те юлмарӗ. Паҫӑр командир патне илсе пынӑ партизанах ачасене вӑрттӑн сукмаксем тӑрӑх мӑн ҫул ҫине илсе тухрӗ. Вӑл вӗсене киле чиперрӗн ҫитме сунса, чӑтлӑха каялла кӗрсе кайсан, Володьӑпа Федька пӗр-пӗрин ҫинелле калама ҫук кӳренӳллӗн пӑхса илчӗҫ.

— Ну, мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ?—ыйтрӗ Федька.

— Шухӑшлас пулать,—терӗ Володя.

...Ҫӗрхи вӑрман хуллен кӑна кашларӗ, инҫетрен, хӗвелтухӑҫ енчен, мӑн йышши тупӑсем кӗрӗслетни илтӗнчӗ, ҫумӑр хыҫҫӑн типсе ҫитмен ҫул

çинчи пычăк ачасен урисем айĕнче лăчăртатса пычĕ.

* * *

Çакăн хыççăн виçĕ кун иртрĕ. Партизансем вăл хушăра çав малтанхи вырăнтах тăчĕç,—вĕсем пĕр чугун çул станцинчи нимĕçсен гарнизонне тапăнса аркатма хатĕрленчĕç.

Разведка пĕлтернĕ тăрăх, станцире нимĕçсем Иван Кузьмичăн партизанĕсенчен икĕ-виçĕ хут ытларах пулнă, вĕсем автоматсемпе, пулемĕтсемпе хĕç-пăшалланнă, станци çурчĕ умĕнче вĕсен миномĕтсем тата икĕ çăмăл тупă тăнă. Вăйсем пĕр тан пулман, çавăнпа та тăшмана аркатмашкăн питĕ тĕплĕн хатĕрленмелле пулнă. Иван Кузьмич, пуринчен ытла, тăшмана пачах та кĕтмен çĕртен, сасартăк пырса çапнипе ăнран кăларса ярасса шаннă. Çавăн пирки хатĕрленӳ питĕ вăрттăн, никам сисмелле мар пулса пынă: хăйсене палăртас мар тесе, командир хăйĕн партизанĕсене ку таврара пăшалпеме мар—ăнсăртран йывăç тураттине хуçса сас кăларма та чарнă.

Çапах та, отряда икĕ ача пырса кайнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче, отрядран инçетре те мар икĕ хутчен умлăн-хыçлăн пăшал сасси кĕрĕслетни илтĕнчĕ. Юлашки вăхăтра пĕрмай шăп пулнă вăрманта вĕсем таçта çитиех янраса кайрĕç...

Пăшал сассисене илтсен, Иван Кузьмич калама та çук пăлханса кайрĕ.

— Кам печĕ? Кам мурĕ? Епле ухмахăн ăс çитрĕ пулать кун пек хăтланма?!—терĕ вăл тарăхса.—Пурĕпĕр пĕлетĕп, кашнин пăшалне тытса шăршлатăп, анчах çапах та тупатăп вăл пӳтсĕре! Пĕлсенех отрядран хăваласа кăларса яратăп... Тус мар, тăшман вăл пирĕн! Пĕтĕм ĕçе пăсса хума пултарать!

Вăл пур партизансене те йăпăр-япăрах пĕр çĕре пухтарчĕ.

— Қаласа парăр тӳррипе, кам печĕ?—тĕпчеме тытăнчĕ вăл вĕсене.—Миçе хут асăрхаттарнă сире, пĕр сас та кăларма юрамасть, тесе? Хамăра çеç сиен тăватпăр вĕт, никама та мар!

Пăшал перекенсем тупăнмарĕç. Дозортисене тĕрĕслесе пăхрĕç—вĕсем те пемен иккен, пăшалĕсем пурин те тасипех пулнă.

— Апла пулсан, пирĕн таврара такам çӳрет,—тесе шут турĕ Иван Кузьмич.—Тен, нимĕçсем мĕн те пулин асăрханă пулĕ те, облава тăваççĕ пулĕ?

Çавăнтах отрядран вăтăр çын уйăрса, пĕтĕм таврари вăрмана «хыпашласа» тухма хушрĕ. Вĕсемпе пĕрле хăй те кайрĕ.

Анчах вăрманти шăплăха хускатакансене вĕсен нумай шыраса çӳремелле пулмарĕ. Авкаланчăк сукмаксем тăрăх çывăхри проçек çине тухсанах, партизансем хăйсем патнелле васкасах икĕ лаша кӳлнĕ лав пынине курчĕç. Ку вĕсене питех те тĕлĕнтерчĕ: проçек тăрăх нихçан та, никам та çӳремен...

— Пур енчен те çавăрса илĕр!—тесе приказ пачĕ те Иван Кузьмич партизансене, темиçе самантран вĕсем пурте, винтовкисемпе автомачĕсене «на-перевес» тытса, йывăççем хушшинчен çав лав патне пĕр харăс сиксе тухрĕç.

— Стой!

— Руки вверх!

Лав тăпах чарăнчĕ. Партизансем ун çинче ларакан икĕ çын çине пăхрĕç те—тĕлĕнсе хытсах тăчĕç. Те чăн ку, те куçа курăнать...

— Володя!

— Федька!..

Пăлханнипе тата хытă чупнипе хашкама ернĕ Иван Кузьмич тăруках ним калайманнипе антăхса

кайса тăчĕ. Унтан, сыхланмалли-тумалли çинчен манса кайсах, хытăн кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн хăтланса çӳретĕр эсир кунта, мур чĕп-писем? Акă, эп сире пĕрре...

Анчах Володя ăна каласа пĕтерме памарĕ.

— Нимĕн те хăтланса çӳреместпĕр, Иван Кузьмич,—терĕ вăл хаваслăн,—сирĕн пата тепĕр хут çаврăнса килес, терĕмĕр çеç.

Çапла каларĕ те, лав çинчен вашт кăна сиксе анчĕ.

— Çапах та, мĕне пĕлтерет ку?—ыйтрĕ Иван Кузьмич, нимĕн те ăнланаймасăр.

— Килте пурăнманиепле те чун чăтмасть-çке-ха,—ним пулман пекех калама тытăнчĕ Володя.—Шутларăмăр-шутларăмăр та, сирĕн пата тепре килсе пăхас, терĕмĕр...

— Лашисем камăн кусем?

— Лашисем... малтан нимĕçсен пулнă, халь—пирĕн ĕнтĕ.

— Эс ăнланмалларах каласа пар, ачам, йĕркипе!—куçлăхне шăлса тăханчĕ Иван Кузьмич, ачасем темле пысăк ĕç тунине сисме пуçласа.—Ну-ка, лавне вăрманалла кӳртсе тăратăр-ха малтан!—хушрĕ вăл партизансене.—Ют куç тĕлне пулас мар.

Çур минутран лав сарлака çулçăллă вĕренесем айĕнче пытанчĕ. Володя вара партизансене çав виçĕ кун хушшинче хăйсемпе мĕн-мĕн пулса иртни çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Питĕ кӳренсе таврăнтăмăр эпир сирĕн патăртан,—терĕ вăл.—Киле çитрĕмĕр те—иксĕмĕр те ним тума пĕлместпĕр, аптăранипе хуть те шыва кайса сик! Мăн çынсене нимĕçсем иртен пуçласа каçченех çул çинче ĕçлеттереççĕ, окопсем чавтараççĕ—эпир аякра пăрăнса çӳретпĕр. Пĕр кун иртрĕ, иккĕ иртрĕ çапла—анчах сире ниепле те манмалла мар, пĕрре курса кайнă хыççăн пушшех аса

килет. Вара пĕрре Федькăпа иксĕмĕр калле-малле лайăхрах шухăшласа пăхрăмăр та, çав каçах сирĕн пата тепĕр хут килме шут турăмăр. Мĕн пулать, мĕн килет... Винтовкăсене çĕр айĕнчен чавса кăлартăмăр, хутаçсене пĕртак çимелли чикрĕмĕр те— вăрманалла шăвăнтăмăр. Хамăр çавах шикленетпĕр-ха, эсир татах каялла ярасран хăратпăр. Унтан, темлерен, çакăн пек ăс пырса кĕчĕ пире: тавай, отряда çитиччен пĕр-ик фрица шаккаса хурас, хамăр мĕн тума пултарнине малтанах кăтартас!

— Ун çинчен малтан эп каларăм,—хушса хучĕ лав çинчен пăхса ларакан Федька. (Вăл мĕншĕн çĕре анманнине никам та пĕлмерĕ-ха...)

— Иксĕмĕр пĕрле ĕнтĕ!—ун çине аллипе сулчĕ Володя.

— Кирек хăшĕ каланă пулсан та—çавах вăл, ĕçĕ пулнă пултăр,—терĕ Иван Кузьмич.—Кайран мĕн турăр вара?

— Ĕнер каç çакăнти мăн çул хĕррине пытанса выртрăмăр та, кĕтме тытăнтăмăр...

— Кама?

— Нимĕçсене. Пирĕн хурлăха, çĕр каçа çул тăрăх пĕр йытă та иртмерĕ...

— Çĕрле çӳреме хăраççĕ вĕсем, — терĕ пĕр партизанĕ.

— Çапла пулмалла çав. Хĕвел тухсан тин куртăмăр вĕсене. Анчах чылайăнччĕ, пĕр аллă çын пулĕ, станци еннелле кайрĕç. Вĕсене тапăнма хăрарăмăр. Унтан каллех кĕтрĕмĕр... Чылайран çул кукри хыçĕнче урапа сасси илтĕнчĕ. Пăхатпăр — çак лав килет, ун çинче икĕ нимĕç лараççĕ. Самаях ӳсĕр курăнать, пĕри ларнă çĕртех сыварать, тепри сăмса витĕр юрласа пырать. Кăт! тĕкрĕм Федькăна чавсапа. Эс—ку енчине, терĕм... Вара вĕсем шăп хамăр выртнă тĕле çитсен, пĕр харăсах

шаплаттартăмăр! Лашисем, хăранипе, малалла тапса сикрĕç, çывăраканни урапа çинчен кутăн кĕпĕртетсе анчĕ, тепри хăяккăн ӳксе аллинчи тилхепине пăрахрĕ... Эпир, сиксе тăрса, лашасене хăваласа çитрĕмĕр те, часрах лав çине хăпарса ларса, кунталла хăвалама тапратрăмăр. Эп лашисене хăвалатăп, Федька çав вăхăтра нимĕçе хупласа пырать... Ак çак проçек тĕлне çитсен вара, тĕмески-тункати çине пăхмасăрах, часрах çултан пăрăнса кĕрсе кайрăмăр. Ну, унтан пире эсир куртăр...

Володя калама чарăнсанах Федька лав çине витнĕ брезента уçса ячĕ. Партизансен куçĕ умне сысна шăрчĕ пек сухаллă самăр нимĕç вилли тухса выртрĕ.

— О-о, ачамсем, ахаль салтак мар ку, фельдфебель!—терĕ Иван Кузьмич, нимĕçĕн погонĕсене курса.—Самăй çăханнех лектернĕ!

— Тьфу! Эрех пички пекех... шăрш перет! — йĕрĕнчĕклĕн сурчĕ пĕр ватă партизан.

— Кӳпсе лартнă ĕнтĕ, тăраничченех!

— Çавăнпа юрласа пынă та вăл...

— Ирсĕр.

Фельдфебелĕн кĕсйинчен хутсене кăларса илсен, Иван Кузьмич ăна вăрмана аяккарах илсе кайса пăрахма хушрĕ. Унтан çӳлте тăракан Федька лав çинчи япаласене кăларма тапратрĕ. Пĕр автоматпа винтовкăсăр пуçне, унта пĕтĕмпех çимелли тултарнă иккен: халь çеç пуснă сысна тушки, мăйĕсене пăра-пăра хунă хур-кăвакалсем, икĕ ещĕк çăмарта, çур катка çу, пĕр витре пыл...

— Тахăш ялта çаратнă, бандитсем! — терĕ Иван Кузьмич çилĕпе.—Тутлă çиесшĕн пулнă...

— Халь пире юрарĕ ĕнтĕ,—хушса хучĕ тахăшĕ.

— Паллах, кăларса пăрахмастпăр! Пирĕн çимеллисем шăпах сахалланса çитнĕччĕ-ха,—çынсем

хушшипе лав патнерех хӗсӗнсе тухса, сае пачӗ отряд поварӗ Павел Петрович.

— Отряда икӗ ҫӗнӗ боец хутшӑннӑ ятпа ӑшаланӑ кӑвакал ҫиетпӗр, пылпа чей ӗҫетпӗр эппин!— терӗ тепри.—Уяв пулать!

— Тӗрӗс!

— Вӗсем ӗҫки-ҫикине те хӑйсеннех илсе килчӗҫ вӗт...

— Паллӑ тӑвас пулать ку япалана! — шакӑлтатса илчӗҫ ытти партизансем.

— Юрӗ ӗнтӗ... Ачисем чӑнах та питӗ маттур иккен, хӑйсен маттурлӑхне ӗҫпех кӑтартса пачӗҫ,— терӗ те Иван Кузьмич, пӗчӗк партизансем ҫине кӑмӑллӑн пӑхса кулса ячӗ.—Йышӑнмаллах пулать вӗсене...

Володьӑпа Федька, савӑннипе, тӑпӑртатса ҫеҫ тӑчӗҫ, вӗсен тутисем кулчӗҫ, куҫӗсем ҫав тери пысӑк телей ӑшшипе тулчӗҫ...

* * *

Ҫак историе мана Иван Кузьмич Макеев хӑй каласа пачӗ. Вӗсен районне нимӗҫсенчен тасатсан, вӑл каллех малтанхи вырӑнта ӗҫлеме тытӑннӑ,— ҫарта пулмалли вӑхӑт тахҫанах иртнӗ пулнӑ унӑн. Володьӑпа Федька кайран отрядра питӗ паттӑр разведчиксем пулчӗҫ, тет. Анчах вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ыйтса пӗлме пулмарӗ, мӗншӗн тесен эпир, нимӗҫсене хӗвеланӑҫнелле хӑваласа, часрах малалла кайма васкаттӑмӑр.

*Смоленск облаҫӗ,*
*1942 ҫ.*



# МЕДАЛЬ

Нимĕçсем кунтан чакса каясси халь пуриншĕн паллă пулчĕ. Ҫашни каçах хĕвеланăçнелле тăшманăн обозĕсем, орудийĕсем, машинисем шурĕç, уйрăм-уйрăм батальонĕсемпе ротисем иртсе кайрĕç. Яла таçтан пырса кĕнĕ хыпар тăрăх, хĕвелтухăç енчен хĕссе килекен совет полкĕсем нимĕçсене ик енчен хыпчăкпа хĕстернĕ пек çавăрса илме тапратнă имĕш, çавăнпа та халь вĕсем, тимĕр унка лекесрен хăраса, часрах тарма пикеннĕ.

Халăх савăнчĕ. Ку темрен те ырă хыпара пĕрпĕрине пĕлтерсе, çынсем Гитлер хурахĕсен пусмăрĕнчен хăтăлса çитмелли саманта кĕтрĕç.

— Ах, часрах тасалччăрччĕ! Ҫаллех этемсем пек пурăнма тытăнăттăмăр, ирĕклĕн сывлама пуçлăттăмăр!..

Ачасем те часах илтрĕç куна. Илтрĕç кăна мар, хăйсен куçĕсемпех курса тăчĕç нимĕçсем вăрттăн шăвăнма тытăннине. Кун çинчен ачасем, мăннисем пек те мар, уççăнах калаçма пуçларĕç. Хăрамасть вĕт вăл ача-пăча!

Сенька Горохов, вăрçă пуçланиччен ялти шкулăн пиллĕкмĕш класĕнчен «отлично» паллăпа вĕренсе тухнăскер, пĕр каçхине урамри пур ачасем умĕнчех çапла каларĕ:

— Фрицсене капут çитрĕ! Сисетĕр-и, епле тикать*) тăваççĕ! Ыр пурнăçран мар ĕнтĕ çав,—пирĕннисем хĕссе килеççĕ!

Амăшне те çав сăмахсенех каларĕ вăл, анчах амăшĕ çавăнтах пӳлчĕ ăна:

— Асту эсĕ, такам умĕнче персе ан яр! Лешсем илтсен, юлашки сехетрех майна пăрса хăварĕç...

— Халь ĕнтĕ нимĕн те мар!—терĕ ăна хирĕç Сенька.—Чи хăрушши иртрĕ, часах каллех ирĕклĕ пулатпăр, курăн акă!

— Эп ăна хам та пĕлетĕп, анчах та вĕсем ялсенчен чакса кайнă чух пушшех ураççĕ, тет,—лăпланмарĕ амăшĕ.—Илтрĕн пулĕ, Уварово тăрăхĕнче пĕр ял та хăварман, пĕтĕмпех çунтарса янă, тет, тата кашни ялтах аллăшар-çĕршер çын персе пăрахнă...

— Илтнĕ,—аллипе сулчĕ Сенька.—Çапах та, тин эпĕ лекес çук ĕнтĕ.

— Епле пит шанатăн вара? Ак, вĕсем çак самантра килсе кĕрес пулсан, мĕн тăвассу пур? Тытаççĕ те—илсе тухса каяççĕ вĕт?

— Ак вĕсене!—Сенька шалавар кĕсйинчен парабеллум*) кăларса кăтартрĕ.—Пĕр иккĕшне вĕлеретĕп те—таратăп!

---

*) „*Тикать*"—украинла „тарни" тени пулать.
**) *Парабеллум*—нимĕçсен револьверĕ.

Амăшĕ пушшех хăраса кайрĕ. Нимĕçсем кам патĕнче те пулин хĕç-пăшал тупсан, ăна вырăнтах вĕлернине вăл питĕ лайăх пĕлнĕ.

— Турăçăм! — аллисене хире-хирĕç шартах çапса илчĕ вăл.—Мĕн хăтланатăн эсĕ? Юлашки самантра пуçна çиессӳ килет-и? Халех ăçта та пулсан кайса пытар, куçăм ан куртăр ăна!

— Юрĕ-çке, юрĕ...—терĕ ăна ывăлĕ лăпкăнах.—Ан хăра. Эпĕ ку япалана сакăр уйăх пытарса пурăнтăм, халь тин, кирлĕ пулать пуль, тесе, кăларса тасатрăм.

— Немуйсем курсан?

— Пĕрре курать те—çавăнтах курми пулать!

Сенька, револьверне каллех кĕсйине чиксе, урамалла тухрĕ. Қаç пулма пуçланă ĕнтĕ, хĕвел анасси те инçе юлман. Қу вăхăтра вăрçăччен ялан хиртен кĕтӳ кĕрлесе, тусан мăкăрлантарса килекенччĕ. Халь шăпах, çерçисем çеç сиккелесе çӳреççĕ урам варринчи çул çинче. Пĕр-ик эрне каялла нимĕçсем ялти юлашки выльăхсене хăваласа кайрĕç: камăнне—качака путекки, камăнне—сысна çури, тепринне—ăнсăртран упранса юлнă пĕртен-пĕр сурăхне. Выльăх-чĕрлĕх çуккипе халĕ урамсемпе килхушшисенче пилĕк таран курăк ӳссе ларнă, хуть те пытанмалла выля!

Ĕнерхи-виçĕмкунхи пекех, Сенька çак чĕрене ыраттаракан шăплăхпа тулнă урам тăрăх ял вĕçĕнчи çӳллĕ сăрт çине тухса тăчĕ. Қунтан питĕ инçе курăннă. Сăрт çуммипе—Вазуза шывĕ юхса выртать, унтан çатма пек тикĕс çарансем пуçланаççĕ те, таçта çитиех тăсăлаççĕ. Пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ пек курăннă çĕрте—инçетри горизонтра—вăрман мĕлки кăвакарать, вăл вăрманта—чугун çул, пĕчĕк станци пур. Астăвать Сенька: нимĕçсем хĕвелтухăçнелле кайнă чух çав станци патĕнче тăватă кун çапăçу кĕрлерĕ...

Сенька шучĕпе, Хĕрлĕ Çар халь çав енчен килмелле пулнă. Çак сарлака улăхпа, унăн ик енчи сĕвек сăртсем тăрăх хамăрăн танксем кĕмсĕртетсе килессине, вĕсем хыççăн вĕçĕ-хĕррисĕр боецсем «урра» кăшкăрса чупассине вăл халĕ питĕ кĕтнĕ. Мĕншĕн тесен вĕсемпе пĕрле яла çăлăнăç, ирĕклĕх, телей килессине вăл питĕ лайăх пĕлнĕçке, ăна пĕтĕм чĕрепе туйса тăнă...

Халь сăрт çине тухсан, Сенька каçхи уçă сывлăша кăкри туличчен шалалла туртса илчĕ те каллех йĕри-тавралла пăхма тытăнчĕ. Малтан чечексем айне пулнă симĕс улăхалла пăхрĕ вăл, унтан унăн куçĕсем кантăк пек çутăлса выртакан Вазуза çине куçрĕç. Çав тери илемлĕ ĕнтĕ, ытармалла мар илемлĕ! Анчах ку илем халлĕхе никама та савăнтармасть çав, мĕншĕн тесен—ун çинче пусмăрлăхха... Ав, пур çĕрте те тĕмескесем курăнаççĕ. Сенька пĕлет: вăл тĕмескесене дзотсем, теççĕ, вĕсен айĕнче—пулемётсем тăраççĕ... Ял халăхне виçĕ уйăх ĕçлеттерчĕç çавсене тунă çĕрте.

— Пурпĕрех аркатаççĕ ак вĕсене!—шухăшларĕ Сенька.—Çĕр айне пытаннипе те нумаях хăтăлаймĕç!..

Сасартăк вăл инçетре, вăрманта, чугун çул станцийĕ патĕнче, снаряд çурăлнине илтрĕ. Самантран тепри çурăлчĕ. Унтан çине-çинех шартлатма тытăнчĕç. Вăрман çийĕнче пĕлĕт пек хура тĕтĕм йăсăрланса хăпарчĕ.

— Пуçланчĕ! Тупата пуçланчĕ! — савăннипе чутах кăшкăрса яратчĕ Сенька. Вăл тата кăшт тăркаларĕ те, часрах килнелле чупрĕ.

— Илтетĕн-и, пирĕннисем килеççĕ!—хаваслансa пĕлтерчĕ вăл амăшне, аллипе хĕвелтухăçнелле кăтартса.—Халăхри сăмах ахаль пулман иккен!.. Ав епле кĕмсĕртеттерме пуçларĕç! Тен, пирĕн пич-

че те килсе тухĕ, э? Пулма пултарать вĕт çаван кек телей?

— Кам пĕлет, те чĕрĕ-ха пиччӳ, те тахçанах пуçне хунă,—терĕ ăна хирĕç амăшĕ пусăрăнчăк-лăн.—Шанмастăп ĕнтĕ...

Çапах та, инçетри тупă сассисене вăл тула тухса итлерĕ.

— Чăнах переççĕ... Пирĕннисемех пулмалла. Турă вăй патăрах пирĕн салтаксене çак усал тăшмана çапса хуçма!

— Ан хăра, çите-ет!—хăй çапăçма каяс пек аллисене сăтăркаласа илчĕ Сенька.—Курăн акă, епле çĕмĕрсе килĕç!

Инçетре снарядсем ӳке-ӳке çурăлнине вĕсем чылай хушă итлесе тăчĕç.

— Мĕншĕн çывăрмастăр? Мĕн тума тухса тă-тăр?—кĕтмен çĕртен кăшкăрса пăрахрĕ вĕсене та-кам çав вăхăтра.

Вĕсем патне икĕ нимĕç салтакĕпе ялти поли-цейски—ĕлĕк лаша вăрри пулнă Васька-Вор пыр-са тухрĕç.

— Эсир çак таранччен те пурнăç йĕркисене пĕлместĕр-им? Е розга тутанса пăхас килет-и? — хаярран пăхрĕ Сенькăпа амăшĕ çине Васька-Вор.—Хĕвел аннă хыççăн никамăн та урама тухма юрамасть вĕт!

— Қаçарăр... — Сенька амăшĕ шуралсах кай-рĕ.—Пĕр чăх пур та пирĕн, çав таçта кайнă...

— Қăтартăп сире чăх! Хĕрлисене кĕтетĕр пу-лĕ-ха?—Вăл аллинчи туйине выляткаласа илчĕ.

— Аçтан килччĕр ĕнтĕ вĕсем... Асра та çук...

— Пĕлетпĕр сирĕн асра мĕн пуррине! Анчах та эсир кĕтни кăлăхах пулать, хĕрлисене нимĕçсем каллех Мускав патнелле хăваласа кайнă, часах акă Мускава та илеççĕ вĕсем! Марш киле!

Васька-Вор чышкипе юнаса илчĕ. Сенькăна амăшĕ вĕсене хирĕç нимĕн те каламарĕç, килелле кĕчĕç.

— Хăçан хăтăлăпăр-ши ку шуйттансенчен!— хурлăхлăн сывласа илчĕ амăшĕ.

— Часах ĕнтĕ, часах...—каллех хавхалантарчĕ ăна Сенька.—Нумай юлмарĕ кĕтмелли...

Вĕсем тĕрлĕ курăксенчен пĕçернĕ тăварсăр симĕс шÿрпе сыпкаларĕç те, çывăрма выртрĕç. Тĕлĕкре Сенька питĕ телейлĕ пулчĕ: ĕнтĕ яла Хĕрлĕ Çар çитсе кĕнĕ пек, пĕтĕм халăх савăнать, совет салтакĕсем ял çыннисенчен нимĕçсем вăхăтĕнче епле тÿскелесе пурăнни çинчен ыйтаççĕ, Сенькăна тутлă çемçе çăкăрпа хăналаççĕ... Сенька çиет, çиет, анчах ниепле те тăранаймасть. Лешсем ăна çаплах:

— Çи, çи, пирĕн нумай халь, пурне те çитет,— теççĕ...

...Ир енне вăл снарядсем çывăхрах çурăлнине илтнипе вăранса кайрĕ. Пăхать—амăшĕ çук. Часрах урама сиксе тухрĕ. Хĕвел халь çеç хĕрелсе хăпарма тытăннă мĕн-ха, курăк çинче çăра сутă сывлăм выртнă—кашни пусмассеренех йĕр пулса юлать.

— Анне!—кăшкăрчĕ Сенька.

— Мĕн? Кунта эпĕ!—урамри нÿхрепрен сас пачĕ амăшĕ.

— Мĕн тăван эс унта?

— Апăр-тапăрсене пухса нÿхрепе антаратăпçке,—пушар пулсан ахалех çунса каяççĕ...

— Э-э, тупнă ĕç!—мăн çын пекех аллипе сулчĕ Сенька.—Пуç сывă пултăр!

Снаряд ял вĕçĕнче, Вазуза хĕрринче ÿксе çурăлчĕ. Тепри пулсан, çак самантра часрах пытанса лармалли вырăн шырамалла, анчах Сенькăн чĕри нихçанхинчен те хаваслăрах тапма пуçларĕ те—

вăл снарядсем ӳкнĕ еннелле чупрĕ. Унăн халь ял патнелле çывхарма пултаракан совет салтакĕсене курас килчĕ. Паллах ĕнтĕ, çурăлакан снарядсем—совет снарячĕсем пулнă, вĕсем хыççăн хамăрăн боецсем килме тивĕç. Часрах курасчĕ вĕсене, часрах кĕтсе илесчĕ!

Вăл каллех ĕнер тавралăха сăнаса тăнă вырăна чупса çитрĕ. Улăхра никам та курăнмарĕ, анчах та унта та кунта мăкăрăлса тăракан нимĕçсен дзочĕсем таврашĕнче снарядсем ӳке-ӳке çурăлни аванах курăнчĕ. Акă, вĕсенчен пĕрине снаряд тĕп-тĕрĕсех пырса тиврĕ те, вăл сывлăшалла сирпĕнчĕ. Самантранах тепри арканса кайрĕ.

— Çав кирлĕ! Çавă чух!—тесе савăнса тăчĕ Сенька.

Сасартăк, вăл Вазузăн леш енчи çыранне пăхрĕ те, унта нимĕç салтакĕсем упалене-упалене темскер ĕçленине курчĕ. Сахалтан та пĕр 20—25 салтак пулĕ. Хăвăрт кăна ăшăх шăтăк алтаççĕ те—унта темле япала илсе хураççĕ, кайран çиелтен çĕрпе витеççĕ. Питĕ васкаса ĕçлеççĕ хăйсем. Чугун çул енчен снаряд шăхăрса килни илтĕнсен, çĕр çумне лăпчăнса выртаççĕ, унтан каллех чакаланма тытăнаççĕ.

— Мĕн мурĕ тăваççĕ кусем капла?—ăнланаймасăр тăчĕ Сенька.

Вăл çул тăрăх çырманалла икĕ лаша кӳлнĕ нимĕçсен лавĕ аннине асăрхарĕ. Лавĕ çине туллиех çатма пек çаврака симĕс коробкăсем тиенĕ.

— Аха-а! А-вă мĕн!..—тавçăрса илчĕ те Сенька, пуçне кăчăртаттарса хыçса илчĕ.—Минăсем лартаççĕ, шуйттан фрицĕсем! Хĕрлĕ Çара минăсем лартнипе чарасшăн, сволочьсем!..

Мина мĕн иккенне Сенька пит лайăх пĕлнĕ... Шутсăр сиенлĕ япала вăл! Çиелтен пăхма ахаль лаптак коробка кăна хăй, анчах ун ăшне сиктерсе

яракан япаласем туллиех тултарнă. Çĕре кăшт кăна алтса, ăна курăнми туса хураççĕ те, ун çине кам та пулин пырса кĕрсен вара—чĕррĕн юлаймасть. Çынсене çеç мар, танксене те çĕмĕрсе сывлăшалла сирпĕнтерет вăл. Хĕрлĕ Çар кунталла çывхарнă май, нимĕçсем халь Сенькăсен ялĕ патнелле пымалли çулсем çине те, шыв хĕррине те минăсем лартнă.

— Қапла мĕн пулса тухать-ха?—хыпăнма пуçларĕ Сенька.—Пирĕннисем килеççĕ те—ял патне çитиччен пурте минăсем çине тăрăнса вилсе пĕтеççĕ вĕт!..

Темиçе самант хушши вăл ним тума аптăраса тăчĕ, унăн чĕри, пăлханса кайнипе, хытăран хытă тапма пуçларĕ.

— Пире çăлма килекенсене вĕлереççĕ вĕт ку шуйттан япалисемпе!

Вазуза леш енче снарядсем тата çăрарах ӳкме пуçларĕç. Мина лартакан нимĕçсем, кĕпер урлă каçнă лав патне чупса пырса, хайхи симĕс коробкăсене тата хытăрах васкаса çĕклеме тытăнчĕç. Пĕрисем çĕклесе каяççĕ, теприсем çĕре чава-чава хураççĕ. Акă ĕнтĕ, минăсене кĕпер патне лартма тытăнчĕç,—кашни утăмрах лартаççĕ. Леш енче лартса тултарсан, ку енче лартма пикенчĕç. Пĕр вунпилĕк-çирĕм минут хушшинче лав çинче пĕр мина та юлмарĕ. Унтан вара салтаксем пурте тăвалла чупса хăпарчĕç те, çуртсем хушшинелле кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç.

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас?!—çаплах татăклă шут тăваймасăр хыпăнса тăчĕ Сенька.— Çула пĕтĕмпех картларĕç, кунтан халь пĕр боец та иртеймест...

Вăл çапла шухăшларĕ кăна—Вазуза леш енчи сăрт хысакĕ енчен вунă-вуникĕ танк—паллах, совет танкĕсем!—шуса тухрĕç. Вĕсем, пĕр харăсах

секундлӑха чарӑнса тӑрса, тупписенчен Сенькӑсен ялӗ ҫинелле печӗҫ, снарядсем Сенькӑн пуҫӗ ҫийӗпех ӳлесе иртсе кайрӗҫ, унтан малалла ыткӑнчӗҫ. Вӗсем кӗмсӗртетни таҫта ҫитиех илтӗнчӗ.

Сенькӑн сывлӑшӗ тухми пула пуҫларӗ.

Танксем ҫывхарса килнӗ май, Сенька вӗсем ҫинче темӗн чухлӗ красноармеецсем ларнине асӑрхарӗ. Вӗсем ӗнтӗ Сенькӑна, унӑн амӑшне, вӗсен ялӗнчи пур совет ҫыннисене те нимӗҫ тискерӗсен пусмӑрӗнчен хӑтарма, вилӗмрен ҫӑлма кӗрлеттерсе пынӑ, анчах самай ял патне ҫитсен—вӗсен ҫулӗ татӑлма пултарнӑ.

— Пӗтеҫҫӗ вӗт... Пурте пӗтеҫҫӗ!..—пӑшӑлтатса илчӗ Сенька.

Текех шухӑшласа тӑма юраман. Халь кашни самант хаклӑ пулнӑ: часах танксем те, вӗсем ҫинчи десант та минӑсем ҫине пырса кӗресси курӑнсах тӑнӑ.

— Пӗлтерес! Хуть те тем пулсан та—ҫитсе пӗлтерес вӗсене!—терӗ те вара Сенька, сӑртран чупса анса, йывӑҫ тӗммисем, мӑй таран ӳснӗ курӑксем хушшипе, шыв хӗррипе аналла вӑркӑнса пычӗ,—унӑн шурӑ вӑрӑм ҫӳҫӗ ҫеҫ вӗлкӗшрӗ.

— Ишсе каҫатӑп та, ав ҫав пӗчӗк варпа чупатӑп. Унта мина пулма кирлӗ мар...—шут турӗ вӑл.

Унӑн аллисене, питне-куҫне вӗлтӗрен пӗҫертрӗ, ҫара урисене пӗлтӗрхи курӑксем тирчӗҫ, анчах ӑна халь ним те чарса тӑма пултараймарӗ.

— Часрах ҫитесчӗ кӑна, часрах пӗлтересчӗ... Минӑсем ҫине пырса кӗме парас марччӗ!

Питӗ хытӑ чупса, шӑпах шоссе кӗперӗпе ҫуллахи кӗпер хушшине ҫитсен, Сенька пӗр йывӑҫ тӗмми хыҫӗнчен сиксе тухрӗ те, сасартӑк курӑк ӑшӗнче пӗшкӗнсе ларнӑ ҫын ҫурӑмне курах кайрӗ. Ку ытла та кӗтмен ҫӗртен пулнипе—тӑпах чарӑнса тӑчӗ вӑл. Ҫав вӑхӑтрах унӑн сылтӑм алли

хăй кĕсйинчи пистолетне çавăрса тытрĕ... Тепĕр самантĕнче çав пĕшкĕнсе ларнă çын пуçне çавăрчĕ те, вăштах сиксе тăчĕ. Ку çын—Васька-Вор, хайхи полицейски, каçхине Сенькăпа амăшне урамран хăвалаканни пулнă-мĕн...

Урнă кашкăр пекех пăхрĕ вăл Сенька çине.

— Эс... эс мĕн шыраса çӳретĕн кунта, йытă çури?—терĕ те вăл сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса, Сенька патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ.

— Эс мĕн шыратăн, эп те çавнах шыратăп,—терĕ Сенька, пистолетне тата хытăрах пăчăртаса.

— Хĕрлисене кĕтетĕн, коммунист чĕппи! Ак эп сана!..—Васька-Вор сылтăм аллипе часрах револьвер каубурне вĕçертме пикенчĕ, анчах та вăл револьверне туртса кăлариччен Сенька ăна шăпах кăкринчен тĕллесе икĕ хутчен персе ячĕ. Васька-Вор «ы-ых!» теме çеç ĕлкĕрчĕ, унтан çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ...

Сенька текех пĕр самант та тытăнса тăмарĕ. Қалама та çук хытă пăлханса кайнăскер, вăл шыва сикрĕ те, тепĕр еннелле ишме тытăнчĕ. Хăмăшсем ăшĕнчен тухса Вазуза варрине çитсен, кая юлнă çыран енчен автомат сасси илтĕнсе кайрĕ...

— Чăк-чăк! Чăк-чăк!—шыва пырса тирĕнчĕç пульăсем.

— Мана пересçĕ! Хăшĕ те пулин курнă ĕнтĕ... Е эп пенине илтсе чупса тухнă-и...—хăвăрт кăна шухăшласа илчĕ Сенька.—Улталас пулать кусене...

Хăйне çине-çинех персе тивертесрен, Сенька чееленме шут тытрĕ. Чипер ишсе пыраканскерех, вăл шыв тĕпнелле чăмса анса карĕ те, малтанхи вырăнтан чылай анатра пуçне кăларчĕ. Анчах çӳлтен перекенни ăна каллех шыраса тупрĕ пулас—пульăсем каллех чаклатрĕç шыв çине.

— Тытасшăн, анчах... Анчах тытаймастăн!..

Сенька каллех чămрĕ те, пĕтме пуçланă мĕнпур вăйне пухса—леш енчи хăмăшсем патне çитиех чăмса пычĕ. Кунта ĕнтĕ ăна никам та курма пултарайман. Çыран патне шăмпăртатса çитсен, чĕри сиксе тухас пек тапнипе, пĕр вăй та юлманнипе, унăн сывлăш çавăрмаллăх месерле тăсăлса выртмалла пулчĕ. Анчах ик минут та иртмерĕ пулĕ, вăл каллех сиксе тăчĕ те, паçăрах сăнаса хунă пĕчĕк лупашка тăрăх улăха тухса, çывхарсах килекен танксем еннелле кăшкăра-кăшкăра чупрĕ:

— Чарăнăр!.. Э-эй, ан кайăр, тăхтă-ăр!..

Танксем унран чылай аякра пулнă-ха, анчах ăна асăрхарĕç,—çӳлте ларса пыракан салтаксем йĕри-тавра хытă сăнаса пынă пулас. Малти танкĕ тăпах чарăнса тăчĕ. Сенька ун патне çитесси пĕр çĕр аллă метр юлсан, танк çинчен темиçе салтак сиксе анса ăна хирĕç чупрĕç.

— Мĕн пулнă? Ăçта чупатăн?—тесе ыйтрĕ Сенька патне пуринчен малтан ыткăнса çитнĕ çӳллĕ сержант.

— Сирĕн пата... Сире пĕлтерме,—аран сывласа илчĕ Сенька.—Минăсем нумай лартрĕç, пĕтетĕр...

— Хăш тĕлте?

— Çул çинче, кĕпер патĕнче, шыв хĕрринче...

— Атя-ха эппин пирĕн командир патне!

Çӳллĕ сержант тата унпа пĕрле чупса пынă ытти боецсем те ура çинче аран тăракан Сенькăна хулĕсем айĕнчен тытса танксем патне илсе кайрĕç. Сержант çавăнтах танк çинчен сиксе аннă майора пĕлтерчĕ:

— Çак ача калană тăрăх, нимĕçсем кунта мина нумай лартнă, иртме çук! Ăçта лартнине тĕплĕрех ыйтса пĕлес пулать...

Майор васкасах Сенька умне пырса тăчĕ:

— Минăлана вырăнсене кăтартса пама пултаратăн-и?

— Пултаратăп,—терĕ Сенька,—эп пĕтĕмпех курса тăтăм... Çавăнпа чупса килтĕм, пĕлтерес терĕм.

— Тавтапуç, ывăлăм!—ăна ыталаса чăмăртарĕ майор.—Эсĕ куна чăн-чăн патриот пек турă! Тем пама хатĕр эп сана куншăн!

— Мана ним те кирлĕ мар,—пуçне пăркаларĕ Сенька,—эсир хăвăр килни маншăн нимрен те хаклă...

...Сенька кăтартса панипе красноармеец-сапёрсем виççĕр мина ытла чавса кăларчĕç. Ик сехетрен яла пырса кĕмелли çул пĕтĕмпех тасалса çитрĕ, анчах боецсем хăйсен мина шыраса тупмалли хатĕрĕсемпе халь çеç тасатнă вырăнсене тата тепĕр хут тĕрĕслеме тытăнчĕç.

— Ăнсăртран пĕри юлнă пулсан та, сиен тума пултарать!

Çав хушăра Сенька хайхи Васька-Вор çинчен аса илчĕ. Питĕ пĕлес килчĕ халь унăн: вилмеллипех вилнĕ-ши вăл бандит, е аманнă кăна-ши? Лекесси—лекнех ĕнтĕ, ахальрен ӳкес çук вăл...

— Атя-ха çавăнта, пĕр çĕре кайса килер йăпăрт, — терĕ вăл боецсене ертсе пыракан сержанта.—Пĕр интерес пулма пултарать...

— Мĕнле интерес?

— Пĕр çын... Çук, çын мар, полицейски пулма кирлĕ...

— Ăçтан пĕлетĕн?

— Хам персе ӳкернĕ япалана епле пĕлместĕп вара?

— Епле персе ӳкертĕн, хăçан?

Сенька ăна кĕскен кăна паçăр ĕç мĕнле пулса иртни çинчен каласа кăтартрĕ. Çамрăк ачан пат-

тăрлăхĕнчен тĕлĕнсех кайнă сержант вара хапăл тусах пычĕ унпа пĕрле.

Васька-Вор малтан мĕнле ӳкнĕ — çаплипех выртать иккен. Урăх хускалайман та вăл, пуля ăна питĕ тĕрĕс пырса тивнĕ курăнать. Сержант унăн револьверне илсе чикрĕ, кĕсйисене ухтарса пăхрĕ те, юлашкинчен хăй çине лач! сурчĕ.

— Ирсĕр! Çав кăна кирлĕ ун пеккисене!

Унтан вăл сасартăк курăк ăшĕнче тăрăхларах сарă ещĕк выртнине асăрхарĕ.

— Чим-ха, ку мĕскер? — тесе кукленчĕ вăл ун патне. — Ара, ку взрывчатка вĕт, сиктерсе яракан япала! Тем тесен те, вăл çав кĕпере сиктерсе ишĕлтересшĕн пулнă, урăх ним те мар. Ах, прохвост!

Сенька та ун шухăшĕпе килĕшрĕ. Шоссе çинчи кĕперсĕр пуçне, ку таврара сиктерсе ямалли нимĕн те пулман.

...Танксем, кĕпер урлă чип-чиперех каçса, яла хăпарчĕç. Нимĕçсем унччен тухса тарнă пулнă та, ял çыннисем танкистсене хирĕç çав тери савăнăçлăн чупса тухрĕç. Асаплă пурнăçпа пурăнса ырханланса çитнĕ çынсен куçĕсем хаваслăн çуталчĕç, вĕсем хăйсене ирĕке кăларакансене тем пекех тав туса, ытала-ытала чуптурĕç. Хăй тĕллĕнех митинг пуçланса кайрĕ.

Паçăр Сенькăран минăсем çинчен ыйтса пĕлнĕ майор, халăх хăйсене çакăн пек ăшшăн йышăннăшăн тав туса, хĕрӳллĕ сăмах пуçларĕ. Вăл хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар хăватлă наступлени туса пыни çинчен, тăван çĕршыв часах тăшманран тасалса çитесси çинчен, унтан пурин те Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пымалли çинчен каларĕ.

— Ку тĕлĕшрен, сирĕн ял ачи Сеня Горохов пеккисенчен пример илес пулать,—терĕ майор.— Сеня Гороховăн пиччĕшĕ те питĕ паттăр воин,

нимӗҫсене ҫав тери ӑнӑҫлӑн пӗтерсе пынӑшӑн икӗ орден илчӗ ӗнтӗ, ӑна эпир питӗ лайӑх пӗлетпӗр, вӑл пирӗн чаҫрех, анчах Сеня та пиччӗшӗнчен юлмасть иккен...

Халӑх шӑп пулчӗ. Хӗрлӗ Ҫар офицерӗ хӑйсен ялӗнчи ҫынсем ҫинчен каласма тытӑнни халӑха тӗлӗнтерсех ячӗ, ҫавӑнпа та майор сӑмахӗсене сывлама чарӑннӑ пекех шӑп тӑрса итлерӗҫ.

— Паян ҫав ҫамрӑк патриот Сеня Горохов хӑй пурнӑҫне шеллемесӗр, пире наступление хӑвӑртлатма пулӑшрӗ... Хӑйне пӑшалпа персе тӑни ҫине пӑхмасӑрах, шыв урлӑ ишсе каҫса пирӗн пата чупса ҫитрӗ, нимӗҫсем минӑланӑ вырӑнсем ҫинчен пӗлтерчӗ. Ӑна пула, эпир ним сиен те курмарӑмӑр. Ҫав вӑхӑтрах тата Сеня Горохов сирӗнтен мӑшкӑлласа пурӑннӑ Васька-Вора персе пӑрахса, мӑн ҫул кӗперне ишӗлтересрен хӑтарнӑ. Ҫак паттӑр ӗҫсене шута илсе, командовани ячӗпе сирӗн Сеньӑна эпӗ «За боевые заслуги» медальпе наградӑлатӑп...

Такамӑн вӑйлӑ аллисем Сенькӑна ҫӗклесе, танк ҫине хӑпартса тӑратрӗҫ, майор ун кӑкри ҫине ҫап-ҫутӑ медаль ҫакса ячӗ.

Пӗтӗм халӑх хавасланса алӑ ҫупрӗ. Сенька, кӑштах вӑтаннӑ пек пулса, танк ҫинче кулкаласа тӑчӗ, хӑй ҫав вӑхӑтрах куҫӗсемпе амӑшне шырарӗ.

— Курать-ши вӑл мана?

Анчах амӑшӗ ӑна вӑл танк ҫине хӑпарсанах курнӑ, ывӑлӗ ҫине пӑхнӑ май, унӑн куҫӗсенчен савӑнӑҫ куҫҫулӗ юхнӑ, ватӑ чӗри ҫӗнӗ вӑйпа тулса тапма тытӑннӑ.

*Курск облӑҫӗ.*
*1943 ҫ.*



## ТУССЕМ КАЛЛЕХ ТĔЛ ПУЛАÇÇĔ

Иртнĕ çулла, август уйăхĕнчи пĕр вырсарникун, лăпкă, хĕвеллĕ ирхине эпĕ Шупашкарăн Хĕрлĕ площадьне тухрăм та, хаçат сутакан киоск умĕнче хамăн фронтри тусăма, Ылттăн Çăлтăрлă летчик-капитана тĕл пултăм. Эпир пĕр-пĕрине юлашки хут курнăранпа пĕр виçĕ çул иртнĕччĕ те, халĕ, çакăн пек ăнсăртран тĕл пулнăшăн, иксĕмĕр те çав тери савăнса кайрăмăр...

— Салам, Семен Ильич! Хăçан килсе тухрăн пирĕн çĕр çине? Еплерех пурăнатпăр? Мĕншĕн тӳрех ман патăма пымарăн вара?—Геройăн аллине хыттăн чăмăртаса, ыйту çине ыйту пама тытăнтăм эпĕ.

— Салам, салам, тусăм! Пурнăçĕ лайăх-ха, пĕр эрнелĕх отпуска килтĕм, аннене кайса курас-

шăн,—терĕ вăл.

— Питĕ аван ку, ватăсене хисеплес пулать... паянах каятăн-и вара? Тен, пĕр-ик кун пурăнатăн пирĕн патра?

— Халех каясшăнччĕ те-ха, тытса чарчĕç...

— Камсем?

— Ачасем.

— Мĕнле ачасем?—тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Пионерсем, — терĕ капитан.—Эпĕ килни çинчен таçтан пĕлнĕ те, ирхине сакăр сехетрех кĕпĕрленсе пычĕç гостиницăна—пĕр вунпиллĕкĕн пур. Паян пирĕн авиамоделистсен ăмăртăвĕ пулать, сире курма пыма чĕнетпĕр, аслă судья пулма ыйтатпăр, пымасан—кӳренетпĕр, теççĕ. Нимĕн тума та çук—килĕшмелле пулчĕ, пыратăп, тесе сăмах патăм...

Вăл аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ.

— Каймалла ĕнтĕ, тăхăр сехет... Вĕсен ăмăртăвĕ вуннăра пуçланмалла, терĕç.

— Манăн хамăн та пырас мар-и санпа?—терĕм эпĕ.—Паян канмалли кун, ĕçе каяс çук...

— Питĕ аван! Унтан таврăннă май сан патна кĕрсе тухма та пултаратпăр, — терĕ Семен Ильич.—Кайса курар—мĕнле смена ӳсет пирĕн... Вĕсем пурте лётчик пулма ĕмĕтленеççĕ вĕт-ха.

— Тĕрĕс.

— Кайрăмăр!

Эпир Карл Маркс урамнелле пăрăнса гостиница еннелле утрăмăр. Сасартăк горн сасси илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, параппан тăкăртаттарма тытăнчĕ. Тăвалла пăхрăмăр та—хамăра хирĕç пĕр аллă-утмăл пионер тĕрлĕрен авиамодельсем çĕклесе, стройпа аннине куртăмăр.

Урамри çынсем вĕсем çине чарăна-чарăна тăрса, пăхса юлаççĕ. Эпир те тротуар хĕрринче чарăнса тăтăмăр. Пирĕнпе танлашсан (лётчик-

героя курнипе пулас ĕнтĕ) малта пыракан пионерсенчен пĕри, сенкер сăрпа сăрланă пысăк модель çĕкленĕскер, хавассăн юрласа ячĕ:

Все выше, и выше, и выше...

Çав самантрах ун çумне ыттисем те хутшăнчĕç:

Стремим мы полёт наших птиц,
И в каждом пропеллере дышит
Спокойствие наших границ...

Пĕтĕм аслă урам ачасен хаваслă сассисемпе янраса тăрать.

— Маттур ачасем...—терĕ Семен Ильич, çамрăк авиамоделистсене çемçе те кăмăллă кулăпа ăсатса.—Чун савăнать вĕсене курсан...

Тепĕр çур сехетрен эпир гостиница умне пырса тăнă йăм-хура çăмăл автомобиль ăшне кĕрсе лартăмăр та, аэродрома вĕçтертĕмĕр.

...Авиамоделистсен ăмăртуне курма хулари ачасем çеç мар, мăннисем те пайтах пынăччĕ. Вĕсем пурте ăмăрту пуçланасса кĕтсе, пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса тăратчĕç.

Шăп вунă сехетре, команда тăрăх, ăмăрту пуçланчĕ. Сывлăша пĕрин хыççăн тепри самолёт моделĕсем хăпарма пуçларĕç. Илемлĕччĕ вĕсем сывлăшра: шурă, сарă, кăвак, хĕрлĕ, сенкер...

Малтан ахаль модельсене вĕçтерчĕç, унтан вара бензинпа ĕçлекен пĕчĕк мотор лартнă модельсене яма хушакан команда илтĕнчĕ.

— Кусем интереснăрах пулма кирлĕ, — терĕ манпа юнашар тăракан Семен Ильич.—Ку ĕнтĕ—техника...

Сывлăшалла умлăн-хыçлăнах 10—12 модель вĕçсе хăпарчĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ тӳрех паçăр хула урамĕнче юрă пуçласа янă ача аллинчи сенкер моделе асăрхарăм.

— Ытла пысăк-ха ку, йывăрскер инçех вĕçеймест пулĕ...—шухăшларăм эп ун пирки.

Анчах та эпĕ йăнăшнă иккен. Сенкер модель çӳлелле хăпарнăçемĕн хăпарса пычĕ, хăвăртран хăвăрт кайма пуçларĕ. Темиçе минутран вăл ытти модельсене хыçала пăрахса хăварчĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çĕре ана-ана ларчĕç, анчах сенкер модель çаплах-ха малалла вĕçрĕ...

— Пăх-ха, епле кайрĕ вăл!—терĕм эпĕ Семен Ильича. — Чăн-чăн самолёт пек ярăнтарса пырать, э?

— Пит аван! — терĕ вăл, çаплах çӳлелле пăхса.

Эпир çеç мар, аэродромри пур çынсем те халь çав сенкер модель çине çеç пăхрĕç. Ытти модельсем ĕнтĕ пурте çĕре ларса пĕтрĕç, анчах ку—малтан мала, инçетрен инçете, Атăл еннелле ярăнса пычĕ. Курса тăракансем—пуринчен ытла ачасем — куç умĕнчех пĕчĕкленсе пыракан модель çине кăтартса аллисемпе сулкалама, савăнăçлăн кăшкăрма тытăнчĕç.

— Ка-айрĕ ку!..

— Атăл урлах вĕçтерчĕ!

Çав хушăрах вĕсенчен нумайăшĕ модель хыççăн чупрĕç. Анчах тахăшĕ вĕсене çавăнтах:

— Ан чупăр пустуй, пурĕпĕр çитейместĕр! — тесе кăшкăрчĕ.

Эпĕ Семен Ильич çине пăхса илтĕм. Вăл куçран çухалма пуçланă моделе пĕчĕк бинокль витĕр сăнаса тăрать иккен.

— Интереснă, кам моделĕ-ши ку?—терĕ вăл, тепрер çур минут пек пăхса тăрсан. — Çав тери лайăх каять...

— Пирĕн ача тунă ăна, — терĕ пирĕн хыçра тăракансенчен пĕри.

Семен Ильичпа иксĕмĕр те пĕр харăсах каял-

ла çавăнса пăхрăмăр та, куçлăх тăхăннă, кукша пуçлă, ватăрах лутра çынна куртăмăр.

— Мĕнле сирĕн ачăр?—ыйтрĕ Семен Ильич.— Ывăлăр-и?

— Çук, ман ывăл мар, пирĕн детдом ачи, Миша Чоботов. Ашшĕ-амăшĕ çук унăн. Хĕрĕх виççĕмĕш çулта вăл пирĕн пата Белоруссирен килчĕ. Ачи вăл пайтах хура-шур курнăскер. Партизансем хăтарнă ăна вилĕмрен. Пысăк Çĕр çине самолётпа ăсатса ячĕç, тет. Çавăнпа авиацишĕн çунать, лётчиксене никамран мала хурать...

Семен Ильич çак куçлăхлă çын çине чăр-р... пăхрĕ. Темшĕн, унăн сăнĕ тăруках улшăннă пек туйăнчĕ мана. Вăл пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан сасартăк:

— Белоруссирен килнĕ, тетĕр-и?—тесе ыйтрĕ.

— Çавăнтан. Бобруйск патĕнчен, тет.

— Ăна хамăр енне самолётпа ăсатнă, тет-и?

— Самолётпа, тет. Фронт урлă каçнă чух лётчикне амантнă, анчах та вăл пит паттăрскер пулнă, тет те, кусене хамăрăннисем патне пурĕпĕрех илсе çитернĕ, тет...

— Интереснă ку...—терĕ манăн тус, сăмахне тăсса.

Унтан шухăша кайнă пек пулса тăчĕ те, кукша пуçлă çынран:

— Эсир хăвăр кам пулатăр?—тесе ыйтрĕ.

— Детдом директорĕ, — терĕ лешĕ.

— Вăл ачи хăй кунта-и?

— Кунта. Модельне вăл хăй тапратса ячĕ...

— Кайран эсир мана унпа паллаштарăр-ха.

— Тархасшăн! Кăмăлăр пулсан, халех чĕнсе килме пултаратăп...

Лётчик-офицер, Совет Союзĕн Геройĕ çамрăк авиамоделиста курасшăн пулни директора калама çук хумхатса ячĕ пулас. Вăл куçĕсене час-час

мăчлаттарса, кукша пуçне сăтăркаласа илчĕ те, васкавлăн, сăмах вĕçĕсене çăта-çăта калама тытăнчĕ.

— Тĕлĕнмелле ача вăл. Тĕлĕкре те самолёт çеç курать пулмалла. Лётчиксене юратса каçсах каять. Койки тĕлĕнче унăн, стена çумĕнче, пур паллă лётчиксен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ: Чкалов, Громов, Коккинаки, Талалихин, Гастелло... Хамăрăн Федот Орловăн сăнне те хаçатран касса кăларса çыпăçтарнă. Йăнăшмастăп пулсан...—Детдом директорĕ Семен Ильич çине куçлăхĕ витĕр тинкеререх пăхса илчĕ. — Сирĕн сăнăр та пурччĕ пулас-ха унта. Эсир Совет Союзĕн Геройĕ Ильин юлташ пулатăр вĕт-ха?

— Çавă.

— Во, во... Эпĕ хам сире куç-кĕрегĕн нихçан та курман, анчах фотографисем тăрăх палласа илтĕм. Сирĕн сăнăр та пур пирĕн Мишăн...

Çак вăхăтра, ăмăрту пĕтнине пĕлтерсе, горнист отбой парса кăшкăртса илчĕ. Унта та кунта командăсем, пионерсене пĕр çĕре пухăнма хушнисем илтĕнчĕç. Пирĕн пата пĕр тулли питлĕ комсомолка-вожатăй пулас—чупса пырса тăчĕ. Аллине вăл хĕрлĕ флажок тытнăччĕ.

— Семен Ильич,—терĕ вăл героя, — ăмăрту результачĕсене хулара Пионерсен çуртĕнче пĕлтеретпĕр, призсене те унтах паратпăр. Эсир пыратăр пуль вĕт? Призсене эпир сире партарасшăн, тата ачасемпе хăйсемпе кăштах калаçтарасшăн...

— Юрать, пыратăп, — яштах тӳрленсе тăрса честь пачĕ Семен Ильич. Унтан çавăнтах детдом директорĕ еннелле çаврăнчĕ те:

— Ну, ăçта вăл сирĕн Миша?—терĕ.

— Çавăнта пулма кирлĕ, — пирĕнтен пĕр икçĕр-виççĕр метрта пухăнса тăнă пионерсен ушкăнĕ еннелле кăтартрĕ директор. — Каяр-и?

— Атьăр.

Эпир васкасах пионерсем патнелле утрăмăр. Директор каллех Миша çинчен калама тытăнчĕ.

— Пĕтĕм авиаци историне пĕлет вăл. Тинĕс офицерĕ Можайский мĕнле çын пулнă? — тесен, тӳрех каласа парать: тĕнчери чи малтанхи аэроплана тăваканни, вырăс çынни, тет. Авиаци историнче чăн малтан нумай моторлă самолёт тăваканни кам? — тесен: вырăс конструкторĕ Сикорский, тет. Чăн малтан сывлăшра «мертвая петля» тăвакан лётчике, Нестеров капитана та аван пĕлет. Аслă ача... Ĕненмелле те мар.

— Ĕненетпĕр, ма ĕненес мар? — терĕм эпĕ, директор кăмăлне çырлахтарас шухăшпа.

Семен Ильич нимĕн те чĕнмерĕ, вăл тем çинчен çав тери тарăн шухăша кайса пынă пек туйăнчĕ.

Темиçе минутран эпир строя тăнă пионерсем патне çитсе чарăнтăмăр. Детдом директорĕ тӳрех унăн-кунăн пăхкалама тытăнчĕ.

— Миша! Чоботов!— тесе кăшкăрчĕ вăл.

— Эпĕ! — илтĕнчĕ ăна хирĕç янравлă сасă.

— Кил-ха кунта!

— Вожатăй ирĕк памасăр стройран тухма пултараймастăп,—ответ пачĕ ача.

— Сан патна çынсем килчĕç,—терĕ директор.

— Пурпĕрех тухма пултараймастăп...

Çав самантрах колоннăн тепĕр енчен пур ачасем пекех мăйне хĕрлĕ галстук çыхнă сар çӳçлĕ хĕр çаврăнса тухрĕ.

— Миша Чоботов кирлĕ-и сире? Халех, директор юлташ,—терĕ те вăл, çавăнтах:—Чоботов, стройран тух!—тесе кăшкăрчĕ.

Пирĕн умма шурăрах çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлă, шĕвĕртерех сăмсаллă, çав тери кăмăла каймалла сăнлă 13—14 çулхи арçын ача тухса тăчĕ.

Эпир пурте ун ҫине пӑхнӑ пирки вӑл именчӗ пулас, пуҫне чикерех ҫӗрелле пӑхрӗ те, галстук вӗҫне пӗтӗркелеме тытӑнчӗ.

— Ан вӑтан, — терӗ ӑна директор, — санпа Совет Союзӗн Геройӗ калаҫасшӑн... паллаш...

Миша Семен Ильич ҫине пӑхса илчӗ те, пуш шех хӗрелсе кайрӗ. Паллах ӗнтӗ, хӑйӗнпе ҫакӑн пек лётчик-герой калаҫасса кӗтмен вӑл.

— Здравствуй, Миша! — ҫемҫен кулса алӑ тытрӗ ӑна Семен Ильич. — Ӑмӑртура ҫӗнтернӗ ятпа саламлас, терӗмӗр сана. Савӑнтартӑн эс паян пире!

Миша унӑн аллине хӑюсӑррӑн тытса чӑмӑртарӗ.

— Спасибо...

— Аҫта кайрӗ-ха ӗнтӗ санӑн модель? Ҫухалчӗ-и?

— Ҫухалман... Атӑл леш енне, хӑйӑр ҫине ларнӑ. Ӑна илме кайрӗҫ ӗнтӗ,—терӗ Миша.

— Пуринчен те инҫерех вӗҫрӗ эппин вӑл сан, э?

— Ҫапла пулчӗ пулмалла... — Миша каллех именсе ҫӗрелле пӑхрӗ, анчах та хӑйӗн тутисем кулса илчӗҫ.

— Маттур! Ҫавӑн пек кирлӗ...

Семен Ильич ӑна лӑпкаса илчӗ.

— Атя-ха, ав ҫав йывӑҫ айне, машинсем тӑнӑ ҫӗре кайса ларар... Калаҫӑпӑр санпа. Ак ҫак ҫын... (Семен Ильич ман еннелле кӑтартрӗ) сан ҫинчен хаҫата ҫырасшӑн пулмалла...

— Мӗн тума? — тӗлӗнчӗ Миша.

— Ытти ачасем санран пример илччӗр, сан пекех лайӑх модельсем туччӑр, ӳссе ҫитсен вара лётчиксем пулччӑр. Эсӗ ху та лётчик пуласшӑн вӗт-ха, ҫапла-и?

— Ҫапла... — терӗ Миша шӑппӑн.

Эпир аэродром хĕрринчи пĕр ватă çăка айне вырнаçса лартăмăр.

— Ну, Миша, каласа пар ĕнтĕ ху çинчен, — терĕ Семен Ильич, Мишăна хăй çумне лартса.— Ăçта çуралнă эсĕ, мĕнле пурăннă, кунта мĕнле килнĕ, мĕнле вĕренетĕн, мĕне ытларах юрататăн...

— Вĕренессе вăл отлично вĕренет-ха,—терĕ детдом директорĕ васкавлăн.

Ача тăруках чĕнмерĕ. Вăл палăрмаллах пăлханса, сăмахне пуçлаймасăр, пирĕн çине пăхмасăр, сарăхма пуçланă вăрăм курăк тăррисене таткаласа ларчĕ.

— Каласам ĕнтĕ, кĕттерме аван мар, —васкатрĕ ăна директор.—Ăçта çуралса ӳснĕ-ха эс?

— Белоруссире, Бобруйск облăçĕнче, Голубовка ялĕнче,—терĕ Миша хуллен.

— Аçу-аннӳсем камсем пулнă?

— Колхозниксем...

— Халь пур-и вĕсем?

— Çук... Вăрçă пуçлансанах атте çара кайрĕ, эпир аннепе çеç юлтăмăр. Унтан пирĕн пата нимĕçсем пырса кĕчĕç... Пире хамăр пӳртрен пахчари мунчана хăваласа кăларчĕç. Пӳртне пирĕн атте вăрçă пуçланас умĕн çеç туса пĕтернĕччĕ, питĕ лайăх, пысăкчĕ те вăл, унта нимĕçсен комендатури вырнаçрĕ. Кашни кун, кашни каç пирĕн çынсене асаплантаратчĕç унта. Кайран вара пахчана, çырма хĕррине илсе тухатчĕç те, перепере пăрахатчĕç...

— Эс ху та курнă-и ăна? — ыйтрĕ директор.

— Курнă... Пĕррехинче икĕ ачана персе пăрахрĕç.

— Мĕншĕн?

— Партизансен разведчикĕсем пулнă, терĕç.

— Камсем каларĕç?

— Ялта çавăн пек сăмах сарăлчĕ...—Çаксене

аса илме Мишăна пит те йывăр пулчĕ пулмалла, вăл ассăн сывласа илчĕ. — Икĕ çула яхăн асапланса пурăнтăмăр, — терĕ вăл малалла, — ялан выçăллă-тутăллă, ялан хăраса... Унтан сасартăк ялта тиф чирĕ пуçланса кайрĕ. Çынсем шăнасем пек вилме пуçларĕç. Пирĕн анне те, йăмăкпа шăллăм та чирлерĕç, юлашкинчен эпĕ те урараи ӳкрĕм. Пĕри те тăраймастпăр, хамăра валли шыв та ăсса кĕрейместпĕр. Юрать хуть, кӳршĕри пĕр карчăк пыра-пыра пăхкаларĕ. Мунчана хутса ăшăтатчĕ, унтан-кунтан бульба[1] тупкаласа килсе яшка пекки пĕçерсе паратчĕ...

— Çитĕ ĕнтĕ сире тек мунчара пурăнма, пӳрте куçăр, — терĕ çав карчăк пĕр каçхине пырсан. — Ялта пĕр нимĕç те çук!

— Епле çук? Ăçта кайса кĕнĕ вара вĕсем? — тĕлĕнтĕмĕр эпир.

— Тифран хăраса тухса тарнă, теççĕ...

— Тиф кăна мар, халера лектĕрччĕ вĕсене,— терĕ анне.

Хăй вăл çав тери начарланса çитнĕччĕ ĕнтĕ, аран-аран сывласа выртатчĕ. Çапах та эпир ирхине мунчаран пӳрте куçма шут турăмăр. Кӳршĕ карчăкĕ пире пулăшма пулчĕ. Анчах пулаймарĕ пирĕн куçасси...

Çĕрле анне йывăрлансах çитрĕ. Эпĕ темиçе хутчен те тăра-тăра ăна шыв ĕçтертĕм, пуç айне тӳрлетрĕм, лайăхрах витсе вырттартăм. Сасартăк, çĕр варринче, мунча чӳречинчен шалалла çутă ӳкрĕ. Тĕлĕнсе хытсах кайрăм... Мĕн ку? Мĕн çути? Вăйăм çук пулин те тула сиксе тухрăм та, хамăрăн пур çуртсене те—пӳрте, кĕлете, выльăх картине вут хыпса илнине куртăм... Темĕн пысăкăш кăвайт пек, шатăртатса, шартлатса, чашкăр-

---

[1]) Çĕрулми

са çунать. Ним тума аптраса, унăн-кунăн пăхкаласа илтĕм. Куратăп, кўршĕсен килĕсем те çавăн пекех çунаççĕ.

— Анне! Пушар, çунатпăр! — тесе, ухмаха ернĕ пек кăшкăрса чупса кĕтĕм эпĕ каялла. Анчах анне нимĕн те чĕнмерĕ...

— Илтместĕн-им, çунатпăр! — тата хытăрах кăшкăрса ятăм эпĕ.

Анне каллех чĕнмерĕ. Эпĕ ăна чавсисенчен тытса лăскарăм, сасă памарĕ. Вара эпĕ вăл вилсе кайнине ăнланса илтĕм...

Çĕрĕпе макăрса лартăм ун умĕнче. Хамăр мунчана вут хыпса илесрен те хăратăп. Ун пек пулсан, чирлĕ шăллăмпа йăмăка мĕнле хăтарас, ăçта кайса хурас?.. Анчах мунчи пирĕн пахчан тепĕр вĕçĕнчехчĕ те — çулăм унта çитеймерĕ, эпир хăтăлса юлтăмăр.

Тул çутăлсан пирĕн пата вилес пек хăраса ўкнĕ кўршĕ карчăкĕ хашкаса чупса çитрĕ. Анне вилнине курсан, вăл манран та хытăрах макăрма тытăнчĕ. Кўççулĕ витĕр хăй пĕрмай нимĕçсене ылханчĕ...

— Çĕр çăттăрччĕ вăл шуйттансене, вĕсен килĕ-сурчĕ çеç мар, пĕтĕм çĕрĕ-шывĕ çунса кĕл пултăрччĕ!—тет.

— Пушарĕ мĕнрен тухнă-ши? — тесе ыйтрăм эпĕ, вăл кăштах лăпланнă пек пулсан.

— Мĕнрен тухтăр? — терĕ вăл. — Нимĕçсем юри тивертсе янă! Çуртсене бензин сапса тивертсе çўрерĕç вĕт!..

(Кайран ун çинчен нумай калаçрĕç. Фашистсем тиф ернĕ ялсене юриех хыптарнă иккен. Пушарта тифпа чирленĕ çынсем те пайтах çунса кайнă вăл кас...)

Кăнтăрла çитеспе ял çунса пĕтрĕ. Урамсенчи, пахчасенчи шурă юр хăрăмпа хуралса ларчĕ. Ни-

мĕçсем яла çунтарма тытăннă чух унта-кунта тарса пĕтнĕ сывă çынсем кĕлпе кăмрăк айĕнчен хăйсен тăванĕсен çунса кайнă кĕлеткисене чавачава кăларчĕç...

Шăн çĕре алтма пултарайманнипе, эпир кӳршĕ карчăкĕпе иксĕмĕр аннене пахчана йăтса тухса юрпа çеç витсе хутăмăр.

— Хамăр сывă пулсан, çуркунне этемлех пытарăпăр-ха,—терĕмĕр.

Хăйĕн килĕ çунса кайнă пирки, вăл пирĕнпе пĕрле мунчара пурăнма пуçларĕ. Куншăн эпĕ чунтанах савăнтăм, мĕншĕн тесен вăл пирĕншĕн анне вырăннех пулчĕ.

Пĕр-икĕ кунтан эпĕ тепĕр хут чирлесе ӳкрĕм—пушар вăхăтĕнче ăшă мунчаран тула сиксе тухсан, унтан аннене пытарнă чух шăннă пулмалла. Ним пĕлмиех пулнă вара...

Пĕрремĕш хут куçа уçса пăхсан, эпĕ хам темле пĕрене мачча ллă тĕттĕмрех пӳртре выртнине куртăм. Нумайччен ним чĕнмесĕр шухăшласа выртрăм:

— Аçта килсе лекнĕ вара эпĕ?

Анчах та ĕçсем çакăн пек пулнă иккен. Пирĕн яла нимĕçсем çунтарса янине пĕлсен, хамăр тăрăхри партизансен отрячĕ чĕрĕ юлнисене те пулин çăлма шут тытнă. Пирĕн яла вĕсем малтан разведка янă, унтан вара лавсемпе пынă та, ялта кам пур—пурне те вăрмана, хăйсен лагерьне тиесе кайнă. Ыттисемпе пĕрле мана та, шăллăмпа йăмăка та илсе кайнă.

Пĕр виçĕ эрне пурăнтăмăр эпир партизансем патĕнче. Вĕсен хăйсен тухтăрĕ пур-мĕн, вăл пире куллен эмеллесе тăчĕ, вара эпир майĕпе сывалсах пытăмăр. Анчах тухтăрĕнчен ытларах пирĕн пирки отряд командирĕ хыпкаланатчĕ. Кунне виç-

çĕ-тăваттă пырса каятчĕ вăл эпир выртакан землянкăна.

— Сывалăр, ачасем, çирĕпленĕр, часах Пысăк Çĕр çине ăсатăп, унта аван пулĕ сире,—тетчĕ.

— Хушаматне астумастăн-и унăнне?—Мишана пӳлсе ыйтрĕ Семен Ильич.

— Астăватăп. Глебов, тетчĕç ăна. Борис Петрович.

Семен Ильич тарăнăн сывласа илчĕ те, пирус чĕртсе ячĕ.

— Ну, кайран вара?

— Кайран пире чăнах та Пысăк Çĕр çине ăсатрĕç...

— Мĕнле майпа?

— Ун çинчен пире каçхинех пĕлтерчĕç. Кĕçĕр каятăр, хатĕр пулăр, тумлансах çывăрăр, самолёт килсен тытăнса тăмалла ан пултăр, терĕç. Манăн шăллăмпа йăмăк тата ытти ачасем каç выртсанах çывăрса кайрĕç, анчах манăн ыйхă килмерĕ, эпĕ çĕрĕпех çывăраймарăм. Мĕнле кайăпăр-ши, мĕнле çиткелĕпĕр?—тесе шухăшласа выртатăп... Фронт урлă вĕçсе каçнă чух хамăр самолёта нимĕçсем тапăнасран шикленетĕп...

Çурçĕр тĕлне кĕтнĕ самолёт темшĕн ир енне тин çитрĕ. Вăл килни çинчен пĕлтерсенех пире землянкăран илсе тухрĕç те, сĕм вăрман хушшипе, аран çеç палăракан сукмак тăрăх уттарса, шăнса ларнă пысăк кӳлĕ хĕррине илсе пычĕç. Кăвак тĕтре витĕр эпĕ пăр çинче темĕн пысăкăш самолёт ларнине асăрхарăм.

— Çакă ĕнтĕ вăл...

Малтан самолёт çине çапăçусенче йывăр аманнă партизансене—пĕр çич-сакăр çынна—носилкăсем çинчен иле-иле кĕртсе вырттарчĕç, унтан вара пире, ачасене кĕртсе лартрĕç.

Ĕнтĕ, тул та çутăлса килет. Самолёт çине

ларнӑ пулсан та, лӑпланаймастӑп... «Ҫутӑ вӗт-ха, фронт урлӑ мӗнле каҫса кайӑпӑр?»—тетӗп. Йывӑр вӗт ун пек чух тӑшмана курӑнмасӑр вӗҫме...

— Чухлатпӑр пӗртак, — ҫемҫен кулса илчӗ Семен Ильич. — Ну, мӗнле вӗҫкелесе килтӗр вара?

— Эпир фронт патнелле вӗҫсе пынӑ чух тул ҫутӑлса ҫитрӗ. Кӗҫех хӗвел те курӑнчӗ. Эпӗ чӳрече ҫумнерех ларнӑччӗ те, пӑхсах пытӑм. Питӗ ҫӳлтен вӗҫетпӗр хамӑр. Унччен те пулмарӗ, йӗри-тавра темскерсем хаплатса ҫурӑлма пуҫларӗҫ. Хуп-хура, ҫӑмламас ҫӗлӗк пек чӑмӑрккасем пулаҫҫӗ. Ӑҫта ан пӑх—пур ҫӗрте те хура тӗтӗм чӑмӑрккисем. Темӗн чухлӗ! Нимӗҫсем пире асӑрхаса зениткӑсенчен пеме тытӑннӑ иккен. Ҫав тери хӑрушӑ пулса кайрӗ... Сывламасӑр, стена ҫумне лӑпчӑнса ларса пыратпӑр. Халь-халь пире тивертессӗн туйӑнать. Анчах та пирӗн самолӗт малаллах вӗҫет...

Юлашкинчен, взрывсем сайраланма пуҫларӗҫ, унтан пачах та курӑнми пулчӗҫ. Тата кӑштах вӗҫнӗ хыҫҫӑн пирӗн самолӗт аялалла анма пуҫларӗ... Эпӗ ҫӗрелле пӑхрӑм та, тип-тикӗс хирте темӗн чухлӗ самолӗт ларнине куртӑм. Эпир хамӑрӑн аэродрома ҫитнӗ иккен. Чиперех ҫитрӗмӗр, нимӗҫсем пире нимӗн те тӑваймарӗҫ!

Анчах пире кӑна чипер ҫитнӗ пек туйӑннӑ ҫав...

Самолӗт анса ларсанах, пире ҫӗре антарма тытӑнчӗҫ. Эпӗ самолӗт ӑшӗнчи ытти ҫынсем хыҫҫӑн утса, тухмалли алӑк патне ҫитсе пуҫа тулалла кӑларсанах, пирӗн самолӗт патнелле шурӑ халатлӑ санитарсем носилка йӑтса чупнине куртӑм. Ҫав вӑхӑтрах иккӗн-виҫҫӗн пирӗн лётчика хӑйӗн кабининчен ҫӗклесе кӑларчӗҫ. Вӑл чӗп-чӗр юнлӑччӗ, пичӗ-куҫӗ те палӑрмастчӗ унӑн. Нимӗҫ-

сем ăна амантнă-мĕн. Анчах та вăл, хăй аманнă пулсан та, самолёта хамăр енне илсе çитернĕ... Тĕлĕнмелле паттăр лётчик, чăн-чăн герой пулнă вăл... Нихçан та манас çук эп ăна. Вăл пире вилĕмрен хăтарчĕ. Пĕлместĕп, те пурăнать вăл халь, те çавăн чухнех вилнĕ... Анчах та манăн вăл пурăнатех, тесе шанас килет. Пурăнать пулсан, эпĕ ăна хăçан та пулин шыраса тупатăпах!

Миша калама чарăнчĕ те ассăн сывласа илчĕ.

— Çавăн пек хăюллă лётчик пулас килет манăн,—терĕ вăл кăшт тăрсан.—Детдомран тухсанах çар шкулне каятăп... Унччен авиаци çинчен кĕнекесем вулатăп, модельсем тăватăп.

— Вăл лётчике санăн халĕ те курас килет эппин?—ыйтрĕ Семен Ильич, темшĕн пăлханнипе чĕтреме тытăннă пӳрнисемпе портсигарĕнчен пирус кăларса.

— Çав тери,—терĕ Миша.

— Анчах та эс ăна мĕнле тупма шутлатăн-ха?

— Хаçатсене çыратăп, çар министрĕнчен ыйтса яратăп, шыраттаратăп... Ун пек чаплă та паттăр лётчике вĕсем пĕлмеллех...

— Ан шыраттар,—терĕ Семен Ильич.

— Мĕншĕн? Тупаймаççĕ-им? — сасартăк хыпăнса ӳкрĕ Миша.

— Вăл лётчик сан умăнта ларать...

— Аçта? — ăнланаймарĕ ача.

— Сан умăнта ларать, тетĕп. Эпĕ вăл...

Эпир пурте—Миша та, детдом директорĕ те, эпĕ те — куçсене чарса пăрахса хытнă пек пулса лартăмăр. Миша тутине çыртса лартрĕ. Нихăшĕ те пĕр сăмах та чĕнеймерĕмĕр, мĕншĕн тесен ку ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ...

— Ĕненместĕр-им? — кударах ыйтрĕ Семен Ильич. — Акă, çавăн чух аманнă паллăсем...

Вăл картусне хыврĕ те, тăнлавĕнчен кăшт

çӳлерех çутăлса тăракан çĕвĕке, унтан кителĕн сулахай çаннине хăпартса, аллинчи кивĕ суранне кăтартрĕ.

— Чăнах эсир пулнă-и?—пĕтĕм ӳпке вăйĕпе кăшкăрса ярса сиксе тăчĕ Миша. Тепĕр самантран вăл лётчике ыталаса илсе чуптума тытăнчĕ. Унăн питçăмартийĕсем тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Çав тери пысăк тав сире... Çав тери... спасибо пире çавăн чух çăлнăшăн!

— Лăплан, ачам, лăплан... — ачашшăн лăпкарĕ ăна Семен Ильич.—Малашне ĕнтĕ пĕр-пĕринпе туслă пулса пурăнăпăр, эп сана вĕренме пулăшăп, ман пекех лётчик пулăн...

Туссем çакăн пек телейлĕн тĕл пулнăшăн эпир те чунтанах савăнтăмăр.

*Шупашкар,*
*1948 ç.*





## САЛТАК ЫВĂЛЕ

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çулхи март уйăхĕнче эпĕ пĕр районта ял хуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕнче пултăм. Тĕрлĕрен çынсем пухăннăччĕ унта: колхоз председателĕсем, бригадирсем, ферма пуçлăхĕсем, МТС-ра ĕçлекенсем, трактористсем,—вĕсем хушшинче кĕрхи анис пануми пек сăнлă хĕрсем те, шур сухаллă стариксем те, нумай пулмасть фронтран аманса таврăннă вăтам çулхи арçынсем те нумайччĕ.

Канашлăван президиумĕнче, районта ĕçлекенсем, тĕрлĕрен ватăрах çынсем хушшинче эпĕ пĕр 13—14 çулхи арçын ача ларнине асăрхарăм.

— Кам-ши вара ку?—тĕлĕнтĕм эпĕ.—Пĕр-пĕр шкулăн е пионер отрячĕн представителĕ-ши?

Пулкалать-çке тепĕр чух: çавнашкал паллă канашлусене пионерсем пырса саламлаççĕ. Анчах ку... Ку президиумра ларать, сĕтел çине чавса-

ланнă та—трибуна çине тухса калакансене шăтарас пек пăхса, çав тери тимлĕн итлесе ларать.

— Çав ача кам ара вăл?—тесе ыйтрăм хампа юнашар ларакан шинеллĕ çынран.

— А вăл «Шуçăм» колхозри ача,—ответ пачĕ ку мана.

— Мĕн майпа çак канашлăва килме, çитменнине тата президиумах суйланма тивĕçлĕ пулнă-ха вăл?

— Тĕрĕссипех пĕлейместĕп. Пĕлесех килет пулсан, ав çавăнта, иккĕмĕш ретре ларакан шур сухаллă старикрен ыйтăр. Вăл—«Шуçăм» колхозăн председателĕ.

Часах кăнтăрлахи перерыв пулчĕ. Делегатсем тĕркĕлтипех столовăйне апатланма кайрĕç. Президиумри ача çинчен питех те пĕлес килсе кайнипе, эпĕ залран тухнă чухнех хайхи «Шуçăм» колхозăн председательне хулĕнчен пырса тытрăм.

— Чăрмантарнăшăн каçар, мучи, — терĕм, — сирĕн колхозран темеççĕ-и çав ачана?

— Хăшне?—тĕлĕнерех пăхрĕ ман çине мучи.

— Президиумрине...

— А-а! Эс Аркаш çинчен ыйтатăн-и?

— Ятне пĕлместĕп те...

— Аркаш вăл. Пирĕн колхозран, тĕрĕс.

— Каласа памăн-ши ун çинчен, мĕнле ача вăл сирĕн? Пит пысăк хисепе тивĕçлĕ пулнă-çке вăл. Президиума яланах чи паха çынсене суйлаççĕ...

— Куна та начар теме çук çав. Тӳрех калас пулать — питĕ маттур ача!

Эпир районти клуб çуртĕнчен тухса урампа столовăй еннелле утрăмăр. Эпĕ ыйтнине пула, мучи хăйĕн калавне пуçларĕ вара. Çынни калаçма юрататакканскер пулчĕ-мĕн. Çул çинче те, столовăйне çитсен те каласа пачĕ, пĕр чарăнмасăр каларĕ.

— Ачи çапласкер вăл... — тесе пуçларĕ старик.—Ашшĕ фронтра вилчĕ унăн, амăшĕ виçĕ пĕчĕк ачапа тăрса юлчĕ, чăн асли — ку, Аркаш, вунвиççĕре çеçчĕ ун чух. Анчах та, çамрăк пулин те, колхоз ĕçне хутшăнма пуçларĕ амăшĕпе пĕрле. Чăнах та, пĕр вăл кăна мар ĕнтĕ, шкул çулне çитнĕ нумай ачасем ĕçлеме тытăнчĕç. Хăвăрах пĕлетĕр, вăрçă çулĕсем-çке... Вăйпитти арçынсем пурте вăрçăра, ялта хĕрарăмсем те пур ватăпа вĕтĕсем çеç юлнă. Ватăлнипе ĕçлеме пăрахнă стариксем те кăмака çинчен анса ĕçе тытăнчĕç. Ак, мана хамах илес... Тăватă ывăлччĕ манăн, пĕринчен тепри тĕреклĕрех, — пĕри колхоз председателĕнче çӳретчĕ, тепри бригадирччĕ, иккĕшĕ хулара пурăнатчĕç. Мĕн тума ĕçлемелле пулнă манăн? Вăрçă пуçланнă çулах эпĕ утмăл çиччĕреччĕ те... Эп мăнуксемпе пĕрле хур-кăвакалсем пăхса кăна çӳреттĕм. Анчах, арçынсене вăрçа ăсатса пĕтерсен, пысăк шухăша кайрăм: çук, капла май килмест, шăммăм-шаккăмра вăй пур-ха пĕртак, тавай, каллех тытăнас ĕçлеме! Правленине пытăм та: парăр мана пĕр-пĕр ĕç, çак саманара килте ларма пултараймастăп, терĕм. Ну, мана бригадир туса хучĕç. Унтан çур çул те иртрĕ, те иртмерĕ çав—пирĕн председатель, вăрçăн малтанхи кунĕсенчех аманса килнĕскер, тӳрленсе çитрĕ те — каллех фронта тухса кайрĕ, вара мана ун вырăнне суйларĕç. Халăх хама çавăн пек шаннăшăн как-следоват ĕçлес, терĕм, халăх умĕнче те, государство умĕнче те намăс курас мар, терĕм...

— Анчах ку сăмах хам çинчен пулчĕ-ха. Эс мана Аркаш çинчен каласа пыма ыйтрăн... Каларăм-иç, ваттисемпе пĕрлех пирĕн ачасем те ĕçе хутшăнма тытăнчĕç. Хăшĕ лашасем патĕнче, теприсем сурăх пăхаççĕ, виççĕмĕшсем унта-кунта

лавпа кайса килеççĕ, пĕр сăмахпа каласан — кашни валлиех ĕç тупăнать пысăк хуçалăхра. Çак Аркаш та малтан лашасем таврашĕнче ĕçлесе пурăнчĕ. Ну, тĕрĕссипех калас пулать, ыттисенчен пачах расначчĕ вăл. Нихçан та бригадир ĕç хушасса кĕтсе тăмастчĕ. Коннăй двора ирхине ирех тухать те, хăех тытăнать ĕçлеме.

Пĕринче, çур енне, çак ман пата правленине пычĕ те:

— Васли мучи, ман пĕр шухăш пур, — терĕ.

— Мĕнле шухăш? — тетĕп.

— Манăн хамăн алла пĕр виçĕ лаша парăр-ха.

— Мĕн тума?

— Пăхса пурăнма.

— А эс халĕ те пăхатăн-çке вĕсене.

— Çук, эпĕ пĕр хам çеç пăхса пурăнас тетĕп вĕсене. Хăй... зоотехниксем хушнă пек... Хуть те чи имшерккисене пар.

Хăй ман çине çав тери тархасланă пек пăхать. Эпĕ килĕшрĕм вара.

— Юрĕ, — терĕм, — пăхса пурăн. Анчах лайăххисене памастăп, канма тăратнисене çеç.

— Мана вĕсем те пыраççĕ,—тет.

Эх, тытăнчĕ хăйхискер тăрăшма! Таçтан «Лашасене тĕрĕс пăхасси» ятлă кĕнеке тупнă, ăна питĕ тĕплĕн вуласа тухнă, лашасене хăш вăхăтра тата мĕн чухлĕшер апат памалли, шăвармалли, тасатмалли, уçăлтарса çӳретмелли расписани тунă та—çавна тĕп-тĕрĕс пăхăнса пыратчĕ. Тепĕр уйăхран — уйăх çурăран пирĕн начаркка лашасем çăмарта пек чăп-чăмăр пулса кайрĕç.

Эпир ытти конюхсене, лашасене кирлĕ пек пăхайманнисене, хистеме тытăнтăмăр:

— Намăс мар-и сире? Ав, Аркаш çине тăрсах тăрăшать те, мĕн туса хучĕ?

Пуçланса кайрĕ вара конюхсем хушшинче ăмăрту... Çунса кăна ĕçлекен пулчĕç!

Çав çулхине пирĕн колхозри пек лашасем районĕпе те çукчĕ. Çуракине никамран малтан пĕтертĕмĕр. Хытă мухтарĕç ун чухне пире. Районти хаçатра пĕрехмай «Шуçăм» колхоз та «Шуçăм» колхоз, тесе çыратчĕç. Ырлама сăлтавĕ те пурччĕ ĕнтĕ. Тырпула та вăхăтра, пĕр тăкаксăр пуçтарса кӳртрĕмĕр, государствăна та срокченех парса татрăмăр, кĕрхине те аван акса хăвартăмăр. Нихăш енчен те кая юлмарăмăр, темелле.

Анчах тепĕр çулхине пирĕн ĕçсем сасартăк начарланчĕç. Пурнăçра пулать вĕт вăл темле те. Темиçе лаша — чи лайăххисене — эпир Хĕрлĕ Çара парса ятăмăр. Ку нимех те мар-ха, ку вăл çĕнтерӳ валли кирлĕ, ăна памаллах, кунсăр пуçне тата эпир çара панă çав лашасемсĕр те пур ĕçсене те туса çитерме пултарнă... Пире урăххи хупларĕ. Колхозра юлнă лашасем кĕтмен çĕртен ӳке-ӳке вилчĕç пирĕн — улт-çич лаша! Темле мур пырса ерчĕ! Ну, часрах ветеринарсене чĕнтĕмĕр, акт çырчĕç вĕсем, ытти лашисене халех урăх çĕре тăратма хушрĕç. Вĕсем хушнисене эпир веçех турăмăр ĕнтĕ, çураки çывхарнă май юлашки лашасене çине тăрсах çитерме тытăнтăмăр... Çапах та, каллĕ-маллĕ шухăшласа пăхатпăр та, ĕç тухмасть пирĕн. Кун чухлĕ лашапа эпир çуракине ниепле те вăхăтра туса пĕтерме пултарас çук...

Мĕн тумалла? Пĕтĕм колхозĕпе хуйăха ӳкрĕмĕр. Ку таранччен нихçан та кая юлман, а кăçал чип-чиперех пĕтĕм район умĕнче намăс курас пулать вĕт!

Колхоз вăкăрĕсене кӳлсе çӳреме вĕрентес, терĕмĕр. Ку таранччен лашасем енчен нуша пулманччĕ те-ха пирĕн, эпир вăкăрсене вĕрентсе хăтланманччĕ. Анчах халь чăн-чăн нуша çитсе тухрĕ

те, ирĕксĕрех тытăнмалла пулчĕ. Юрать тата — пирĕн ялта Украинăран 1941 çулта килнĕ ватă тимĕрçĕ, Цыбулько хушаматлăскер, пурăнатчĕ. Вăкăрсене мĕнле кӳлмелли йĕркесене вăл аван пĕлетчĕ. Çиччас кӳлмелли хатĕрсене турăмăр, кӳлтĕмĕр, Цыбулько инструкци парать, ачасем вăкăрсене урам тăрăх каллĕ-маллĕ çӳретеççĕ. Никамран малтан, паллах, ку ĕçе те Аркаш тытăнчĕ. Ыгтисем хăрарах параççĕ, а куншăн пулсан — ним те çук. Çитменнине, Аркаш пирĕн хуçалăхшăн пуринчен те (ачасенчен ĕнтĕ) ытларах пăшăрханатчĕ-çке. Пĕтĕм чунне пама хатĕрччĕ уншăн...

Эрне хушшинче Аркашпа унăн юлташĕсем колхозăн виçĕ вăкăрне те кӳлсе çӳреме вĕрентсе çитерчĕç. Вара кăштах çăмăлраххăн сывласа ятăмăр. Вăкăр—лаша мар, çапах та ака вăхăтĕнче пысăк пулăшу пама пултарать, тетпĕр. Пирĕншĕн пулсан—плуг сĕтĕртĕр, суха тутăр!

Анчах ĕç кунпа пĕтмерĕ-ха. Чăн пысăк ĕçĕ каярахпа пулса иртрĕ. Ăна та çав Аркашах туса хучĕ...

Февраль уйăхĕнчех пирĕн яла фронтран Ванюш Ваньки тенĕскер таврăннăччĕ. Унăн сулахай алли кăкранах татăлнă. Вăрçăччен вăл МТС-ра трактористсен бригадирĕнче ĕçлетчĕ. Халĕ, алли çуккипе, килтех пурăнма килчĕ çав йĕкĕтĕн...

Пĕрре эпир правленире çураки валли лашасем çитменни çинчен калаçса лараттăмăр. Халăх чылайччĕ, ачасем те пурччĕ.

— Эх,—терĕ çавăн чух çав Ванюш Ваньки,— пĕр трактор çеç кирлĕ те çав пире, вара ним хуйхи те пулас çук та, йăпăртах сухаласа пăрахмалла та...

Унăн сăмахĕсемпе пурте килĕшрĕç, анчах çавăнтах кӳрене-кӳрене илчĕç:

— Аван пулмалла та çук-çке вăл...

— Тракторĕ пулсан та, унпа ĕçлеме пултараканни çук.

Қалаçу çакăнпа пĕтрĕ. Урăх кун çинчен никам та асăнмарĕ.

Анчах та Аркашăн чĕринех кĕрсе ларнă пулмалла çак калаçу, вăл манман ăна.

Пĕрре, апрель пуçламăшĕнче, çак ача хулана пасара кайнă. Киле таврăнсан тӳрех ман пата чупса пычĕ вăл.

— Итле-ха, Ваçли мучи, эп пĕр япала шухăшласа тупрăм,—терĕ хыпкаланса.—Эс ан кул тулькким...

— Ма кулас? Қала, ывăлăм, итлетĕп, эс ялана ăслă сăмахсем калаканччĕ,—терĕм çакна, вăл питех те хытă пăхланнине асăрхаса.

— Паян эпĕ, çула май, леспромхоз килхушшине кĕрсе тухрăм. Унта пĕр япала куртăм...

— Мĕнле япала?

— Лапкаран кăшт тăварах хăпарсан, хӳме çумĕнче, пĕр кивĕ трактор тăрать. Гусеницăллă трактор, хайхи йывăç шакмака çунтарса ĕçлекенни...

— Мĕн вара уншăн? — тесе ыйтрăм эпĕ, Аркаш! мана кун çинчен мĕн пирки каласа кăтартнине ăнланса илеймесĕр.

— Ара, пĕркунне правленире трактор илсе килсен аван пулмалла, тесе калаçса лартăр-çке.. Çураки валли... — аса илтерчĕ Аркаш.

Вăл çапла калани питех те савăнтарчĕ мана. Тытăнтăмăр иксĕмĕр сӳтсе явма.

— А вăл çĕмрĕкскер пулĕ... урамра ларать пулсан,—терĕм.

— Çук, эпĕ пĕр çынтан ыйтса пĕлтĕм те — ытлашши çĕмрĕкех мар, тет, — ответ пачĕ

Аркаш. — Ванька пичче кайса пăхсан пĕлет ĕнтĕ ăна, вăл маçтăр вĕт. Тен, юсама май пур?

— Май пулсан та, юсаканĕ кам пулĕ? Ванькăн хăрах алă кăна.

— Хамăр тимĕрçĕ Цыбулькопа Ванька пичче...

— Ĕçлекенĕ кам пулĕ тата?

— Ăна вĕренкелĕпĕр епле те пулсан. Ванька пиччех вĕрентет.

Тĕлĕнтерсех ячĕ! Пĕтĕмпех, йĕркипех шухăшласа хунă, шăхличĕ. Çав ванчăк трактора ăнсăртран курсан, вăл эпир тахçан калаçнине аса илнĕ те ĕнтĕ, çула тăршшипех çав шухăшпа утнă, епле майпа мĕн тума пуласси çинчен план туса пынă. Вăт, çамрăк ача те эсĕ ăна!

«Шуçăм» колхозăн ватă председателĕ калама чарăнчĕ те, ман çине савнăçлăн пăхса илчĕ.

«Акă епле маттур ачасем пур пирĕн колхозра!»—терĕç унăн куçĕсем çав самантра.

— Ну, вара мĕн турăр эсир? — ыйтрăм эп Васли мучирен, ку истори мĕнпе вĕçленнине пĕлесшĕн пулса. — Аркашăн сĕнӳне йышăнтăр-и, çук-и?

— Йышăнтăмăр! Чип-чиперех йышăнтăмăр! — терĕ вăл.—Аркаш каланине çав каçах правленире сӳтсе яврăмăр та, тепĕр куннех лесхоза кайрăмăр. Виççĕн кайрăмăр: эпĕ, Аркаш тата хайхи тракторист пулнă Ванюш Ваньки. Çитрĕмĕр, Ванька трактора тулаш енчен те, шал енчен те питĕ тĕплĕн пăхрĕ те—пĕр эрнере юсама пулать терĕ. Вара эпир директорĕ патне кĕтĕмĕр. Çапла та çапла, сирĕн трактора юсаса ĕçе яма шут пур пирĕн, тетпĕр.

— Эп хам та юсаттарасшăнччĕ те-ха ăна, ниепле те май килмерĕ-ха, юсама пултаракан çыннисене тупаймарăм,—терĕ директор. — Пултарагăр пулсан — юсăр... Анчах кайран, хăвăрăнне

сухаласан, пирĕн рабочисене пахчасем валли пана çĕре те сухаласа паратăр вара,—терĕ.

Çавăн пек калаçса татăлтăмăр та, киле таврăнтăмăр.

Тепĕр ирхинех пирĕн маçтăрсем — Ванькăпа Цыбулько, вĕсемпе пĕрлех Аркаш та çав трактора юсама тухса кайрĕç.

Виçĕ кунтан Аркаш каялла чупса çитрĕ.

— Трактор часах хута каять, часрах йывăç шакмаксем хатĕрлеме тытăнăр! Пĕр лавне пирĕн пата илсе пырăр...

Хăй çавăнтах каялла, лесхоза ыткăнчĕ. Трактора юсанă май вăл ăна мĕнле ĕçлеттермеллине вĕренсе пынă пулнă. Ванюш Ваньки кайран калаçа пачĕ: Аркаш тракторăн кашни пайĕ çинчен, вăл мĕн тума кирли çинчен аллăшар хут та ыйтатчĕ пулĕ, тет. Епле пулсан та вĕренесшĕн пулнă ĕнтĕ вăл...

Тата виçĕ кунтан, маçтăрсем хушнă пек, эпĕ ирех лесхоза шакмаксем тиесе ятăм. Кĕтетпĕр ĕнтĕ. Пурте, пĕтĕм колхозĕпех кĕтетпĕр. Уялла, шоссе çине тухкалатпăр. Кăнтăрла та çитсе иртрĕ, каçалла та сулăнчĕ, — пирĕн трактор çаплах çук-ха. Колхозниксем хушшинче, унта-кунта, кăмăлсăр калаçкалани илтĕнме пуçларĕ, — ĕнтĕ хăшĕсем ĕненме те пăрахрĕç.

— Э-э, çавсенчен пулать-и ара трактор илсе килесси?

— Пĕри чăлах, тепри ача, виççĕмĕшĕ хăй ĕмĕрне плугсем çеç юсаса ирттернĕскер...

Мана кун пек сăмахсем тарăхтарма пуçларĕç.

— Ан лăркăр пустуя, паян мар тăк — ыран çитеççĕ вĕсем, курăр акă! — тетĕп.

Чăнах та, çапла ларарăм кăна, инçетре мотор сасси илтĕнсе кайрĕ. Кĕрлет кăна!

— Куртăр-и, — тетĕп хай трактор килессе ĕненме пăрахнисене.—Авă вĕсем, веç килеççĕ!

Пурте униче хыçнелле чупса тухрĕç. Трактор гусеницисемпе чанкăртаттарса, шăтăк-путăксем çинче сиккелесе, трубинчен паровоз пек тĕтĕм кăларса çывхарса пычĕ ял патнелле. Пирĕн çынсен сăнĕсем, хавасланнипе, çутăлсах кайрĕç.

Акă, вăл униче хапхи патне çитрĕ. Пăхатпăр—руле пирĕн Аркаш тытнă, Ванюш Ваньки унпа юнашар ларать, Аркаша вĕрентсе пырать пулмалла... Цыбулько çӳле тăнă та, аллине сулса, кулса пырать.

Пурте алă çупса ячĕç.

— Вот, молодца! — тесе кăшкăрать тахăшĕ.

— Çитрĕр пулать?—кăшкăрсах ыйтать тепри.

— Çитрĕмĕр!—тет те Аркаш, трактора тăпах чарса тăратать.

— Ма час килмерĕр?—чупса пытăм эпĕ трактористсем патне.

— А ма чĕрĕ шакмак парса ятăр? Никак та çунмасть, тăн тухрĕ аппаланса,—ответ пачĕç мана.—Аран çитрĕмĕр!

— Пĕлмен-çке эпир мĕнле йышши кирлине...

— Малашне пĕлес пулать! — терĕ те Аркаш, ман çине пăхса кулса ячĕ. Унăн кăмăлĕ çав тери тулнăччĕ.

Хăвăрах чухламалла, ку ĕнтĕ пĕтĕм колхозшăн пысăк савăнăç пулчĕ. Халь тин эпир нимрен те хăраман. Çурахи аванах иртет пирĕн!

Чăн та, аван иртрĕ вăл. Çĕршыв типсе çитнĕ-çитменех Аркашпа Ванюш Ваньки хăйсем юсанă тракторпа хире кĕрлеттерсе тухрĕç те — мăкăрлантарчĕç кăна. Ултă кун хушшинче шăнкăртах пĕтерсе хутăмăр ака-сухана. Юнашар колхозран пулăшу пырса ыйтрĕç те, вĕсене те икĕ кун ĕçлесе пачĕç.

— Çавăн пек вăл ачан историйĕ,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн калавне «Шуçăм» колхозăн председателĕ Ваçли мучи.

— Питĕ аван, — терĕм эпĕ. — Чăн чăн патриот сирĕн Аркаш!

— Тивĕçлĕ-и вăл çак канашлу президиумĕнче ларма?

— Пит те тивĕçлĕ!

...Қаçхи ларура Аркаш хăй сăмах тухса каларе. Пĕтĕм зал ăна, çĕр ĕçĕн çамрăк ăстине, калама çук кăмăлласа итлесе ларчĕ. Аркаш пăлханчĕ, хăш чух тытăнкаласа тăчĕ, анчах унăн сăмахĕ вĕри те ĕнентерӳллĕ, кăмăла çĕклентерекен сăмах пулчĕ.

Залри çынсем пурте нумайччен алă çупрĕç...

*Етĕрне,*
*1945 ç.*



40 коп.

Цена 4 р.

ЛЕОНИД АГАКОВ

# МОИ МАЛЕНЬКИЕ ДРУЗЬЯ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ — 1949